М. Н. Данилăв-Чалдун

И797 Д-18

# Çулăм витĕр



1959

Я памятн
К не

11797

Н16

ЧĂВАШГОС-
ИЗДАТ
1938

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# СКВОЗЬ ПЛАМЯ

РАССКАЗЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1938

ЧИТАЛЬНЯ

М. Н. ДАНИЛĂВ-ЧАЛДУН

Д-18

# ÇУЛĂМ ВИТĔР

ПРОВЕРЕНО
2097

КАЛАВСЕМ

9/к

АСĂРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ

| Стр. | Йĕрке | Пичетленнĕ | Вуламала |
|---|---|---|---|
| 100 | 19 çӳлтен | паризансем | партизансем |
| 104 | 1 „ | хуркайаксем | хӳркайăксем |
| 112 | 10 айалтан | ыртнă | выртнă |

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
ШУПАШКАР ◆ 1938

## ТУПМАЛИ

*Стр.*

Çулăм витĕр . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Çăлтăрлă çĕлĕк . . . . . . . . . . . . . . 37
Тĕлпулу . . . . . . . . . . . . . . . . . 69
Колчакăн йулашки кунĕсем . . . . . . . . 86
Директăр . . . . . . . . . . . . . . . . 108

Редактор С. В. ЭЛЬГЕР. Технический редактор Ф. КОШКИН. Отв. корректор Г. ИВАНОВ. Обл. худож. Г. ХАРЛАМПЬЕВА

Сдано в произв. 29|X 1937 г. Подп. к печати 1|VI 1938 г. Печ. лист. 4 Печ. знак. 42240 в п. л. Тираж 3000 экз. Формат бумаги 62×94¹|₃₂. Чувашглавлит № 1579. Индекс Х—3. Зак. № 485. Чувашгиз № 057

Типография № 2 Чувашполиграфтреста в г. Алатыре, ЧАССР.

# ÇУЛĂМ ВИТĔР

## I

Çанталăк кĕркунне йенне сулăннă пулсан та çаплах кĕрлеттерсе аслати аватать, йалтăр та йалтăр çиçĕм çиçет, шартлаттарса аçа çапать, витререн тăкнă пек çăмăр çăвать.

Çĕрле, тĕттĕм. Йĕри-тавра ним те курăнмасть. Ура айĕнчи çăмăр шывĕ çеç тăхлан тĕслĕ кăваккăн çутăлса выртать. Тата, вăхăтран-вăхăт çиçĕм çиçсе, пĕтĕм тĕнчене йалтăр çутатать те каллех тĕттĕмленет.

Çак тĕттĕм те хăрушă çанталăка пăхăнмасăр, икĕ арçын, пĕр хĕрарăм Том шывĕ патнелле чупаççĕ. Пĕр арçыннин аллинче винтовкă, тепĕрин аллинче наган; хĕрарăмĕ, йăвăр çын пирки, аран-аран чупать. Хыçала тăрса йула пуçласан, ăна арçыннисем кĕтсе илеççĕ. Вĕсене виçĕ йуланут—казаксем хăвалаççĕ. Анчах тараканнисем, çĕр тĕттĕммипе пытанса, йуланутлă казаксенчен ăнăçлăн хăтăлкаласа пыраççĕ.

Чупсан-чупсан, çуран çынсем Том шывĕ хĕррине çитрĕç. Хĕрарăмĕ тўрех шыва кĕрсе

кайма тăчĕ. Ăна пĕр арçынни тытса чарчĕ:

— Асту, Тамарă, шыва ан кĕр! Йухса кайатăн. Ав, унта кимĕ пур...

Казаксем те лашисемпе сиктерсе çитни илтĕнет. Тата виç-тăват минут йе ик-виç минут—вĕсене çавăнтах çавăрса тытма пултараççĕ. Çуран сынсемваскасах кимме шыва сĕтĕрсе анчĕç. Анчах, ишме кĕсменсем çук.

— Мĕнпе ишес? Сан пăшалунта патрон пур-и?—тесе ыйтрĕ пĕри.

— Тата иккĕ пур.

Казаксем вĕсем патнелех пыни илтĕнет. Лаша ури сассисем çывăх.

Акă вĕсен лаши мĕлкисем мăкăльтетни те палăрать.

— Çитеççĕ!..

Акă виçĕ йулташ хыпалансах кимĕ çине ларчĕç те, кимми хумлă шыв çинеле шăвăнса кĕрсе кайрĕ. Виççĕнрен пĕри, кĕсмен вырăнне пăшалсене кĕпçисенчен тытса, вĕсемпе авăсмашкăн тытăнать.

— Халĕ ĕнтĕ харушă мар, шывра епĕр вĕсен аллине лекес çук,—терĕ пĕр арçынни, ирĕккĕн сывласа.

Казаксем, лашисем çинчен сике-сике анса, çыран хĕррине чупса пычĕç.

— Каларăм сире: вĕсем вилсен те чĕрĕле парăнас çук тесе. Итлемерĕр! Халĕ ĕнтĕ, ав, тытăр!—терĕ пĕри.

— Перес!—терӗ иккӗмӗшӗ.

Казаксем кӑшт ҫеҫ палӑракан кимӗ ҫине кӗрӗслеттерме тытӑнаҫҫӗ. Пӑшал сасси пулсанах, кимӗ ҫинчисем кимӗ тӗпне чӑсӑла-чӑсӑла выртрӗҫ. Пуљӑсем кимӗ урлӑ шӑхӑрса иртсе кайаҫҫӗ йе шыва ҫапӑнса чӑмплатаҫҫӗ.

Ҫӑмӑрпа хутӑшлӑ сулхӑн ҫил ҫӗлен пек шӑхӑрса тулашаť. Ҫыранри шыв, ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр, кӑпӑкланса, сиксе хумханаť. Шыв ҫинчи кимӗ, пӗрре хумсем хушшинеле путаť, тепре ҫӳлӗ хумсем тӑррине ҫӗкленет. Анчах халӗ ӑна тӗттӗмре казаксем курмаҫҫӗ ӗнтӗ. Ҫиҫӗм ҫиҫсе ҫутатсан, кимме кӑшт курсан ҫеҫ вӗсем ун йеннеле пӑшалсемпе переҫҫӗ.

— Ну, ӗнтӗ, вӗсем пурӗпӗр хумсем хушшинче пӗтеҫҫӗ: пуљӑ лекмесен те, шыва путса вилеҫҫӗ,—тет пӗр казакӗ.

— Шыва путарса вӗлертӗмӗр, тейӗпӗр штабра,—хушса хураť тепри.

— Йураť,—килӗшеҫҫӗ ыттисем.

Ӗҫӗ тухман казаксем, кашнийех пӗрне пӗри айӑплӑ пек шутласа, пӗр-пӗрин ҫине ҫилӗлӗн пӑхса илчӗҫ те, лашисене утланса, килнӗ ҫулпалах кайала кустарчӗҫ.

## II

Кимӗ, хумсем хушшинче ҫӳхенсен-ҫӳхенсен, шыв варринчи пӗр пӗчӗк утрав хӗррине ҫитсе чарӑнчӗ.

— Халĕ ĕнтĕ хăтăлтăмăр пулĕ, тухса канар çакăнта. Малала мĕн тумали курăнĕ,— терĕ Карачăм кимĕ çинчен анса.

Çăмăр кăшт лăпланчĕ. Анчах çил çавах ахăрса тулашать. Урнă хумсем аршăн çӳлĕш, купан-купан утрав хĕррине çитсе çапăнаççĕ.

— Кунта епĕр пурĕпĕр канлĕх курас çук. Атăр çыранăн тепĕр хĕррине тухар,—терĕ Карачăм арăмĕ Тамарă.

— Йурамасть. Унта казаксем, сыхласа тăрса, хамăра тытса илме пултараççĕ. Пирĕн вĕсене хирĕç тăма вăй çук. Пăшалсенче пĕрер патрон çеç йулнă,—тавăрчĕ Карачăм, арăмĕн сăмахне хирĕç.

Вăйлă çăмăрпа шыв тулнăçемĕн тулать. Пĕчĕк утрав çинче йĕри-тавра пилĕк хăлаç çеç типĕ вырăн тăрса йулать. Унта та вăхăт-вăхăт хум çитсе çапса, çынсене чĕркуççи таран шыва путарать.

— Капла шывра йĕпенсе тăриччен, атăр кимĕ çине ларар та, ăна пĕр-пĕр йăвăç çумне кăкарса хурар. Çутăла пуçласан, ăçтала каймалине курăпăр унта,—терĕ Кавруш. Çав вăхăтрах вăйлă хум çитсе çапрĕ те кимме йухтарса кайрĕ.

— Кимĕ кайрĕ!—виççĕшĕ те харăс кăшкăрса йачĕç. Хыçалтан хуса тытма тăчĕç, çук, шыв тарăн. Кимĕ, пăхса тăнă çĕртенех хумсем хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕ.

Тамарă ирĕксĕрех нăштк-нăштк йĕрсе йачĕ:

— Казаксен аллинчен хăтăлтăмăр. Халĕ акă шыва путса вилетпĕр,—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ вăл.

— Вилмесĕрех шанчăка çухатас мар-ха. Атăр, ак çак йăвăç çине улăхса ларар,—терĕ Карачăм, пĕр лăпсăркка туратлă йăвăç патне пырса

Тамарăпа Кавруш та унта утса пычĕç.

— Улăхăр!

Малтан Тамарăна хăпартса лартрĕç. Унтан Каврушпа Карачăм иккĕшĕ те, йăвăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç.

Хура чатăр пек тĕттĕм çĕр çанталăка талккăшĕпех хупласа тăрать. Çил ш-ши-и-и!.. шăхăрса çанталăкпа тулашать. Хумсем хайарăн шавлаççĕ...

## III

Кĕçĕр каç çеç вĕт-ха, хĕвел анса, тĕттĕм пулсан, Кавруш ĕçрен таврăннă май Тамарă инкĕшĕ патне кĕрсе тухма шутланă пулнă. Ăна хирĕç ушкăн çамрăк шахтерсем йурласа пынă:

Камшăн, мĕншĕн-ха вăрçаççĕ?
Чехсемпе ма йавăçаççĕ?
Ăнланмаççĕ, теççĕ-ши,
Пурте суккăр, теççĕ-ши?...

Ку йурра шахтăра вырăссем те, тутарсем те, чăвашсем те йурлаççĕ. Уншăн айăпласа миçе çынна тĕрмене хупса лартса, миçе çынна шомпăлпа çапман-ши? Ĕçхалăхне йурлама чарасшăн. Çавах та ăна йурлаŏ халăх. Пĕрре те хăрамасŏ. Ăçтан тытса charатăн ăна? Халăх вĕт вăл вăйлă. Чарăнас вырăнне пушшех кăшкăрса йурлаççĕ. Çавăнтах чех салтакĕсемпе казаксен атаманĕсем те çўреççĕ, анчах ним те тума пултараймаççĕ.

...Кавруш кайлипе тимĕр кĕреçине хулпуççи урлă хурса, сылтăм аллипе шахŏор лампине тытса, кукăр-макăр урампа, бараксен хушшинчи пылчăк çиййĕпе чĕркуççи таран ашса пынă. Шултăра çăмăр пĕрчисем питçăмартинчен çат та çат çапăннă, çийĕнчи брезент пиншакĕпе пуçĕнчи сарлака çунатлă шĕлепки тăрăх шăпăртатса шыв йухнă. Такам хурлантарнă ăна кĕçĕр, унăн сăнĕ салхуланнă. „Татах лекес мар“ тесе унтала-кунтала пăхкаласа, тем çинчен шухăшласа пынă вăл.

— Хăçан вăхăт çитĕ!—хăй тĕллĕн мăкăртатса калаçнă Кавруш.

Тĕве курпунĕ пек аванса аннă тăрăлă кивĕ барак тĕлне çитнĕ Кавруш. Баракăн çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ чўречисенчен шăши куçĕ пек лампă йăл-йăл çунни курăннă. Кавруш хăй те сисмен, тăп чарăннă. „Мĕншĕн çывăрмасŏ-

ха ку инке? Кĕрсе тухам-ха. Карачăм пиччерен хыпар-хăнар çук-ши?"—тесе шухăшланă. Пырса тĕкнĕ вăл барак алăкне. Алăкĕ уçăлман. Шалтан çаклатнă пулнă ăна. Чăмăрĕпе шак-шак-шак! шакканă алăкран.

— Кам унта?—илтĕннĕ шалтан хĕрарăм сасси.

— Епĕ. Уç-ха алăка, инке,—тенĕ Кавруш хуллен.

Тамарă алăка шăлтăр-шалтăр уçнă та Кавруша кĕртнĕ.

— Мĕн есĕ çăмăр витĕр йĕпенсе çӳретĕн?—тенĕ ăна Тамарă, алăкне йерипенрех хупма тăрăшса.

— Ĕçрен таврăннă май кĕтĕм,—тенĕ Кавруш, кайлипе тимĕр кĕреçине кĕтессе тăратса.

## IV

Баракра çĕрĕк мачча хăмисем хушшинчен шăпăртатса тумла йухнă, çĕмрĕк чӳрече куçĕсенчен вăшлатса çил кĕнĕ.

— Каç пулнă-пулманах хăраса питĕрĕнсе ларатăн-им есĕ? — тенĕ Кавруш тĕпелеле иртсе.

— Хăрамасăр! Карачăм пиччӳ шахтăран тухса кайнăранпах кашни каç сыхлаççĕ вĕт. Чӳречерен киле-киле пăхаççĕ. Ак пайаныранах хама та тытса кайĕç, тесе хăраса çеç

пуранатăп. Çавăнпа, çывăрма выртсан та, лампăна сÿнтерместĕп,—тенĕ Тамарă чĕтрекен сассипе.

— Казаксем йуна ĕçни çитмен, халĕ тата чехсем килчĕç ĕнтĕ. Пайан епĕ те вĕсен саламатне тутантăм,—тенĕ Кавруш кăмăлсăрăн пулса.

— Мĕншĕн хĕнерĕç тата?—пÿлсе ыйтнă Тамарă.

— Мĕншĕн? Нимĕншĕн те мар. Шахтăран ĕç пĕтерсе тухрăм та, килеле май утса пыратăп. Çăмăр çăвать. Çĕр тĕттĕм. Хам та сисмен, патнех çитсе перĕннĕ мĕн. Пуçа çĕклесе пăхрăм—чех офицерĕ тăра парать! Ним каламасăрах, саламатне йарса тытрĕ те пуç урлă çатлаттара пуçларĕ. Куçран йăлтăр-йалтăр хĕлхем тухса сирпĕнчĕ. Татах лекетчĕ пуль, аран тарса хăтăлтăм. Хыçран наганпа печĕ. Йурать çĕрĕ тĕттĕм, лекмерĕ,—тенĕ Кавруш, çиллипе аллисене çатăртаттарса чăмăртанă май.

Пĕр вăхăта вĕсем пĕрне пĕри сăмах чĕнмесĕр шухăш ăшне путса ларнă. Унтан Кавруш алăкĕн-тĕлĕнчен çавăраннă та:

— Ăçта çÿрет-ши ку Карачăм пичче? Пĕлесчĕ те манăн, ун патне вĕçтересчĕ. Кунта, епĕ унăн тăван шăлнĕ иккенне пĕлсен, мана йе тĕрмене хупса лартĕç, йе персе пăрахĕç,— тенĕ.

— Шахтăран тухса кайнăранпа нимле хыпар-хăнар та çук ун çинчен,—тенĕ Тамарă ассăн сывласа.

Кавруш чӳречерен пырса пăхнă. Таçта инçетре йытăсем вĕрни тата йурланă сасăсем илтĕннĕ. Çăмăр чашлаттарса çунă. Йăлтăр-йалтăр çиçĕм çиçнĕ. Çĕре чĕтретсе аслати аватса йанă. Çав вăхăтрах чӳрече умĕнчен пĕр мĕлке иртсе кайнă. „Хайхисем сыхласа çӳреççĕ",—тесе шухăшланă Кавруш. Чӳрече умĕнчен пăрăнса тăнă. Çамрăк чĕри кăкăрĕнчен сиксе тухас пек тапнă.

— Кам пулчĕ-ши?—тесе ыйтнă Тамарă хуллен.

— Лешсем ĕнтĕ сыхлаççĕ. Тухса тарас. Унсăрăн хама та тытса илĕç,—тенĕ Кавруш алăк патнеле утса.

— Ах, хăратăп епĕ, ывăлсам! Ан кай, кĕçĕрлĕхе кунтах çывăр,—тесе йăлăннă Тамарă.

Кавруш баракран тухса кайма ĕлкĕреймен, алăка шак-шак! шаккани илтĕннĕ.

— Лекрĕм,—хăй тĕллĕн каласса илнĕ Кавруш.

Тамарă алăк патне хăвăрт утса пынă та:

— Кам унта?—тенĕ хуллен.

Кавруш, алăкран тухса тарма май килменнипе, чӳречерен тухса вĕçме хатĕрленнĕ.

— Ку епĕ, Тамарă. Уç хăвăртрах!—хуллен сасă илтĕннĕ тултан.

Тамарă, пĕре хăранипе, тепре савăннипе, алăк питĕркĕчне вĕçерсе йараймасăр тăнă, аллисем сивĕ тытнă пек чĕтренĕ.

— Хăвăртрах уç!—васкатнă сасă.

Ку сасă—Карачăм сасси пулнă. Ăна Кавруш та, Тамарă та палласа илнĕ.

— Пичче ку!—тенĕ тухса тарма хатĕрленнĕ Кавруш. Вăл хыпалансах алăк питĕркĕчне вĕçерсе йанă.

— Карачăм! — савăнăçлăн кăшкăрнă та Тамарă упăшкине майĕнчен ыталаса илнĕ.

## V

Карачăм шахтăран тухса кайни час уйăх çитет ĕнтĕ. Казаксем, тин çеç çурхи чечек пек шăтса тухнă совет влаçне çĕмĕрсе тăкса, шахтăна хăйсен аллине илнĕ вăхăтра Карачăм хĕрлĕ гварди отрйачĕн командирĕ пулнă. Казаксене шахтăна кĕртесшĕн мар пулса, вăл хăйĕн отрйачĕпе вичĕ тавлăк çапăçнă. Казаксем çĕнтерсе илнипе унăн шахтăран тухса каймала пулнă. Урса çитнĕ казаксем шахтăна виçĕ йенчен çавăрса илнĕ.

Карачăм хăйĕн отрйачĕпе Том шывĕ йенНеле чакнă. Унтан кимĕсем çине ларса, шывăн тепĕр йенне каçса кайнă.

Шахтăна казаксем йышăнсан, унта мĕн пулнисене Тамарă хăй куçĕпе курса пурăннă.

Пĕрре унăн куçĕ умĕнчех казаксем пĕр суранлă хĕрлĕгвардейцăна персе пăрахнă.

— Есĕ кам, болъшевик-и?—тесе ыйтнă унтан урлă мăйăхлă казак атаманĕ.

Хĕрлĕгвардейĕц сăмахпа мар, пуçне çеç суллана.

— Расстре-лять!—тенĕ атаман, шăлĕ витĕр сăрхăнтарса.

Пăшал сасси сывлăша чĕтретсе ухлатнă. Хĕрлĕгвардейцă, касса йанă йăвăç пек, месерле кайса ӳкнĕ. Йулашкинчен те пулсан:

— Ых, тăшмансем!—тесе кăшкăрнă вăл.

Шахтăна шуррисем илсен, унта виçĕ кун, виçĕ çĕр пĕр чарăнмасăр пăшал сасси кĕрленĕ.

— Мĕншĕн Карачăм мана хăйпе пĕрле илсе каймарĕ-ши? Унпа пĕрле кайнă пулсан, çак хăрушлăха та курмăттăм,—тесе ӳпкелешнĕ вăл текех.

— Аран-аран пытанкаласа килтĕм. Ăçта çитнĕ унта казаксемпе чехсем çеç пăшалĕсене йăтса çӳреççĕ,—тенĕ Карачăм, сывлăшне çавăрса йарса.

— Есĕ шахтăран тухса кайнăранпах шуррисем кăтка пек вĕркеççĕ. Малтанах казаксем çеçчĕ. Халĕ ĕнтĕ чехсем килсе тулчĕç,— тесе пĕлтернĕ ăна Тамарă.

Карачăм хулпуççи урлă çакнă винтовкине хывса илсе çтена çумне тăратнă. Унтан Кавруша алă панă:

— Ну, мĕнле пурăнатăн? Ĕçсем мĕнле пыраççĕ?

— Начар. Пайан чут персе пăрахаттчĕç. Аран тарса хăтăлтăм,—тенĕ ăна Кавруш, тарăнăн сывласа.

— Есĕ хаљ пуçăнтан шăлса ачашласса кĕтетĕн-и? Çук, вăл пулмĕ. Ун вырăнне йе саламат, йе пуљă,—тенĕ Карачăм татса.

— Карачăм, есĕ мĕн, пĕтĕмпех таварăнтăн-и?—тесе ыйтнă Тамарă.

— Сана курас килнипе çеç, çула май кĕрсе тухас терĕм. Ах, мĕне кирлĕ пулчĕ-ха ку епĕ сана хăрушă вăхăтра хускатса çӳрени! Ну, Тамарă, кала: хăçан есĕ çăмăлланатăн? Епĕ, вĕт, есĕ çуратнă пуљ тесе. Малтанхи ачаçке-ха, курас килет манăн ăна,—тенĕ Карачăм, арăмне ачашласа.

— Йулашки кунсене çӳретĕп,—пĕлтернĕ ăна Тамарă.

— Ну, Тамарă, Кавруш... манăн вăрах тăма вăхăт çук. Епĕ отрйадран икĕ сехетлĕхе çеç уйăрăлтăм. Вăхăт çитет. Çухатĕç тата,—кайма хыпаланнă Карачăм.

— Карачăм, епĕ санран йулмастăп, илсе кай мана хупа пĕрле,—тесе йăлăннă Тамарă.

— Епĕ те йулмастăп, пичче,—тенĕ Карачăм шăлнĕ Кавруш та.

Карачăм арăмĕпе шăллĕ çине пăхса илнĕ те:

— Йурĕ, пырăр. Йăвăр пулсан та пĕрле, тӳсĕпĕр,—тенĕ вăл.

— Тавтапуç сана!—Кавруш пиччĕш аллине тытса чăмăртанă.

— Ну, сăмах-йумаха пĕтерер. Ĕçе тытăнар. Кĕçĕр пирĕн пĕр пысăк ĕç тумала,—тенĕ Карачăм.

— Мĕнле ĕç?—ыйтнă Кавруш.

— Шахтăран тухса кайнă чухне отрйад пĕчĕкчĕ. Халĕ кашни кун вуншарăн, çирĕмшерĕн рабочисемпе хресченсем пыра-пыра хутшăнаççĕ. Уйăх хушшинче отрйад икĕ пин çынна çитрĕ. Отрйад ӳсет. Анчах хĕçпăшал çитмест. Партизансенчен хăшĕ-пĕрисем тимĕр сенĕксемпе, çавасемпе çӳреççĕ. Шахтăри казаксемпе чехсен складра хĕçпăшал туллийех. Кĕçĕр пирĕн çав склада мĕнле хуралланине тĕплĕн пĕлес пулаť, çитес каç вара вăл склада хамăр алла илмеле,—тенĕ Карачăм, унăн-кунăн пăхкаласа.

— Ку ĕçе тăвасси ним те мар: склад патĕнче йаланах икшер казак çеç хурал тăраççĕ, тата склачĕ шахтăран уйрăм. Çĕр тĕттĕм,—тенĕ ăна Кавруш.

— Çапах та малтан тĕплĕнрех пĕлес пулаť,—татса хунă Карачăм.

— Ку ĕçе епĕ хам çине илетĕп. Ун çинчен епĕ халех кайса пĕлсе килĕп,—тенĕ Кавруш.



ЧУВАШСКАЯ

Урамра ҫил урмӑшса кайсах тулашнӑ. Вӑл кивӗ барака кӗҫ-вӗҫ йӑвантарса йарасла силлесе чӗтретнӗ.

Кавруш алӑкран тухса кайма ӗлкӗреймен, ҫав самантрах тултан кӗмсӗртеттерме пуҫланӑ.

— Кам унта? Мӗн кирлӗ?! — кӑшкӑрнӑ Тамарӑ.

— Уҫ алӑкна! Мӗн питӗрӗнсе ларатӑн! Уҫ! — ҫиллӗ сасӑ йантӑраса кайнӑ.

— Лекрӗмӗр, пичче!.. Есӗ тавӑрӑннине сиснӗ лешсем, — тенӗ Кавруш алӑк умӗнчен пӑрӑнса.

— Тыт винтовкӑ! — хушнӑ Кавруша Карачӑм. Унтан Тамарӑна алӑк умӗнчен кайма каланӑ.

— Уҫ хӑвӑртрах! Унсӑрӑн алӑка ҫӗмӗретпӗр!

— Кам есӗ? Мӗн кирлӗ сана? Кай алӑк умӗнчен! — кӑшкӑрнӑ ӑна Кавруш, пӑшалне хатӗр тытса. Унччен те пулман, пӑшал сасси кӗрлесе те кайнӑ. Пуљӑ, чӳречене ҫӗмӗрсе кӗрсе, сӗтел ҫинчи вӗлтлетсе ларакан шӑши куҫ лампине салатса пӑрахнӑ. Ахаљ те тӗттӗм баракра пушшех те курӑнми пулса тӑнӑ.

— Тамарӑ, есӗ тӗпсакайне пытан! — тенӗ Карачӑм, урай хӑмине уҫса.

— Чӳречерен тухса ан тарччӑр! — илтӗннӗ сасӑ тултан. Барак тавра тӗпӗртетсе чупкаланисем илтӗне пуҫланӑ. Пӑшал сассисем

шалтлатнӑ, пуҫӑсем ҫтена витӗр кӗрсе кӑмакана ҫапӑннӑ. Карачӑмпа Кавруш плита хӳтлӗхне кӗрсе тӑнӑ та хирӗҫ пере пуҫланӑ.

— Вӗсем ахаль парӑнас ҫук! Баракне вут тӗртсе ҫунтарас! —тенӗ сасӑсем Карачӑмпа Кавруш хӑлхисене пырса кӗнӗ.

— Мӗн тӑвас? Йепле хӑтӑлас? Чӳречерен тухса тарма май ҫук—барак йӗри-тавра казаксемпе чехсем! -хӑй тӗллӗн каласса илнӗ Карачӑм. Вутра ҫунса виличчен, атӑр чӳречерен тухса таратпӑр,—тенӗ вӑл чӗтрекен сассипе.

Казаксем барак патне пӗр пичӗке кӑраҫҫын илсе пынӑ та вӑл кӑраҫҫына барак ҫине сапнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑнах барака хӗрлӗ вут ҫулӑмӗ ыталаса илнӗ. Тӗттӗм ҫӗр йӗри-таврана ҫутӑлса кайнӑ.

Бараксенче лӑпкӑ ҫывӑракан шахтӗрсем вӑранса, хӑшӗ кӗпе вӗҫҫӗнех, хӑшӗ ҫара уран, урамала сике-сике тухнӑ.

— Пушар-р!..

— Пушар-р!..—кӑшкӑрса, ҫунакан барак патнеле чупнӑ шахтӗрсем.

Анчах барак мӗншӗн ҫуннине рабочисем никам та пӗлекенни ҫук. Рабочисем пыракан ҫул ҫине казаксем, чехсем тӑрса тухнӑ та йапун пӑшалӗсене хатӗр тытса тӑнӑ. Кӗрлесе ҫунакан барака сӳнтерме пыракан шахтӗрсене вӗсем:

— Стой, çывӑха ан килĕр!—тесе кӑшкӑрса чарнӑ.

Йавӑнса çунакан барак çине шахто̆рсем ним тума пĕлмесĕр, тĕлĕнсе, пӑхса тӑнӑ.

— Мĕншĕн пӑхса тӑрсах çунтаратпӑр-ха?— пĕр-пĕринчен ыйтнӑ рабочисем.

Сасартӑк:

— Мĕн пӑхса тӑратпӑр!? Тамарӑ çунса вилет вĕт!—пĕр сасӑ йантӑраса кайнӑ.

Çак сасса илтсен, казаксемпе чехсен речĕ умĕнче кĕпĕрленсе тӑракан шахто̆рсем, татӑлса кайнӑ пĕве шывĕ пек, барак патнеле кĕшĕлтетсе чупнӑ.

Казаксемпе чехсем рабочисене çунакан барак патне йарасшӑн пулман.

— Çывӑха ан килĕр!—тесе кӑшкӑрнӑ вĕсем, анчах йышлӑ халӑха ним тума та пултарайман.

Шахто̆рсем, казаксем, чехсем пĕр ушкӑна хутшӑнса пӑтранса кайнӑ. Кӑшкӑрашу, çухӑрашу пуçланнӑ.

Шӑп çав вӑхӑтра, ĕнтĕ, çунакан барак чӳречинчен икĕ арçын, пĕр хĕрарӑм сиксе тухнӑ та, Том шывĕ йеннеле чупса тарнӑ.

— Хӑтӑлчĕç!—хавас сасӑсем илтĕнне шахто̆рсем хушшинче.

— Тухса тарчĕç! Халех хӑваласа тытӑр!— хайар сасӑпа кӑшкӑрнӑ урлӑ мӑйӑхлӑ атаман.

Çавӑнтах виçĕ йуланут, ушкӑнран уйӑрӑлса,

çулăм витĕр тухса тарнă çынсем хыçĕнчен сиктерсе хăвалама пуçланă.

— Амантсан та, ан вĕлерĕр. Чĕрĕле тытса килме тăрăшăр! — кăшкăрса йулнă атаман. Анчах та Карачăм, Кавруш, Тамарă, тĕттĕм çĕрпе усă курса, хăвалакан казаксенчен ăнăçлăн тарса хăтăлаççĕ.

Барак хăвăрт çунса пĕтет. Çунса пĕтеймен пĕренисене çăмăр сӳнтерет.

## VI

Çутăлас йенне кайсан, çил лăпланаť. Шыв шавлама чарăнаť.

— Утрав çинче ăçта та пулсан типĕ вырăн çук-ши?—терĕ Кавруш йĕри-тавра пăхса.— Çук, типĕ çĕр курăнмасť, çап-çутă шыв çеç йăлтăртатса выртаť. Йăвăççем, тин çеç шывран шăтса тухнă пек, тăррисене йăвăррăн кăтартса лараççĕ.

— Ай! — хайар сасăпа кăшкăрса, шăлне шатăр çыртрĕ Тамарă.

— Мĕн пулчĕ?—тесе ыйтрĕ Карачăм.

— Ах, пилĕк тытма пуçларĕ!—йăнăшрĕ Тамарă.

Карачăм Тамарăна ыталаса тытрĕ:

— Мĕн тăвас-ши? Йăвăç çинчен ансассăн та ниçта типĕ вырăн çук,—терĕ вăл, унăнкунăн пăхкаласа.

Тискер çанталăк, Тамарă асапне туйса илнĕ пекех, йерипен çемçелчĕ. Çил лăпланать. Шурăмпуçĕ хĕрелсе хăпарать. Çухрăм сарлакăшлĕ шыв пĕр хумханмасăр, кĕленче пек çап-çутă курăнса, хуллен çеç пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне йухма пуçлать.

Шыв тыткăнне лекнĕ çынсем, ним тума пĕлмесĕр, йăвăç тăрĕнче аптăраса ларaççĕ. Кăшкăрас—хăрушă! Кавруша Карачăм кимĕсĕр те ишсе каçĕччĕç. Тамарă ишме пултараймасть. Мĕн тăвас? Ниçтан та пулăшу çук! Йепле çăлăнассин тĕлĕ те курăнмасть.

Сасартăк, инçетрен-инçетрен, шыв тăрăх пĕр хура пăнчă йухса анни курăнчĕ.

— Мĕн-ши вăл?—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Карачăм.

Тамарă пĕтĕмпех аптăраса çитрĕ, аллисемпе варне тытса ăшталанать:

— Ай! Ох!—ӳпки тулли сывласа йăнăшать.

Хура пăнчă хуллен йухса çавăрăнать, пысăкран пысăк курăна пуçлать.

— Кимĕ йухса килет!—савăнăçлăн кăшкăрса йачĕ Кавруш.

— Мĕнле тытас-ши ăна?—терĕ Карачăм.

— Епĕ ăна халех!—Кавруш çийĕнчи тумтирне хывса йăвăç туратти çине çакрĕ те тӳрех шыва сикрĕ. Шыв хумĕ ун йĕри-тавраункă пек пулса саланчĕ.

— Асту, ывăлсам, ан пут!--кăшкăрчĕ Тамарă.

Кавруш, кимме хирĕç ишсе çитсе, кимĕ çине улăхса ларчĕ те чăрăш патнеле йаранса пычĕ:

— Ну, анăр, пичче, инке!—терĕ.

Карачăм пилĕк тытнипе аптăрана Тамарăна тирпейлĕн йатса антарса, кимĕ тĕпне вырттарчĕ.

— Часрах çырма хĕррине, типĕ çĕре тухасчĕ!—терĕ Тамарă пăшăлтатса.

— Халĕ ĕнтĕ кимĕ çинче, хăрамастпăр,—лăплантарать Карачăм Тамарăна.

Кимĕ йухан шыва икĕ йеннеле йăшăл çурса, çыран хĕрринеле шăвăнать.

Тамарă пĕтĕм чунхавалĕпе хайаррăн кăшкăрса йарать. Çавăнтах пĕчĕк ача сасси:

— Уа-уа-уа-уа-а-а!—шыв çинчи йăвăр сывлăша чĕтретсе, лайăх купăс сасси пек таçта çитичченех сарăлчĕ.

— Тепĕр болъшевик çуралчĕ,—терĕ Карачăм хĕпĕртенипеле.

Кимĕ çыран хĕррине çитсе чарăнчĕ.

— Громăв йулташ çитрĕ!

— Командир йулташ килчĕ!—кăшкăрашса, кĕшĕлтетсе чупса пычĕç вĕсем патне партизансем.

— Лашу ăçта?—ыйтаççĕ партизансем.

Карачăм, лаша çинчен каламасăрах, тăрех:

— Çестра ăçта пирĕн? Калăр-ха, килтĕр вăл кунта,—терĕ кăшкăрса.

— Çестра, кунта!

— Командир патне!—темиçе сасă йантăраса кайрĕ.

Çавăнтах сăран пиншак тăхăннă, çӳçне картусĕ ăшне тĕркелесе чикнĕ çап-çамрăк хĕрарăм чупса çитрĕ:

— Мĕн тума кирлĕ епĕ сире, командир йулташ!—тесе ыйтрĕ çестра, тутисене тăп-тăп тытса.

— Ав, кимĕ çинче ман арăм. Вăл ача çуратрĕ. Есĕр ăна Шерпаки йалне илсе кайса, пĕр-пĕр хресчен патне вырнаçтарăр,—терĕ Карачăм.

Çестра, мĕн иккенне пĕлмесĕр, пĕрре Громăв çине, тепре аллинче тин çуралнă ачана тытса ларакан Тамарă çине пăхса илчĕ те:

— Мĕнле-ха капла?!—терĕ.

— Нимĕнле те мар, çапла. Ывăл ача çуралчĕ,—терĕ Карачăм.

Çавăнтах урапа кӳлсе пычĕç. Çестра Тамарăна урапа çине лартса, йала илсе кайрĕ.

— Пĕччен кайса тăваттăн килтĕмĕр. Куман шăллăм,—тесе, партизансене Каврушпа паллаштарчĕ Карачăм.

— Епĕр сана, тыткăна лекрĕ пулĕ тесе, шырама кайма хатĕрленнĕччĕ,—терĕ пĕр партизан.

— Епĕр тыткăнран мар, çулăм витĕр тухса тарса хăтăлтăмăр. Пирĕн йăх вăл вутра та çунмасть, шывра та путмасть,—терĕ Громăв

татса. Унтан вăл иртнĕ çĕрте мĕн курнине, мĕн тӳснине йĕрки-йĕркипе каласа пачĕ. Партизансем шăппăн итлесе тăраççĕ.

Хĕвел, çӳлтен çӳле хăпарса, ирхи апат вăхăтне çитрĕ.

— Лашана епĕ, шахтăна кĕрес чух, вăрмана кăкарса хăварнăччĕ... Пĕлместĕп, те пур ĕнтĕ вăл унта, те çук?—пĕтерчĕ Карачăм хăйĕн сăмахне.

— Лаша вăл, çухалсан та, татах пулĕ. Хăвăр хăтăлнă, ку пит аван,—савăнăçлăн каласса илчĕç партизансем.

## VII

Казаксем, шахтăна тавăрăнсан: „Таркăнсене виççĕшне те шыва путарса вĕлертĕмĕр“, тесе пĕлтерчĕç. Çавăнпа казак атаманĕсемпе чех офицерĕсем командирсăр йулнă Громăв отрйадне çийĕнчех аркатса тăкма шухăш тытрĕç. Тепĕр каçхинех пĕр ротă чех салтакĕсене тата тепĕр ескадрон казаксене, пулеметсемпе хĕçпăшаллантарса, партизансем патне йамала турĕç.

Громăв отрйачĕ те çывăрмарĕ. Çав каçах шахтă çине наступленипе кайрĕ.

Тăшмансем пĕр-пĕринпе, кĕтмен çĕртен, Шерпаки йалĕ çывăхĕнче хирĕç пулчĕç.

— Кам килет?—кăшкăрса ыйтрĕ отрйадран çур çухрăм малта пыракан разведчик.

Хирĕç ответ пулмарĕ, ун вырăнне пăшал сасси çеç кĕрлесе кайрĕ. Партизан лаша çинчен месерле персе анчĕ, лаши калла, отрйад йеннеле, çавăрăнса тарчĕ.

Пăшал сассине илтсен:

— Хатĕрленĕр! Казаксемпе чехсем пирĕн çине килеççĕ!—командă пачĕ Громăв.

Куç уçса хупиччен партизансем лашасем çинчен сике-сике анчĕç, çавăнтах хăйсем те, лашисем те çĕре чăсăла-чăсăла выртрĕç.

Çанталăк шăп. Çĕр пит тĕттĕмех мар, умра аллă хăлаçа йахăнран лайăхах курăнать.

Казаксемпе чехсем партизан отрйачĕ çине пĕр хăрамасăр кĕреççĕ. Отрйадра командирĕ çук тенипе, вĕсем партизансене ним вырăнне те хумаççĕ пулас. Çавăнпа пит хăйулăн килеççĕ.

Малтан икĕ йуланут—разведчиксем курăнчĕç. Вĕсене тивмерĕç, малала ирттерсе йачĕç. Пилĕк минут урлă шуррисен отрйачĕ пырса çитрĕ.

— Отрйад, пли!—командă йантăраса кайрĕ. Çавăнтах йĕркесĕр пăшал сассисем шатăртатса кайрĕç. Пулемет тра-та-та-та-та!—калаça пуçларĕ.

Пĕр шухăшсăр, хăйулăн килекен отрйад айăн-çийĕн йăванса кайрĕ.

Нумайĕш ўксе пĕтрĕç, йулнисем çавăрăнса тарчĕç.

Пăшал сасси тата нумайччен шатăртатса тăчĕ. Чĕрĕ йулнă казаксемпе чехсем курăнми пулчĕç. Вилнисемпе суранланнисем, вырса пăрахнă кĕлтесем пек, йăванса выртса йулчĕç.

Çапăçу хыççăн Громăв малала каймарĕ, пĕтĕм отрйачĕпе Шерпаки йалĕнче канма чарăнчĕ. Партизансем килĕрен киле саланса вырнаçрĕç. Карачăм хăй Тамарă вырнаçнă хваттере кĕчĕ.

Хуçа арăмĕ ăна кăмăллăн йышăнчĕ:

— Ах, есĕ пулатăн-и-ха ĕнтĕ вăл командир Громăв текенни?

— Вара, епĕ пулатăп, инке, епĕ,—тет ăна Карачăм, кăмăллăн кулса.

— Ав, есĕ мĕнле ырă çын иккен! Сана пуйансем йуратмаççĕ: „çынсене вĕлерсе, пурлăхĕсене çаратса çӳрет“ тесе елек сараç-çĕ,—терĕ хуçа арăмĕ.

— Вĕсем калĕç, инке. Тата ытларах та калама пултарĕç. Хăйсем ĕçхалăхне вĕлерсе çӳресе çаратни çинчен шарламаççĕ пулĕ?—терĕ Карачăм. Унăн-кунăн пăхрĕ: пӳртре Тамарă та, çестра та курăнмарĕ. „Ăçта вĕсем?“ —шухăшларĕ вăл.

Хуçа арăмĕ йăпăр-йапăр чупкалат:

— Çийессĕр килет пуљ? Мĕн çитерес-ши ĕнтĕ сире?

— Ним те кирлĕ мар, инке. Пулсан, çăкăрна пар та сăмаварна вĕрет. Инке, сан

патăнта пĕр ачалă арăмпа тепĕр хĕрарăм пулма тивĕçлĕ. Ăçта вĕсем?—тесе ыйтрĕ Карачăм.

— Ой, ман патра нимĕнле ачалă арăм та, ахаљ хĕрарăм та çук,—терĕ хĕрарăм хăраса ӳксе.

— Ан хăра, инке, ачали вăл манăн арăм, тепри—пирĕн отрйадри çестра,—терĕ Карачăм.

Хĕрарăм Громăв çине шăтарас пек пăхса илчĕ те:

— Суймастăн-и?

— Мĕншĕн суйас манăн сана!

— Епĕ вĕсене, ăнсăртран йала шуррисем килсе кĕрĕç те тем туса хурĕç тесе, нӳхрепе пытарса лартрăм, —терĕ хĕрарăм савăнăçлăн.

— Есĕ вара хĕрлисем майлă-им, инке?—тесе шӳт туса ыйтрĕ Карачăм.

— Ман пек упăшкасăр чухăн хĕрарăм, хĕрлисем майлă пулмасăр, камсен майлă пулас тата?—терĕ хĕрарăм хĕпĕртесе. Унтан чупса тухса, Тамарăпа çестрана нӳхрепрен кăларса кĕчĕ.

Карачăм икĕ тавлăкри ывăлне аллине тытса лăпкарĕ.

— Тамарă, ывăла мĕн йатлă хурăпăр?—тесе ыйтрĕ вăл ăшшăн.

— Епĕ пĕлместĕп, ху шухăшласа туп,—терĕ Тамарă кăмăллăн.

— Владимир... Волоҫă. Лайăх йат вĕт? Ленин йулташ йачĕ,—терĕ ҫестра, упăшкипе арăмĕ калаҫнă ҫĕре хутшăнса.

—Вăт ку лайăх йат! Волоҫă! Владимир Герасимович Громăв!—тесе, ачине пĕчĕк тутинчен чăп! чуптуса илчĕ Карачăм.

Тамарă, сăмах чĕнмесĕр, савăнăҫлăн йăлкăшса ҫеҫ ларчĕ.

## VIII

Громăв отрйачĕ Шерпаки йалĕнче икĕ тавлăк ниҫта тухмасăр канчĕ. Партизансем вăхăта ирĕккĕн иртерчĕҫ.

Хăйсене ҫĕмĕрсе тăкнишĕн тискер кайăк пек ҫиленсе ҫитнĕ казаксемпе чехсем, пĕтĕм вăйĕсене пухса, Громăв отрйадне хирĕҫ тепĕр хут хатĕрленсе тухрĕҫ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем Шерпаки йалне, пĕр йенчен ҫеҫ мар, йĕри-тавралах ҫавăрса илчĕҫ. Громăв отрйачĕ ăна кĕтмен те. Отрйад йала кĕрекен ҫулсем ҫине хуралсем кăларса тăратнă та, ыттисем йалта ним шухăшсăр ҫывăраҫҫĕ.

Ҫурҫĕр ҫитес умĕн пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕҫ.

— Шуррисем килеҫҫĕ!

— Йала пур йенчен та ҫавăрса илнĕ!—тенисем илтĕнчĕҫ.

Партизансем, хăшĕ ҫарамас, хăшĕ ҫара уран, пӳртсенчен сике-сике тухаҫҫĕ.

— Тамарă, лашасем хатĕр, хăвăртрах пуçтаранса тух!—терĕ Карачăм васкаса.

Ытла хăвăрт пулнипе, хуçа арăмĕ ним тума аптăраса ӳкрĕ:

— Ах, ху пăртак сываличчен, ачу тĕреклениччен кунтах пурăн, ачам,—тесе Тамарăна хăй патне йулма ыйтаҫ.

— Кунта йулма йурамасҫ. Шуррисем кусем ман арăмпа манăн ачам иккенне пĕлсен, пĕлетĕн-и, вĕсем мĕн тăвасса? Тӳрех штык çине тăрăнтарĕç,—терĕ Карачăм.

— Никама та кăтартмăп епĕ вĕсене, пытарса усрăп,—сăмах параҫ хуçа арăмĕ.

— Çук, халĕ ĕнтĕ есĕ ăна пытарса усрайман. Йалта епĕр кам патĕнче хваттерте тăнине пĕлеççĕ. Шуррисем, çитсенех, санăн пĕтĕм çуртна ухтарĕç,—терĕ Карачăм.

Пăшал-пулемет сассисем вăйлăран вăйлă шăтăртаттарма пуçларĕç.

— Ах, хăй пурăнĕ, ачи пит шел! Пилĕк тавлăкри çеç вĕт-ха!—хăй тĕллĕн калаçса куљљанаҫ хуçа арăмĕ.

— Вăхăчĕ çавăн пек, инке. Вăрçăра çуралнă, вăрçăра пиçтĕр. Çирĕп пулĕ. Тăшманран хăрамĕ,—терĕ Карачăм пӳртрен тухас умĕн.

— Хăвăртрах!—кăшкăрчĕ Кавруш тултан.

— Ну, Кавруш, есĕ Тамарăна пăх. Епĕ кайрăм,—терĕ Карачăм, лаши çине сиксе утланса. Вăл çавăнтах урамала сиктерсе тухрĕ.

Партизансем пурте пӗр ҫӗре пуҫтарӑннӑ. Командир ҫитессе кӗтеҫҫӗ.

Карачӑм, отрйад патне ҫывхарсанах:

— Ман хыҫран!—тесе командӑ пачӗ. Командир чи малта, ун хыҫӗнчен отрйад кӗшӗлтетсе пырат.

Имсӗр-сумсӑр пӑшал сасси кӗрлет. Партизансем пынӑ ҫӗртех йӑвана-йӑвана ӳкеҫҫӗ, лашисем чикелене-чикелене анаҫҫӗ. Казаксемпе чехсем пур йенчен те хӗсӗрлеҫҫӗ.

Сасартӑк Тамарӑ умӗпе пыракан Кавруш лаша ӗнси ҫинеле чикеленсе анчӗ. Аллинчи пӑшалӗ ҫӗреле вӗҫерӗнсе ӳкрӗ. Вӑйсӑр урисем йӗнер пусси ҫинчен тухса кайрӗҫ.

— Ывӑлсам, ывӑлсам! Мӗн пулчӗ?—лашине чуптарса пычӗ ун патне Тамарӑ.

Кавруш чӗнмерӗ, лаши пуҫӗ урлӑ тӗшӗрӗлсе анчӗ. Лаши малала тапса сикрӗ.

Тамарӑ лаши ҫинчен анса, аллинчи ачине ҫӗре вырттарчӗ те Кавруша пулӑшасшӑн пулчӗ. Анчах ним тума та пултараймарӗ. Инҫе те мар шӑв-шав илтӗне пуҫларӗ. Ҫавӑрӑнса пӑхрӗ: йуланутлӑ казаксем сиктерсе пыраҫҫӗ. Тамарӑ хӑй те сисмерӗ, лаши ҫине утланса ларчӗ те отрйад хыҫӗнчен сиктерчӗ. Ҫӗр хӑлаҫ кайсан тин вӑл аллинчи ачи вилнӗ Каврушпа йунашар выртса йулнине аса илчӗ. Чӗри йӗппе чикнӗ пек ыратса кайрӗ. Лашине ҫавӑрса калла кайма тӑчӗ.

Çук, ĕç тухмарĕ, казаксем пĕлĕт пек хупласа çитеççĕ, аллисенчи хĕçĕсем йăлтăр та йалтăр выљанаççĕ. Хăйсем урса кайсах кăшкăраççĕ. Çак хăрушлăха курсан, Тамарă каллех пĕр вăхăта ачи çинчен манчĕ. Лашине хистесе сиктерме пикенчĕ. Пуçĕ урлă та, айăккинчен те пуљăсем шăхăрса вĕçеççĕ. Малта та, хыçалта та, партизансем, касса йанă йăвăçем пек, тăкăнаççĕ. Тамарă, тарса хăтăласшăн пулса, лашине чĕлпĕрĕнчен турткалаť, урисемпе хĕтĕклет. Анчах, лаши сиксех чупаť пулсан та, вăл ăна пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă пек туйăнаť.

Кайсан-кайсан çавăрăнса пăхрĕ. Казаксем инçене тăрса йулнă. Карачăма хуса çитрĕ.

— Кавруш ăçта? Курмарăн-и?—ыйтрĕ унран Карачăм.

— Ăна вĕлерчĕç,—кĕскен пĕлтерчĕ Тамарă.

— Ачу?! Волоťă ăçта?!

— Вăл, вăл... ывăлсампа пĕрле,—урăх калаймарĕ, чĕлхи çыхланчĕ Тамарăн.

Карачăм арăмĕпе урăх калаçмарĕ, лашин чĕлпĕрĕнчен туртса илсе, малала сиктерчĕ. Ун хыçĕнчен Тамарă та йулмарĕ.

Хыçалти казаксем курăнмийех тăрса йулчĕç.

Карачăм лашине тытса чарчĕ:

— Тпру-у!.. хуллен утса пыр,—лашипе калаçса илчĕ.

— Карачăм, Володя ывăлсампа пĕрле чĕрĕлех выртса йулчĕ. Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ ăна?— терĕ Тамарă тарăнăн сывласа. Карăннă кăкăрĕсем унăн чикĕшсе ыратса илчĕç.

Карачăм, лашине чарса, сиксе анчĕ. Тамарă та анасшăн пулчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ. Сасартăк вунă-вунпилĕк йуланутлă казаксем пырса тухрĕç.

— Стой! Вырăнтан ан хускалăр!—пĕр сасă йантăраса кайрĕ.

Тамарă, ниме пăхмасăр, айăккинеле сирпĕнчĕ. Хăлхи умĕнчен пуљăсем шăйласа иртсе кайрĕç.

Громăв лаша çине утланса та ĕлкĕреймерĕ, урине пуљă çитсе лекнипе, çĕре хутланса анчĕ. Çавăнтах ăна казаксем сырăнса илчĕç.

— А-а-а... Лекрĕн-и!..—савăнăçлăн кăшкăрса йачĕç казаксем.

Громăв казаксене парăнмарĕ. Вăл наганне туртса кăларчĕ те пиллĕк персе темиçе казака йăвантарчĕ. Улттăмĕш пуљă хăйĕн тăнлавне çĕмĕрсе кĕрсе ларчĕ. Унтан, аллисене сарса, ӳпне çавăрăнса ӳкрĕ. Лаши кĕçене-кĕçене, Тамарă хыçĕнчен аçа-çиçĕмĕн ĕрхĕнсе сирпĕнчĕ.

## IX

Кунсем, уйăхсем, çулсем ирте-ирте кайрĕç. Хĕрлĕ çар шурă бандитсене тĕпĕ-йĕрĕ-

пех çĕмĕрсе тăкрĕ. Совет влаçĕ тин шăтса тухнă чечек пек йешĕрчĕ. Ĕçхалăхĕ йун тăкни харама çухалмарĕ: ирĕклĕ, савăнăçлă пурăнăç пуçланчĕ.

Тамарă Шерпаки йалне иккĕмĕш хут, çĕнĕ Конституци тăрăх суйлава хатĕрленес пирки, пропагандис пулса çитсе лекрĕ. Вăл тӳрех граждăн вăрçи вăхăтĕнче хăй хваттерте тăнă хуçа арăмĕ патне чарăнчĕ.

Малтанах вĕсем пĕрне пĕри паллаймарĕç. Хуçа арăмĕн çӳçĕ шуралнă, сăнĕ ватăлнă. Тамарă та ĕлĕкхи пек мар, вăл хулăмланнă, сăнĕ улшăннă.

— Астăватăн-и, инке, 1919-мĕш çул епĕ пирвайхи ачана çуратсан, сан патăнта пурăнтăм?—тесе пĕлтерчĕ Тамарă.

— Ах, есĕ çав Тамарă пултăн-и-ха?! Епĕ, паллаймасăр тăратăп!—савăнăçлăн кăшкăрса, Тамарăна ыталаса илчĕ килхуçи арăмĕ.

Унтан вĕсем йунашарăн калаçма ларчĕç.

— Епĕ вĕт, сана та вĕлерчĕç пулĕ, тесе шутланă,—терĕ килхуçи арăмĕ.

— Хама вĕлерейменрĕç, ачана çухатса хăвартăм,—терĕ Тамарă, кăкăр туллин сывласа.

Шăп çав вăхăтрах пӳрте йаштака пӳлĕ, хура куçхаршилĕ, вунсакăр çулхи каччă пырса кĕчĕ:

— Анне, апат çитер-ха мана. Васкатăп. Комсомол пуххине каймала. Ах, хăна та пур

иккен пирĕн! Аван-и? Есĕр пулатăр-и-ха пирĕн йала килнĕ пропагандис?—терĕ çамрăк çын, Тамарăна алă парса.

— Вара, епĕ,—васкаса ӳкрĕ Тамарă. Унтан çамрăк çын çине тинкерсе пăхрĕ: „Йепле ку ача Карачăм тĕслех?"—шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче.

— Палларăн-и?—тесе ыйтрĕ хуçа арăмĕ, савăнăçлăн йăлкăшса.

— Çук... Кам ку? Кам?!

— Вăл, вĕт, санăн ывăлу, Волоťă,—пĕлтерчĕ килхуçи арăмĕ.

Тамарă, пĕрре савăннипе, тепре хурланса ӳкнипе, ларнă çĕртех йупа пек хытса кайрĕ. Унтан майĕпе ура çине тăрса:

— Волоťă? Волоťă, ачам!..—аллисене акăш пек хăлаçласа, ывăлне ыталаса илчĕ. Куçĕсем ирĕксĕрех йĕпенсе, тăрăхларах питçăмартийĕсем тăрăх куççуль тумламĕсем йухса анчĕç.

Кăшт тăрсан, килхуçи арăмĕ кала пуçларĕ:

— ...Çапăçу иртсен, урама тухрăм. Никам та курăнмасť. Пурте тарса, пытанса пĕтнĕ. Аçта çитнĕ унта çын вилли çеç йăванса выртаť. Инçе те мар ача сасси илтĕнчĕ. Пырса пăхрăм—чăнах та ача! Санăн ачу иккен, кипкинчен палларăм. Астăватăн-и: хамăн кивĕ кĕпене панăччĕ епĕ сире кипке

тума?.. Пĕччен пулсан та пăхса ӳстертĕм. 18 çула çитрĕ ĕнтĕ,—тесе пĕтерчĕ карчăк.

Тамарă ачи çинчен куçне илмесĕр пăхать:

— Ашшĕ тĕслех—хура, йаштака пӳлĕ,—хăй тĕллĕн калаçса ларать Тамарă.

— Волотă, ачам! Епĕ сана халиччен каламанччĕ санăн аннӳ кам иккенне. Санăн тăван аннӳ ак çак пулать ĕнтĕ. Вăл сана çуратнă, епĕ—пăхса ӳстернĕ,—терĕ килхуçи арăмĕ.

— Волотă!—тепĕр хут ыталаса чуптурĕ Тамарă хăйĕн ывăлне.

— Ну, ан йĕр, анне. Пулнă та иртнĕ. Халĕ ĕнтĕ урăх вăхăт,—куççулĕпе шывланнă амăшĕн куçĕсене шăлса типĕтрĕ Волотă.

„Анне“ сăмаха илтсен, Тамарăн хуçăлнă кăмăлĕ тулчĕ.

„Анне! Анне!“ Мĕн тери вăл паха та сиплĕхлĕ сăмах,—хĕвел пек ăшăтакан сăмах!

---

# ÇĂЛТĂРЛĂ ÇĔЛĔК

I

Çула. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ çитнĕ. Уйра тырă ĕлкĕрет. Вăрманта тĕрлĕ çырла пиçет. Йĕри-тавра тĕрлĕ кайăк-кĕшĕксем йурласа савăнаççĕ.

— Ентри ачам. Вăрмана кайса, хăмла çырли татса килсе çитерсен, тен кăшт çăмăлтарах пулмĕччĕ-и мана,—терĕ Ентрийе иккĕмĕш уйăх сивĕ тытнипе аптăраса ӳкнĕ амăшĕ—Пăлаки.

— Йурĕ, анне, кайса килĕп,—терĕ Ентри килĕшсе.

Çапла вăл, Ентри, мĕн пĕчĕкренех амăшĕн сăмахне итлет. Амăшĕ мĕн хушнă—хуť хăçан та пурне те тума хатĕр.

Ентри çур витре кĕрекен ленкес илчĕ. Унтан, пĕр чĕлĕ çăкăр касса кĕсйине чикрĕ те, вăрманала тухса утрĕ.

Çынран çӳлĕ хăмла çырли аври хушшинче, пуçпӳрне пек шултăра, тин пиçсе çитнĕ çырласене ывăçăн-ывăçăн татса ленкесне йараť. Çырла татнă май йурлаť:

Ан кашла, вăрман, ан кашла,
Çулçу час тăкăнĕ.
Ан авăт, куккук, ан авăт,
Сассу час тытăнĕ...

Сасартăк, инçе те мар, пĕр çын шик! шăхăрни илтĕнчĕ. „Ман пек хăмла çырли татма килнĕ çынсем татах пур-ха кунта. Хăрушă мар",—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Ентри. Унтан çын шăхăрнă йенне утрĕ:

— Ей, кам унта? Кил кунтала!—тесе кăшкăрчĕ.

Хăмла çырли аврисене хумхантарса, Ентри умне хĕрлĕ çăлтăрлă шĕвреке çĕлĕк тăхăннă, аллине кĕске пăшал тытнă сухаллă çын пырса тухрĕ.

— Мĕн пĕр пĕчченех вăрман варринче кăшкăрса çӳретĕн, ачам? Хăрама пĕлместĕн-и?—терĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăннă çын.

Ентри, пăшаллă çынна курсан, кăшт хăраса ӳкрĕ, кайала чакма пуçларĕ. Кăкăрĕнчи чĕри кăрт-кăрт сикет. Çанçурăмĕ шăннă пек пулчĕ. Анчах çавах та хăй, нимĕн шутласа тăмасăрах:

— Курмастăн-им, хăмла çырли тататăп,— тесе хучĕ.

— Ленкес йăтса çӳренине куратăп та-ха. Пĕр пĕччен{}скерне упа тытса çийесрен хăрамастăн-им?—терĕ пăшаллă çын, ăшшăн йăлкăшса.

Ентри, хăй пĕчĕк пулсан та, пăшаллă сын усал мар, ырă кăмăллă иккенне чухласа илчĕ. Çавăнпа хăйуланса çитрĕ:

— Епĕ упаран хăрамастăп, вăл мана тивмест. Тиве пуçласан, йăвăç тăррине улăхатăп та ларатăп,—терĕ вăл паттăрланса.

— Ак, йепле хăйулă ача! Упаран та хăрамастăн. Хăш йал ачи пулатăн есĕ?—тесе йăпатса ыйтрĕ шĕвреке çĕлĕклĕ сын.

— Епĕ Кедровкă йалĕнчен.

— Кам ывăлĕ? Мĕн йатлă есĕ?

— Салтак арăмĕ Пăлаки ачи. Ентри.

— Аçу пур-и? Мĕн йатлă?

— Атте?.. Атте Куçма йатлă пулнă. Пилĕк çул ĕнтĕ вăл çукки. Вăрçа кайнăранпа таврăнман. Пĕлместпĕр: те пур, те çук,— таврăнмасť. Çыру та килмест,—терĕ Ентри хуллен.

— Апла есĕр аннĕрпе иксĕр çеç пурăнатăр?

— Виççĕн. Манăн йăмăк пур тата.

— Шкула вĕренме çӳретĕн-и?

— Виççĕмĕш классра вĕренетĕп.

— Ку аван вара. Сирĕн йала салтаксем пырса çӳреççĕ-и?—ыйтрĕ пăшаллă сын.

— Мĕнле салтаксем?—тĕлĕнчĕ Ентри.

— Ну, хĕрлисем йе шуррисем...

Ентри пăшаллă сын куçĕсенчен тинкерсе пăхрĕ.

— Хӗрлисене курман, пӗлместӗп, тем тӗслӗ вӗсем. Шуррисем час-часах пырса ҫӳреҫҫӗ. Есӗ ху кам пулатӑн, пичче? Хӗрлисен-и, шуррисен-и?—ыйтрӗ Ентри.

— Палла,—терӗ пӑшаллӑ ҫын, йӑл кулса.

Ентри кӑшт шухӑшласа пӑхса тӑчӗ:

— Паллаймастӑп. Епӗ халиччен сан пек хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ шӗвреке тӑрӑлӑ ҫӗлӗк тӑхӑннӑ салтак курман. Пирӗн йала чехсем те пыраҫҫӗ те, вӗсен ҫӗлӗкӗсем капла мар. Ытти салтаксем картуспа ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ. Ух, усалскерсем! Пирӗн анне ҫавсем пиркийех хӑраса чире кайрӗ,—терӗ Ентри унӑн-кунӑн пӑхкаласа.

— Ӑҫтан пӗлетӗн есӗ, тен епӗ те усал пулӗ?

— Ҫук, пичче, есӗ усал мар.

— Аннӳ салтаксенчен хӑраса чире кайрӗ тетӗн? Мӗнле чирпе аптӑрат?—ыйтрӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗклӗ ҫын.

— Сивӗ тытат. Пӗрре ҫапла йала салтаксем пычӗҫ те, аннене хӑйсем патне чӗнтерсе, атте ӑҫта ҫӳренине ыйтса тӗпченӗ. Ҫавӑнтан тавӑрӑнсанах аптӑраса ӳкрӗ. Халӗ ӗнтӗ нимпе те иртсе каймаст. Кашни кун ик-виҫ хутчен аптӑраса ӳкет. Пайан мана: хӑмла ҫырли ҫисен кӑшт ҫӑмӑлтарах пулмӗ-ши тесе, ҫырлана йачӗ,—тесе пӗлтерчӗ Ентри амӑшӗ ҫинчен.

— Ех, сволăчсем!—тесе хăй тĕллĕн каласса илчĕ пашаллă çын. Унтан Ентри çине пăхса:

— Аçăр ăçта çӳренине аннĕр те пĕлмест-и?—тесе ыйтрĕ.

— Çук. Те вилнĕ, те чĕрĕ! Пичче, калаха: мĕне пĕлтерет вăл сан çĕлĕк çумĕнчи пилĕк йӳплĕ çăлтăр?—ыйтрĕ Ентри.

— Ах, йепле ăслă есĕ, пурне те пĕлесшĕн тăрăшатăн! Хĕрлĕ çăлтăр вăл—пирĕн Хĕрлĕ çар салтакĕсен палли.

Ентри пăртак шухăшласа тăчĕ:

— Пичче, есĕ вара хĕрлисен салтакĕ пулатăн-и?!—кăшкăрса йачĕ вăл хумханнă сасăпа.

Пăшаллă çын ним те каламарĕ, сухалпа хупланса тăракан тутисене çеç йăл култарчĕ.

Ентри куçĕсем чалăрса кайрĕç.

— Пичче, пар-ха, епĕ сан çăлтăрлă çĕлĕкне тăхăнса пăхам. Мана килĕшет-и?—тесе йăлăнса ыйтрĕ.

— Çук, ку çĕлĕке сана тăхăнма йурамасҭ-ха.

— Мĕншĕн?—кăмăлсăр пулчĕ Ентри.

— Пĕчĕккĕ-ха есĕ.

— Пĕчĕккĕ? Вуникĕ çулта ĕнтĕ епĕ. Тата пилĕк çултан каччă пулатăн, тет мана анне,—хĕпĕртесе ӳкрĕ Ентри.

— Ха-ха-ха! Каччă! Ну, йурĕ еппин. Епĕ сана пĕр ĕç хушам. Çавна тусассăн, çак

çăлтăрлă çĕлĕке тăхăнтарса пăхтаратăп, — терĕ пăшалла çын, савăнăçлăн кулса.

— Мĕн ĕç хушатăн? Итлетĕп,—хĕпĕртесе ӳкрĕ Ентри.

— Пирĕн отрйад кунтан инçе. Епĕ кунта ĕçпе килтĕм. Пайан çимен. Манăн çийес килет. Есĕ йала кайса çăкăр илсе килме пултаратăн-и? Епĕ сана укçа паратăп. Çийĕнчен тата хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕке тăхăнтарса кăтартăп,—терĕ пăшаллă çын.

— Манăн кунтах пĕр чĕлĕ çăкăр пур, ме, пичче, çи,—терĕ Ентри.

— Тавтапуç!—терĕ пăшаллă çын. Вăл çавăнтах çăкăра пысăккăн çыртса илсе чăмла пуçларĕ.

— Пичче, епĕ сана çăкăр патăм, çăлтăрлă çĕлĕкне тăхăнтарса пăхтар ĕнтĕ, — тесе йăлăнчĕ Ентри.

— Ме, тăхăнса пăх,—терĕ пăшаллă çын, пуçĕнчи çĕлĕкне хывса парса.

Ентрин тинех кăмăл тулчĕ. Вăл нихăçан та кун пек савăнса курман. Нумай пулмасť амăшĕ çĕнĕ кĕпе çĕлесе панăччĕ, ăна тăхăнсан та кун чухлĕ хĕпĕртемен. Кĕпе вăл мĕн? Ăна мĕн çуралнăранпах тăхăннă. Ак ку çăлтăрлă çĕлĕке пирвайхи хут тăхăнса кураť.

— Килĕшет-и, пичче?—тесе ыйтаť Ентри.

— Калама çук килĕшет,—терĕ пăшаллă çын мухтаса.

Халĕ ĕнтĕ Ентрин çĕлĕке тăхăнса пăхас çеç мар, ăна пĕтĕмпех хăйне ваљљи илес килсе кайрĕ:

— Пичче, сут есĕ ку çĕлĕке мана,—тесе персе йачĕ Ентри.

— Ай-йай, йепле апла есĕ?!. Çук, ăна сутма йурамасť. Есĕ епĕ каланине итлесен, ахалех пама пултаратăп. Кай йала, çăкăр илсе кил. Епĕ хама ваљљи çеç мар вĕт ыйтатăп, манăн тата йулташсем пур, вĕсен те çийес килет,— терĕ пăшаллă çын илĕртсе.

— Халех кайса илсе килетĕп, пичче. Çăкăр илсе килсен, вара, ку çăлтăрлă çĕлĕкне мана пуçĕпех паратăн?—хĕпĕртесе ўкрĕ Ентри.

— Кайса илсе кил малтан. Унтан курăпăр. Ме укçа,—пăшаллă çын кĕсйинчен пĕр ывăç укçа кăларса пачĕ.

— Епĕ халех. Есĕ, пичче, ниçта та ан кай, çак вырăнтах кĕтсе тăр,—терĕ Ентри.

Акă вăл укçана илсе кĕсйине чикрĕ те, пуçĕнчи çăлтăрлă çĕлĕкне хывса парса, йал йеннеле вĕçнĕ пек чупрĕ. Унăн хыçĕнче хăмла çырли аврисем çеç хумханса ларса йулчĕç.

## II

Йала çитсен, Ентри амăшĕн куçне курăнмарĕ. Унта кĕрсен те, пурĕпĕр çăкăр çук. Хăйсем те выçăлă-тутăлă çеç пурăнаççĕ.

Çавăнпа вăл тӳрех анкарти урлă каçса, кӳршинчи хăйĕнчен икĕ çул кĕçĕн Куçтăна курчĕ:

— Куçтă, сан канхвит çийес килмест-и? тесе ыйтрĕ.

— Çийес килет те, илсе çиме укçа çук.

— Епĕ сана укçа паратăп. Акă манăн мĕн чухлĕ укçа!—тесе, кĕсйинчен пĕр ывăç укçа туртса кăларчĕ Ентри.

— Пар,—савăнăçлăн аллине чăсрĕ Куçтă укçа йеннеле.

Ентри укçине калле кăштăрт кĕсйине чиксе хучĕ те:

— Ху мĕн парăн?—тесе ыйтрĕ.

— Мĕн парас ман,—терĕ Куçтă, кăмăлсăр пулса.

— Пĕр çăкăр пар, çĕр тенкĕ укçа паратăп. Çĕр тенкĕпе лавкара пĕр кĕренке канхвит параççĕ,—терĕ Ентри Куçтăна илĕртсе.

Çакăн хыççăн Куçтă ирĕлсех кайрĕ.

— Суймастăн-и?

— Ма суйас ман сана. Çăкăрна илсе тух Халех укçа парап. Акă вăл,—Ентри каллех кĕсйинчен укçа туртса кăларчĕ.

— Епĕ халех.—Куçтă хăйсен лаççине чупса кĕрсе, амăшĕнчен вăрттăн, пĕр çăкăр йăтса пычĕ:

— Ме... Пар укçана.

Ентри, ним каламасăр, Куçтăна çĕр тенкĕ укçа пачĕ. Унтан:

— Чуп, ытти ачасене те кала. Канхвит ҫийесси килсен, ҫăкăр илсе килччĕр ман пата. Епĕ ав унта, мунча хыҫĕнче кĕтсе ларăп,—терĕ.

Куҫт̆а укҫана илсе кĕсйине чикрĕ те урама чупса тухрĕ.

— Ей, ачасем! Килĕр-ха кунта, пĕр сăмах калам,—кăшкăрчĕ.

Ҫавăнтах Куҫт̆а патне виҫĕ ача чупса ҫитрĕҫ:

— Мĕн сăмах? Кала хăвăртрах!—васкатаҫҫĕ.

— Сирĕн канхвит ҫийес килет-и?—терĕ Куҫт̆а. Хăй, ытти ачасем ан илтчĕр тесе, унтала-кунтала пăхкалат̆.

— Ăҫта канхвичĕ?—виҫҫĕш харăс кăшкăрса илчĕҫ.

— Ав унта, пирĕн мунча хыҫĕнче Ентри ларат̆. Вăл укҫала ҫăкăр илет,—тесе пӳрнипе чăсса кăтартрĕ Куҫт̆а.

— Суйатăн!

— Ма суйас. Ак, епĕ пĕр ҫăкăр патăм та, вăл мана ҫĕр тенкĕ укҫа пачĕ.—Куҫт̆а кĕсйинчи укҫине кăларса кăтартрĕ.

— Чăнах та!—харăс кăшкăрса йачĕҫ ачасем. Ĕненчĕҫ.

— Епĕ те пĕр ҫăкăр кайса сутатăп,—терĕ пĕр ачи.

— Епĕ те,—терĕ тепри.

— Епĕ те,—кăшкăрчĕ виҫҫĕмĕш.

Çавăнтах виççĕшĕ те виçĕ май чупрĕç. Куçта лавка йеннеле канхвит илме вĕçтерчĕ.

Çур сехет иртсен, Ентри тăватă çăкăр йăтса, вăрманала кĕрсе кайрĕ.

Çав кунах лавкаçă Çимун ачасене сакăр кĕренке канхвит сутрĕ. Нихăçан капла пулман, хăй те тĕлĕнсе кайрĕ: „Ăçтан тупаççĕ ку ачасем укçа?"—тесе шухăшларĕ. Анчах никам та шарламарĕ.

Ентри мекĕрленсе, çăкăрсене аран йăтса çитерчĕ. Ахаљ те шăрăх. Хаљ мунча кĕнĕ пекех чăм шыва ӳкрĕ. Питçăмартийĕсем тăрăх пăрçа пĕрчи пек шултăра тар пĕрчисем кусса анаççĕ.

Пăшаллă çын, Ентри мекĕрленсе йăтса пынине курсан, ăна хирĕç пырса, çăкăр миххине хăй çине илсе хучĕ.

— Ах, йепле вăйлă есĕ, ачам! Тăватă çăкăр йăтса çитертĕн!—тесе мухтарĕ. „Ачам" сăмах Ентрийĕн чĕри çумне çу пек çыпăçса ларчĕ. Вăл пăшаллă çынна пушшех йуратрĕ:

— Укçа пĕтрĕ. Епĕ тата пилĕк çăкăр йăтса çитернĕ пулăттăм,—терĕ Ентри кăшт мухтанса.

— Есĕ вара епĕ панă укçапа илтĕн-им ку çăкăрсене?—ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Вара. Пирĕн хамăрăн çăкăр çук çав. Кашни çăкăрне çĕршер тенкĕ патăм,—тесе пĕлгерчĕ Ентри.

— Ну, йурĕ, ывăнтăн пуль. Аҫта ларса канар,—терĕ пăшаллă ҫын Ентрийе ачашласа.

Иккĕшĕ хире-хирĕҫ пăхса ларчĕҫ.

— Пичче, епĕ есĕ хушнине турăм. Ҫăлтăрлă ҫĕлĕкне паратăн-и ĕнтĕ?—терĕ Ентри йăлăнса.

— Ме, тăхăнса лар. Анчах, епĕ ăна халĕ сана киле парса йамастăп. Хăҫан епĕр, хĕрлисем, шуррисене ҫĕнтеретпĕр, ҫавăн чухне вара ăна сана пуҫĕпех парăп. Килĕшетĕн-и?—терĕ пăшаллă ҫын, Ентрийе ҫăлтăрлă ҫĕлĕкне тăхăнтарса.

Ентри пĕр вăхăта кăмăлсăр пулса ларчĕ. Унтан пăшаллă ҫын куҫĕнчен пăхса:

— Хăҫан-ха есĕр вĕсене ҫĕнтеретĕр?—терĕ.

— Вăрах мар ĕнтĕ. Нумай пулсан тата тепĕр икĕ уйăх. Вара есĕ ҫак ҫăлтăрлă ҫĕлĕке тăхăнса ҫӳрĕн,—терĕ пăшаллă ҫын, Ентрийе ҫурăмĕнчен лăп-лăп ҫупăрласа.

Ентрин кăмăлĕ тулнă пек пулчĕ. Ун хăйĕн те шуррисемпе хирĕҫ тăрса ҫапăҫасси килчĕ.

— Пичче, епĕ те сирĕнпе пырам-и?..

Пăшаллă ҫын кăшт шухăша кайса ларчĕ. Унтан:

— Ҫамрăк-ха есĕ, ачам. Тата аннӳ чирлĕ тетĕн. Ăна пăхас пулаҫ. Есĕ пирĕн пата пымасăрах пире пулăшма пултаратăн. Пайанхи пек ҫăкăр илсе килĕн. Йала шуррисем пырсан, вĕсем ҫинчен пире пĕлтерсе тăрăн. Йураҫ-и?—терĕ пашаллă ҫын йăпатса.

Ентри апла та, капла та хатĕр:

— Йурĕ. Анчах есĕ вара анултала, пичче. Шуррисене çĕнтерсенех, çак çăлтăрлă çĕлĕкне пар,—терĕ килĕшсе.

— Обйазатĕлнă паратăп, — терĕ пăшаллă çын татса.

Çапла калаçса ларнă çĕртех, вĕсем хăйсем те сисмен, сасартăк:

— Стой!.. Руки вверх! - кăшкăрчĕ пĕр сасă.

Пăшаллă çын, такам вĕри шывпа сапнă пек пулнăскер, сиксе тăрса, айăккала, хăмла çырли аври хушшинеле кĕрсе кайса курăнми пулчĕ.

Ентрийе курмарĕç пулас. Вăл ларса йулчĕ. Ун умĕнчен шуррисен салтакĕсем, пăшалĕсене перес пек хатĕр тытса, тапăлтатса чупса иртсе кайрĕç:

— Тыт!—кăшкăрса йачĕç.

Ентри мĕн иккенне чухласа илчĕ. Пуçĕнчи çăлтăрлă çĕлĕкне хывса аллине тытрĕ те, тăвата уран упаленсе, çӳлĕ курăк хушшинеле кĕрсе ларчĕ. Çавăнтах пăшал сассисем ух! ух! кĕрле пуçларĕç.

Чылай упаленсен, Ентри, ура çине тăрса, çăлтăрлă çĕлĕкне тăхăнса чупрĕ. Пăшаллă çынна хĕрхенчĕ: „Ых, тăшмансем! Персе вĕлерчĕç пулĕ“, тесе шухăшларĕ. Кăмăлĕ хуçăлнипе куçĕсем шывланчĕç. Калла çавăрăнма тăчĕ, анчах хăрарĕ. Çавăнтах унăн

пуҫӗ урлӑ икӗ ҫӑхан лапӑстатса вӗҫсе иртсе кайрӗҫ.

III

Ентри килне хашкаса чупса ҫитрӗ. Амӑшӗ курчӗ.

— Ара, ачам! Мӗнле тӗнчере ҫук ҫӗлӗк тупса тӑхӑнтӑн?! Кам пачӗ? Ӑҫтан илтӗн?— тӗлӗнсе кайрӗ амӑшӗ.

Чӑнах та тӗлӗнмеле ҫав. Кун пек шӗвреке тӑрӑлӑ, ҫамки ҫинче хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗке йалта никам та курман, мӗншӗн тесен халиччен йалта хӗрлисен партизан отрйачӗ пулман. Пӗр шуррисем ҫеҫ кунта ирӗккӗн асса ҫӳреҫҫӗ. Анчах вӗсен салтакӗсем картус тӑхӑнаҫҫӗ. Ентри ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗкне камран илнине амӑшне каламарӗ. Вӑрманта, хӑмла ҫырли татнӑ ҫӗрте, кампа курса калаҫнине те шарламарӗ.

— Вӑрмантан тухнӑ чух ҫул ҫинче тупрӑм,- тесе суйрӗ вӑл.

Амӑшӗ, ывӑлӗ чӑнах калаť пуљ тесе, ӗненчӗ:

— Ачам, ҫырлу ӑҫта вара?—тесе ыйтрӗ.

Ентри тинех хӑй ленкесне пӑрахса хӑварнине астуса илчӗ.

Ентри вӑрмантан ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗк тупса таврӑннине йалти ача-пӑчасем те часах пӗлчӗҫ. Вӗсем ҫавӑнтах Ентри ҫӗлӗкне курма чупса пыра пуҫларӗҫ:

— Ăçтан тупрăн?..

— Кам пачĕ?—тесе пĕрне пĕри ăмăртса ыйтаççĕ вĕсем.

Ентри ача-пăчасене те, амăшне калана пекех:

— Вăрмантан тухнă чух çул çинче тупрăм,—тесе суйрĕ.

Лешсем шалт тĕлĕнеççĕ. Хăшĕ ĕненеççĕ, хăшĕсем иккĕленеççĕ.

— Айтăр епĕр те кайса шырар. Тен татах пур пулĕ унта ун пек çăлтăрлă çĕлĕк!

— Суйаť вăл. Кам пăрахса хăвартăр çул çине çăлтăрлă çĕлĕк,—тесе пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ.

Ентри çăлтăрлă çĕлĕк тупса таврăнни часах пĕтĕм йал тăрăх сарăлчĕ. Ача-пăчасем пуçтараннине кура, çитĕннĕ çынсем те пыра пуçларĕç. Ентрийĕн çăлтăрлă çĕлĕкĕ çине тĕлĕнсе пăхаççĕ:

— Йепле чаплă çĕлĕк! Сутăн илес тесен, пин тенкĕ те тăраť пулĕ ку!—тесе мăкăр-мăкăр калаçаççĕ пĕр-пĕринпе.

Ентри çынсем хушшинче хăйне хăй паттăрла тыткалаť.

— Кайăр, ачасем, кайăр. Шырăр. Тен есĕр те ман пек çăлтăрлă çĕлĕк тупăр,—тесе кăтартаť çĕлĕке ачасене.

— Айтăр, кайатпăр,—кăшкăрашаççĕ ачасем. Вĕсем кун пек çăлтăрлă çĕлĕкшĕн таçта кĕрсе кайма та хатĕрех.

Анчах та, çăлтăрлă çĕлĕк таврашĕнчи савăнăç вăраха пымарĕ. Сасартăк:

– Йала шуррисен килнĕ!—тенĕ хыпар йантăраса кайрĕ

Çăлтарлă çĕлĕк курма пынă çынсем, кĕтĕве кашкăр пырса кĕнĕ чух сурăхсем тапса сикнĕ пек, тĕрлĕ май, чăл та пар! çеç саланса пĕтрĕç. Пÿрт умĕнче Ентрипе амăшĕ çеç тăрса йулчĕç.

— Ачам, пытар çĕлĕкне! Тем курса тăрăпăр,—теме çеç ĕлкĕрчĕ амăшĕ. Çавăнтах икĕ салтак Ентрийе çулăхса та илчĕç.

— Ăçтан тупрăн ку çĕлĕке? Кам пачĕ?—тĕпчеççĕ вĕсем.

— Вăрманта хăмла çырли татса çÿретĕп. Пĕр пысăк тунката патне пырса тухрăм. Пăхатăп, тунката тăрринче çак çĕлĕк лара парат. Епĕ ăна малтанах кăмпа тесе. Тытса пăхрăм. Çĕлĕк пулчĕ тăчĕ. Тăхăнтăм та киле таврăнтăм,—терĕ Ентри йуптарса.

— Ах, манка чăпти. Йепле вăл суйма пĕлет. Пар çĕлĕкне!—пĕр салтакĕ Ентри пуçĕнчи çăлтăрлă çĕлĕке хывса илме тăчĕ.

— Кай, санăн мар вăл. Памастăп.—Салтака чышса йачĕ Ентри.

— А-а... Есĕ манпа тавлашма-и-ха? Ак сана!—пĕтĕм вăйĕпе Ентрийе пуçĕнчен чышкипе çапса йачĕ салтак.

Ентри çĕр çумне хутланса анчĕ.

— Ой!—йăвăррăн йăнăшса йачĕ вăл. Унăн сăнĕ пĕрре хуралса, тепре шуралса кайрĕ.

— Мĕн кунта асапланмала унпа. Айта штаба илсе кайар. Унта тĕпчесе пĕлĕç,— терĕ тепĕр салтакĕ. Çавăнтах салтаксем Ентрийе хулĕсенчен йăтса тăратрĕç. Унăн сăмсинчен кĕрлесех йун йуха пуçларĕ.

— Ара, пысăк пуçăрпа мĕншĕн есĕр ачана хĕнетĕр?! Мĕн айăп турĕ вăл? Кайăр, ан тивĕр!—чупса çитсе, ывăлне салтаксен аллинчен туртса илесшĕн пулчĕ Пăлаки.

— Кай, ватă кăркка!—Пĕр салтакĕ Пăлакийе чышса йачĕ.

Икĕ уйăх хушши сивĕ тытнипе вăйĕ пĕтнĕ Пăлаки, сулăнса, месерле кайса ӳкрĕ.

Салтаксем Ентрийе, кашкăрсем сурăх путеккине тытнă пек турткаласа, штаба сĕтĕрсе кайрĕç.

— Ой! Ачана ăçта илсе кайатăр?!—кăшкăрса, çапкалашса выртса йулчĕ Пăлаки. Унтан, ура çине тăрса, ӳсĕр çын пек тайкаланса, пӳртне кĕрсе кайрĕ.

## IV

Салтаксем Ентрийе штаба сĕтĕрсе кĕчĕç. Хĕнесе пĕтернĕ пирки вăл аран сулланкаласа тăрат. Сăмси-çăварĕ, кĕпи-йĕмĕ чĕп-чĕрĕ йунпа пĕвеннĕ.

— Вашескороди! Акă епĕр красноармейĕц çĕлĕкне тăхăнса çӳрекен ача тытса килтĕмĕр,—тесе пĕлтерчĕ пĕр салтакĕ. Тепĕр салтакĕ Ентрийĕн çăлтăрлă çĕлĕкне сĕтел çине пырса хучĕ:

— Акă, вашескороди, çĕлĕкĕ.

Хурчăка пек курпун сăмсалă, урлă мăйăхлă, кукша пуçлă полковник пĕрре çăлтăрлă çĕлĕк çине, тепре сулланкаласа тăракан Ентри çине пăхса илчĕ те:

— Ăçтан илтĕн ку çĕлĕке есĕ? Кам пачĕ?— шăлне çыртса ыйтрĕ.

— Вăрмантан тупса тавăрăнтăм,—кĕскен ответлерĕ Ентри, йунлă сурчăкне çăтса йанă хыççăн.

Полковник Ентри çине тепĕр хут шăтарса пăхрĕ.

— Кам пăрахса хăварнă вара ăна?—ыйтрĕ вăл.

— Пĕлместĕп,—пуçне пăркаларĕ Ентри.

Полковник ура çине тăрса, каллĕ-маллĕ уткаласа çавăрăнчĕ. Унтан Ентри умне пырса тăрса:

— Хм, пĕлместĕн? Кала-ха, есĕ камсене йурататăн: пире-и, йе хĕрлисене-и?

Ентри пуçĕ тавра шухăшласа илчĕ те:

— Никама та йуратмастăп,—терĕ.

— Апла никама та йуратмастăн? А, мĕншĕн-ха есĕ çак çĕлĕке тăхăнса çӳретĕн?

Ентри каллех пуçĕ тавра шухăшласа илчĕ те:

— Хĕрлĕ çăлтăрлă вăл. Çавăнпа епĕ ăна йуратса тăхăнатăп,—терĕ Ентри татса.

— А-а-а... Ав, мĕншĕн! Есĕ унăн çăлтăрне йурататăн?—тăрăхласа, лăх-лăх-лăх кулчĕ полковник...

— Вара, çăлтăрĕшĕн йурататăп,—терĕ Ентри çирĕплетсе.

Полковник тепĕр хут пӳлĕм тавра уткаласа çавăрăнчĕ те:

— Илтетĕр-и: хĕрлĕ çăлтăрне йуратаť вăл. Илсе тухса, çак çĕлĕк çумĕнчи çăлтăра хăпăтса илĕр те, ăна çамки çумне йĕппе çĕлесе лартăр,—терĕ полковник салтаксем çине пăхса.

— Рады старатсă, ваше высокороди!—иккĕш те харăс кăшкăрса йачĕç салтаксем.

— Унтан мукаçей кĕлетне хупса лартăр. Пайан ман вăхăт çук. Ыран ыйтса тĕпчĕпĕр,—терĕ полковник.

— Итлетпĕр, ваше высокороди!—тесе кăшкăрса йачĕç салтаксем. Унтан Ентрийе илсе тухма тăчĕç.

Шăп çав вăхăтра тата икĕ салтак тепĕр çынна штаба илсе пырса кĕчĕç.

Ентри пуçне çĕклесе пăхрĕ. Вăл хăй умĕнче, хай вăрманта курса калаçнă, çăлтăрлă çĕлĕк тăхăнтарнă пăшаллă çынна курчĕ:

„Пичче!“ тесе кăшкăрма тăчĕ. Анчах, пырĕ тĕпне темскер çитсе капланнипе, сасси тухмарĕ. Çавăнтах ăна салтаксем сĕтĕркелесе тухса кайрĕç. Çăлтăрлă çĕлĕк панă çын Ентри çине çаврăнса пăхса йулчĕ: „Ку ача та тыткăнра мĕн!“ тесе шухăшларĕ вăл.

— Ут малала! Мĕн, паллакан ача-им, пит тинкерсе пăхатăн?—тесе çурăмĕнчен чышрĕ салтак.

Партизан малала утрĕ.

* * *

Каç пулчĕ. Çанталăка касхи кăвак сăн хупласа илчĕ.

Салтаксем Ентрийе кĕттермерĕç. Çĕлĕкне çуркаласа, ун çинчи çăлтăрне хăйпăтса илчĕç. Унтан ăна Ентрийĕн çамки çине хурса виçсе пăхрĕç:

— Шăп кĕрсе ларать. Ха-ха-ха!—ахăлтатса кулчĕç.

Ентри малала мĕн пуласса кĕтет. Çăлтăрлă çĕлĕкне çуркаласа пĕтернĕшĕн чĕри çав тери хурланать. Мел пулсан, салтаксене тем туса тăкĕччĕ. Анчах ним тума та вăйĕ çук. Ентри çамрăк—вуникĕ çулхи ача. Салтаксем ватă, мăйăх сухаллăскерсем. Тата вĕсем хĕçпăшаллă. Ентрийĕн нимĕн те çук, пушă алăсем çеç. Мĕнле намăс мар-ши вĕсене

тути ҫинчен амăш сĕчĕ типмен ачана асаплантарма!?

— Ну, ачам, тӳс! Тӳссен атаман пулăн,— терĕ пĕр салтакĕ, Ентрийĕн аллисене хыҫалала ҫавăрса тытса. Тепĕр салтакĕ пăйавпа ҫыхса хучĕ. Унтан полковник хушнине пурнăҫа кӳртме тытăнчĕҫ. Пĕр салтакĕ Ентрийе тытса тăрать, тепри пилĕк кĕтеслĕ ҫăлтăра Ентри ҫамкин тирĕ ҫумне йĕппе ҫĕлет.

Ентри, ыратнипе:

— Ой-ой-ой! – кăшкăра-кăшкăра йарать. Питҫăмартисем тăрăх шапăртатса вĕри йун тумламĕсем йухаҫҫĕ.

Салтак пĕр хĕрхенмесĕр, ҫиплĕ йĕпне Ентри ҫамки ҫинчи тир ăшне чиксе йарса, турта-турта кăларать.

— Ха-ха-ха! Ан хăра, ку ҫăлтăр ĕнтĕ ҫĕлĕк ҫумĕнче мар, ĕмĕрех ҫамку ҫинче ҫакăнса ҫӳрĕ,—тесе мăшкăлласа кулать салтак.

Сехет ытла салтаксем Ентрийе асаплантарчĕҫ. Унтан Ентри сасси лăпланчĕ. Йун нумай кайнипе пĕр вăхăта унăн ăнĕ те ҫухалчĕ. Малала мĕн пулнă, урăх вара астумасть. Хăйне тĕлĕкри пек ҫеҫ туйать.

## V

Вăрах-и, сахал-и вăхăт иртсен, ҫамки ҫинчи суранĕ пĕҫертсе ыратнипе тата ҫунса кайас пек ĕҫес килнипе, Ентрин ăнĕ ҫитсе

кĕрет. Ака вăл, йун кĕвелсе хытса ларнине, куçĕсене аран-аран аллисемпе тăрмаласа уçрĕ. Пăхать: йĕри-тавра сĕм тĕттĕм, ним те курăнмасть. Пĕр вырăнта çеç кăшт шăши вучĕ пек çутă курăнать. „Ăçта-ши епĕ? Чăн-ши ку йе тĕлĕкре-ши?“ тесе шухăшларĕ. Çук, тĕлĕк мар, чăн! Хĕнесе пĕтернипе пĕтĕм çанçурăмĕ чикĕшсе ыратать. Çăвар ăшĕ типсе ларнă, чĕлхи хускалмасть. Ура çине тăчĕ. Йĕри-тавра çтена. Чухларĕ. Хăйне офицер „Мукаçей кĕлетне хупса лартăр“ тенине асне илчĕ. Çунса кайасла ĕçес килет, пыр тĕпĕнчен ват пек йўçĕ тухать. Кăмăлĕ пăтранать. Çăлтăрлă çĕлĕк панă çынна асне илчĕ. „Ăна мĕн турĕç-ши? Ăçта хучĕç-ши?“ тесе шухăшларĕ. Çутă кĕрекен кĕлет алăкĕн шăтăкĕнчен пырса пăхрĕ. Курать: алăк умĕнче пĕр пăшаллă салтак хурал тăрать.

Итлет. Йалта йытăсем, йала кашкăр çитсе кĕнĕ чухнехи пек, хайар сасăпа уласа вĕреççĕ. Хĕрарăмсем çуйăхаççĕ. Ача-пăчасем ĕсĕклесе йĕреççĕ. Пĕр çын таçта „разбой!“ кăшкăрать. „Ăçтан, мĕнле тухса тарас?“ — шухăшларĕ Ентри. Çав вăхăтрах тĕттĕм кĕлетĕн кĕтессинче пĕр çын йăвăррăн сывласа:

— Ох, тăшмансем! — тесе йăнăшса илчĕ.

Ентри, аллипе хыпаласа, çынна тупрĕ:

— Пичче, пичче! Кам пулатăн есĕ? — тесе пăшăлтатрĕ.

— Епĕ... епĕ... пăлламастăн пулĕ,—терĕ çын хуллен.

Ентри ку çынна сасси тăрăх часах палласа илчĕ. Вăл хайхи тыткăна лекнĕ хĕрлĕ партизан—хăй вăрманта тĕл пулнă тата çăкăр леççе панă партизан пулнине пĕлчĕ. Çавăнпа та вăл хумханса, хыпăнса ўкрĕ.

— Пичче! Есĕçке ку, паллатăп,—хăй те сисмерĕ, чуť кăшкăрса йараťчĕ Ентри.

— Асту, ан шарла, ачам. Хурал тăракан салтак илтĕ,—терĕ партизан хуллен. Вĕсем пăшăлтатса калаçса илчĕç. Партизан Ентрийе палларĕ. Ăна, ыталаса илсе, çурăмĕнчен лăпкарĕ. Ентри хăйне ăсаплантарни çинчен каласа пачĕ. Хĕрлĕ партизан Ентри çамки çинчи çĕлесе лартнă хĕрлĕ çăлтăра хыпашласа пăхрĕ. Унăн чунĕ-чĕри вутпа çуннă пек пĕçерсе ыратса кайрĕ.

— Ы-ых, вĕсене!.. Урнă кашкăрсем... Хăçан тавăрăпăр çак мăшкăлсемшĕн! — терĕ хĕрлĕ партизан. Тарăхнипе вăл шăлĕсене шатăртаттарса илчĕ.

* * *

Тĕттĕм çĕр майĕпен шуса иртет.

— Ентри, мĕнле тухса тарас пирĕн ку кĕлетрен? -тесе пăшăлтатрĕ партизан.

Вăрах шухăшласа ларма вăхăт çук. Çутăл-

сӑнах, каллех асаплантарма пикенеççĕ. Аппа та, капла та пурĕпĕр вилĕм.

Ентри васкасах пӳлме çине улӑхса кайрĕ. Аллипе хыпаласа пӑхрĕ:

— Пичче, кĕлет тӑррине улӑмпа çеç витнĕ,—тесе пĕлтерчĕ.

— Шӑтар ӑна,—терĕ партизан.

Ентри çавӑнтах кĕлет тӑррине витнĕ улӑма шӑтарма пуçларĕ. Пилĕк минут иртсен, кĕлет тӑрринче çын тухмалӑх шӑтӑк хатĕр. Ентри пуçне кӑларса пӑхрĕ. Курать: хурал тӑракан салтак кĕлет çумне, пӑшалĕ çине тайӑнса тӑнӑ та тĕлĕрет.

— Ентри, епĕр иксĕмĕртен пĕри хӑтӑлма тивĕçлĕ. Есĕ, хӑтӑлсан, тӳрех вӑрмана, хамӑр курса калаçнӑ вырӑна чуп. Унтан инçе мар пĕр вар пур. Çав варта пирĕн партизан отрйачĕ тӑрать. Вĕсем епĕ тыткӑна лекнине пĕлмеççĕ. Йала кĕнĕ, тесе кĕтеççĕ. Çитсенех, кунти ĕççем çинчен каласа пар,—тесе пӑшӑлтатрĕ партизан.

— Йурĕ. Епĕ малтан тухам, есĕ кайран тух,—терĕ Ентри.

Акӑ вӑл шӑтӑкран кĕлет тӑрне тухрĕ. Йалта çавах шӑв-шав лӑпланмасть: йытӑсем вĕреççĕ, çынсем çуйӑхаççĕ, ӳсĕр салтаксем йурлаççĕ...

Ентри, хырӑмĕпе шуса, кĕлет кĕтесси тӑрӑх çĕре анчĕ. Салтак сисмест, çаплах

тĕлĕрет. Тен çăплипех тăрса йулаттчĕ. Анчах Ентри, урлă выртакан пĕрене çине такăнса, ÿкрĕ. Салтак айхинчен вăранчĕ:

— Стой! Кам килет!—кăшкăрса, пăшалне хатĕр тытрĕ.

Ентри сиксе тăчĕ те мĕн вăйĕ çитнĕ таран тапса сикрĕ.

— Стой!—тепĕр хут кăшкăрчĕ салтак. Ентри хыçĕнчен пăшалне кĕрслеттерсе йачĕ. Унтан ăна хăваласа, хыçран персе пыма пуçларĕ. Хуралçă салтак Ентрийе хуса кайнă вăхăтпа усă курса, партизан та кĕлет тăрринчен сиксе анса тарчĕ.

Салтак, Ентрийе хăваламa пăрахса, пăшалне чупса таракан партизан йеннеле кĕрлеттерсе йачĕ. Нимĕн те тăваймарĕ; партизан, çуртсем хушшинеле чупса кĕрсе, курăнми пулчĕ.

## VI

Ентри тÿрех вăрмана, партизанпа курса калаçнă вырăна чупрĕ. Вăл унта çитнĕ тĕле çулахи кĕске çĕр иртрĕ, шурăмпуç шуралса килчĕ.

Йĕри-тавра вăрман кашласа ларать. Тĕрлĕ кайăксем йантăратса йурлаççĕ. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ çитнĕ. Вĕсемшĕн савăнăç. Çав савăнăçпа илем хушшинче пичĕ-куçĕ, аманса, кăвакарса пĕтнĕ Ентри вар йеннеле

чупса пырать. Вăл пĕлмест: те хăтăлчĕ партизан, те çук... Чупсан-чупсан, чарăнса, кăшт сывлăш çавăрать те каллех чупать.

Сасартăк, ун умĕнче курăк чăштăр-чаштăр турĕ. Ентри чарăнса итлерĕ. Унтан пĕр иккĕ йарса пусрĕ. Курать: ун умне икĕ çурине йертнĕ упа ами лапăстатса пырса тухать. Упа ами, Ентрийе курсан, икĕ ура çине тăчĕ те ун йеннеле утса пырать.

Хăй о-о-о!.. мĕкĕрет.

Ентри, упана курсан, хăраса ӳкрĕ, кутăн-кутăн чакрĕ.

Упа мĕкĕрсе пĕрех Ентри çинеле кĕрет. Çурисем амăшĕ хыçĕнче чупкалаççĕ.

Ентри хăй те сисмерĕ:

— Ой!—кăшкăрса йачĕ. Йăвăç тăрне улăхса кайма тăчĕ. Вăйĕ çук. Ирĕксĕрех: „Шуррисен аллинчен хăтăлтăм, упа çăварне çитсе лекрĕм“,—тесе шухăшларĕ. Тепĕр хут хайаррăн кăшкăрса йачĕ.

Упа çывăхах пырса çитрĕ. Халех туртса çурма хатĕр. Анчах Ентри йăвăçăн тепĕр йенне пытанса тăчĕ.

Упа йăвăça малти урисемпе ыталаса тытрĕ. Çав вăхăтрах Ентри патне палламан çын, çăлтăрлă çĕлĕклĕ, винтовкă тытнă партизан пырса тухрĕ. Вăл тӳрех пăшалне хулпуççийĕ çумне тĕресе хучĕ те упана çамкинчен тĕллесе печĕ.

Упа, çавăнтах мĕкĕрсе йарса, месерле çаврăнса ӳкрĕ. Унăн çурисем, пăшал сасси илтĕнсенех, вăрман вĕтлĕхнеле тарса çухалчĕç.

Упа ӳксен, Ентри йăвăç хыçĕнчен тухрĕ.

— Ара, вăл упа сана тытасшăн мĕкĕретим?—тесе утса пычĕ винтовкăлă партизан.

— Пичче, йурат есĕ çитсе тухрăн. Унсăрăн вăл мана тытса çийетчĕ,—терĕ Ентри хăранă сассипе.

— Мĕншĕн, ача, есĕ йунланса пĕтнĕ? Вăл сана туларĕ-им?—ыйтрĕ партизан.

— Çук, мана упа мар... Епĕ шуррисен аллинчен тарса хăтăлтăм. Ак, вĕсем ман çамка çине сан çĕлĕкӳ çумĕнчи пек хĕрлĕ çăлтăра йĕппе çĕлесе лартрĕç,—терĕ Ентри. Унтан вăл ку ĕç мĕнле пулнине кĕскен, йĕркипе, каласа пачĕ.

— Ав мĕншĕн сана упа тапăннă! Есĕ йунлăран!— терĕ партизан. Унтан, хулпуççи урлă çакăнса тăракан сумкинчен шурă бинт кăларса, Ентрин суранне тирпейлесе çыхрĕ.

— Манпа пĕрле тепĕр партизан тыткăна лекнĕччĕ. Вăл те хăтăлчĕ, те çук,—тесе пĕлтерчĕ Ентри.

— Мĕнле партизан вăл?

— Сан пекех хĕрлĕ çăлтăрлă партизан. Вăл сирĕн отрйадран.

Ентрипе партизан çапла калаçса тăнă çĕре

хай хупнă çĕртен тухса тарнă партизан хашкаса чупса çитрĕ.

— Ах, аран тарса хăтăлтăм,—терĕ вăл сывлăшне çавăрса.—Аťăр ку вырăнтан. Унсăрăн вĕсем кунта мана йĕрлесе килме пултараççĕ,—терĕ тин çеç тарса хăтăлнă партизан.

Вĕсем, çавăнтах вăрман ăшнеле кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç.

Хĕвел хĕрелсе тухрĕ, унăн шевли вăрман çине ылттăн пек сарăлчĕ.

## VII

Хĕвел тухсанах, Пăлакийе сивĕ тытма пикенчĕ. Ăшăнасшăн пулса, вăл хăй çине темиçе хут тумтир витет. Çук, пулăшмасť. Пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сиксе чĕтрет. Шăлĕсем хире-хирĕç шак-шак шаккаççĕ.

Шăп çав вăхăтра унăн килне салтаксем чупса кĕреççĕ.

— Ывăлу ăçта?—кăшкăраççĕ вĕсем.

— Ăçтан пĕлем епĕ? Енер хăвăр тытса кайрăр вĕт! Çавăнтанпа киле таврăнман вăл,—тет вĕсене Пăлаки.

— Суйатăн! Вăл кĕлет тăррине шăтарса тухса тарнă. Пĕчĕкскер, килне таврăнмасăр, ăçта кайтăр? Тупса пар! Унсăрăн хăвнах йăвăр пулĕ,—тесе хăратаççĕ салтаксем.

— Акă, çут хĕвел! Вăл киле таврăнман. Суйатăп пулсан, çакăнтах çĕр çăттăр мана,—

тесе тилмĕрет Пăлаки Хăй, пĕрре сивĕ тытнипе, тепре хăранипе, сиксе ӳксе чĕтрет.

Салтаксем Пăлаки сăмахне ĕненмеççĕ. Пĕтĕм çуртне айĕн-çийĕн çаварса, Ентрийе шыраççĕ. Анчах вĕсем тăрăшни усăсăр. Шырасан-шырасан, каллех Пăлаки патне кĕреççĕ те ăна пăвма тытăнаççĕ:

— Кала, ăçта ывăлу? Халех тупса пар! — кăшкăраççĕ вĕсем.

— Тăр, ватă кăркка! Мĕн, йури чире персе выртатăн?—Пăлакийе вырăнĕ çинчен сĕтĕрсе антарчĕç салтаксем.

— Ах, ачамсем, хĕрхенĕр кăшт! Мана сивĕ тытать,—тесе, пĕтĕм чунĕнчен тархасласа йăлăнать Пăлаки.

Çук, урса çитнĕ салтаксем ăна-кăна пăхмаççĕ, Пăлакийе асаплантарма тытăнаççĕ. Пĕр салтакĕ:

— Чим-ха, епĕ ун сивĕ чирне хуса кăларса йарам акă,—тесе чупса тухса, çăлтан пĕр витре сивĕ шыв ăсса кĕчĕ те ăна тӳрех Пăлаки пуçĕ çине чашлаттарчĕ. Ытти салтакĕсем ха-ха-ха! ахăрса кулаççĕ.

Вĕсемшĕн—кулă, Пăлакишĕн—вилĕм. Вăл пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сиксе чĕтрет, шăлĕсем хире-хирĕç шак-шак шаккаççĕ.

— Капла тарăхтариччен вĕлерĕр пĕреххут!—тесе ылханать Пăлаки.

Темиçе хутчен пыра-пыра Пăлакийе тарăх-тарчĕç салтаксем. Ентрийе шыраççĕ — çук, тупаймарĕç...

Мухмăрлă салтаксем килĕрен киле кĕрсе самогон шыраççĕ. Пур-и, çук-и самогонĕ, ăна пĕлмесĕрех, тӳрех:

— Давай ерех!— тесе çухăраççĕ.

Ыйтнине тупса параймасан, шомпăлпа çунтарса хăвараççĕ.

Шуррисен отрйачĕ пĕр ерне хушши йала вăрă-хурахла çаратса пурăнчĕ. Миçе арçынна хĕнерĕç! Миçе хĕрарăма... Ăна хисеплесе те кăларма çук. Йалта чăх-чĕпсене, хур-кăвакалсене хăвармарĕç: мĕн курнине тытаççĕ те пусаççĕ.

Пăлаки, ăна сивĕ тытаӑ пулсан та, ура çинче кăшт уткаласа çӳретчĕ. Анчах та хĕнесе, хăратса пĕтернĕренпе вара пĕтĕмпех ураран ӳкрĕ. Вилес пекех, вырăн çинче ахлатса выртаӑ. Панулми пек питçăмартийĕсем шанса лараççĕ, куçĕсем путса анаççĕ, сарă ука пек çӳçĕ тăкăнса пĕтет. Хăй çапах Ентрийе асăнаӑ:

— Тăшмансем, ачама асаплантарса пĕтерчĕç пуљ çав . Çамки çумне çăлтăр çĕлесе çыпăçтарнă, тет, вĕт. Çамрăкскер, ăçтан тӳстĕр çав асапа! Халĕ ĕнтĕ: „кĕлет тăррине шăтарса тухса тарнă“, тесĕ суйаççĕ. Таçтан çав шĕвреке тăрăлă, хĕрлĕ çалтăрлă çĕлĕке тупса

тавранчĕ. Çав çăлтăрлă çĕлĕк пиркийех пуçне хучĕ ачам,—тесе текех куљанса выртаť Пăлаки. Унăн куçĕсенчен куççуљ тумламĕсем, хурăн шывĕ пек пăчăртатса тухса, питçăмартисем тăрăх йухса анаççĕ.

Иалта пурте: Ентрийе çав хăй тупса таврăннă çăлтăрлă çĕлĕк пирки вĕлернӗ, тесе шутлаççĕ. Анчах виллине ăçта хунине никам та курман, пĕлмест. Шыраççĕ - çук, тупаймаççĕ.

— Анне, ытла ан хуйхăр-ха. Тен пичче чăнахах тарса хăтăлнă пуљ, мĕншĕн тесен ăна хупса лартнă мукаçей кĕлечĕн тăрринче çын тухмалăх шăтăк пур. Хам кайса куртăм, —тесе лăплантараť амăшне çичĕ çулхи хĕрĕ Уљйана.

—Ёненместĕп. Суйаççĕ вĕсем. Кĕлет тăрне хăйсем шăтарнă та, Ентри шăтарса тухса тарнă, тесе мăшкăлаççĕ,—тесе пуçне пăркалаť Пăлаки. Ёненмест.

Вăрăм кунсем, кĕске çĕрсем иртеççĕ. Салтаксем çавах йала çаратаççĕ. Çынсем, тарăхса çитнипе йала пăрахса, партизан отрйадне шырама вăрмана тухса кайаççĕ.

Пĕрре, çапла, çутăлас умĕн. Шăп тутлă ăйхă вăхăчĕ. Пăлаки, сивĕ тытса иртнĕ хыççăн, чăм шыва ӳксе тарласа выртаť. Сасартăк, йал вĕçĕнче пăшал сассисем: ух! ух! пĕрин хыççăн тепри кĕрлесе кайрĕç. Унччен те пулмарĕ сасăсем йантăрарĕç:

— Партизансем!

— Хӗрлисем!

Ура сассисем илтӗнчӗҫ.

Шуррисен салтакӗсем, хӑшӗ тумланса ӗлкӗрчӗҫ, хӑшӗсем кӗпе вӗҫҫӗнех, алӑксенчен, чӳречесенчен урамала сике-сике туха пуҫларӗҫ Кӑшкӑрашу, ҫухӑрашу пуҫланса кайрӗ. Урлӑ та пирлӗ чупкаласҫӗ. Пулемет, хур аҫи пек: тра-та-та-та...—такӑлтатса калаҫа пуҫларӗ.

Аҫта пӑхнӑ унта салтаксем кӗлте пек йӑвана-йӑвана кайаҫҫӗ.

— Кам мӗнле пӗлет—ҫапла сыхланӑр!— сасӑ йантӑраса кайрӗ.

Салтаксенчен нумайӗшӗ аллисенчи пӑшалӗсене пӑрахса тараҫҫӗ. Чупса пынӑ ҫӗртех чикелене-чикелене анаҫҫӗ.

Хӗрӳлӗ ҫапӑҫу пӗр сехет хушши пычӗ. Унтан пӑшал-пулемет сассисем майӗпен лӑпланнӑҫемӗн лӑпланчӗҫ. Йулашкинчен пӗтӗмпех шӑп пулчӗ.

Шуррисен салтакӗсем, йалтан тухса тарасшӑн пулса, вӗткеленсех чупкаларӗҫ пулсан та, пӗри те тухса кайни курӑнмарӗ. Ӑҫта пӑхнӑ унта, пусса пӑрахнӑ автансем пек, йун йухтарса выртаҫҫӗ.

Ҫутӑлчӗ. Хӗвел хӗрелсе тухрӗ. Партизан отрйачӗ хӗрлӗ йалав вӗлкӗштерсе йала пырса кӗчӗ. Отрйад командирӗ Шчетинкин—

малта, унпа йунашар Ентри кăвак лашине ташлаттарса пырать. Ун пуçĕнче шĕвреке тăрăлă, хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк. Аллинче винтовкă.

— Ав, Ентри пырать!—тесе кăшкăрашаççĕ отрйада кĕтсе илекен çынсем.

Пуринчен ытла ача-пăчасем савăннă, сиккелесе кăшкăраççĕ:

— Ентри!..

— Ентри!

Ывăлĕн йатне илтсен, вырăн çинче выртакан Пăлаки те, çĕкленсе тăрса, урама тухрĕ. Вăл хăйĕн куçĕсене хăй ĕненмест. Унăн ывăлĕ йуланутпа, хĕçпăшалпа... Вăл отрйад пуçĕнче командирпа йунашар пырать.

— Ентри!..—аллисемпе хăлаçланса, ывăлĕ умне чупса пычĕ Пăлаки.

Ентри, лашине чарса, сиксе анчĕ.

— Анне!..

Вăл амăшне ыталаса илсе хыттăн чуптурĕ. Çав вăхăтра унта Улйана та чупса çитрĕ:

— Пичче!—Ентрийе ыталаса илчĕ вал.

Пăлаки хăйĕн ачисем çине пăхса тăрса савăнать.

Амăшĕпе йăмăкне ыталаса чуптунă хыççăн, Ентри каллех лаши çине утланчĕ те, малала кайакан отрйад пуçĕнчи командир патнеле вĕçтерчĕ.

## ТĔЛПУЛУ

Пуху пуличчен ик-виç кун маларах хуларан—Испанири лару-тăру çинчен доклад туса паракан пырать, тесе пĕлтерчĕç.

Колхозниксем докладчика кĕтеççĕ. Пуринчен ытла йалсовет председателĕ Вассă Петровнă кĕтет. Унăн пĕтĕм йалти халăха ватти - вĕттипе пуçтарса доклад итлеттерес килет. „Испанири граждăн вăрçи çинчен пулакан доклада йалта пĕр çын та илтмесĕр ан йултăр", тет вăл. Ун çинчен Вассă Петровнă йалти халăха пурне те малтанах пĕлтерсе хурать.

Кĕтнĕ кун çитрĕ. Хурал пӳрчĕ умĕнче халăха чĕнекен пĕчĕк чан сасси йантăраса кайрĕ. Чан сассине илтсенех, колхозниксем клуба пуçтарăнаççĕ: йе пуху, йе митинг пулать, йе çпектакль, теççĕ колхозниксем.

Клуб çĕнĕ. Пĕлтĕр çеç туса пĕтернĕ ăна. Ăшĕ таса. Сценă тĕлĕнче çӳлте: „Республикăлă Испани сывă пултăр!" тесе çырнă лозунг çакăнса тăрать. Унпа йунашар: „Тĕп пултăр фашисăм!" текен лозунг. Сĕтел çине

хӗрлӗ пустав витнӗ, тӗрлӗ чечексем лартнӑ. Тенкелӗсене тирпейлӗн, речӗ-речӗпе лартса тухнӑ. Ленин, Сталин, Ворошилӑв йулташсен сӑнӗсем йӗри-тавра ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Урайне сарӑ сӑрпа сӑрланӑ, пӑхсан—куҫкӗски пек, сӑн курӑнаҭ.

Клуба халӑх пуҫтарӑнаҭ.

Йалсовет председателӗ Вассӑ Петровнӑ кӑкӑрӗ ҫине Хӗрлӗ ҫӑлтӑр орденӗ ҫакса йанӑ. Вӑл, вӑхӑта ахаљ ирттериччен, сасӑпах ҫӗнӗ хаҫат вулаҭ. Клуба пуҫтарӑннӑ халӑх ӑна шӑппӑн итлесе тӑраҭ.

Клуб умне ҫӑмӑл автомобил ҫитсе чарӑнчӗ. Кабинӑран сӑран тужуркӑ тӑхӑннӑ вӑтам ҫулхи арҫын сиксе анчӗ.

— Икӗ сехетрен мана илме кил, — терӗ вӑл машинӑна малала йама хускатнӑ шоферӗ.

— Докладчик ҫитрӗ, йулташсем,—пӗлтерчӗ Вассӑ Петровнӑ.

Малта тӑракансем чӳрече витӗр урамала пӑхрӗҫ:

— Ку йулташ та пирӗн Вассӑ Петровнӑ пекех орденлӑ иккен!—хӑйсен хушшинче калаҫса илчӗҫ колхозниксем.

Докладчик, клуба кӗрсен, пуҫӗнчи сӑран картусне хывса:

— Аван-и, йулташсем!—тесе халӑх йеннеле пуҫне тайрӗ. Унтан хӑйне кӗтсе илекен Вассӑ

Петровнăна алă парса паллăшрĕ. Орденлă çынсем пĕр-пĕрин куçĕсенчен шăтарас пек пăхса илчĕç. Анчах трукаҳ паллаймарĕç.

— Йулташсем, лăпланăр. Хуларан килнĕ йулташ пире Испанири граждăн вăрçи синчен доклад туса парать,—терĕ Вассă Петровнă. Хăй çавăнтах: „Ах, мĕншĕн-ха епĕ унăн хушаматне ыйтса пĕлмерĕм“, тесе шухăшларĕ.

Хăйсен хушшинче мăкăр-мăкăр калаçакан çынсем шăп пулчĕç. Пурте орденлă çын çинеле куçĕсемпе тĕллерĕç.

Орденлă çын, портфелĕнчен хутсем кăларса, вĕсене сĕтел çине хучĕ. Унтан, пĕрре хăйпе йунашар ларакан Вассă Петровнă çине, тепре халăх çине пăхса илчĕ те, докладне пуçларĕ.

Клуб шăп. Шăнасем вĕçни те илтĕнет. Докладчикăн сасси уçă, сăмахĕсем ăнланмала. Колхозниксем ăна çăтса йарас пек итлеççĕ.

Вассă Петровнă докладчик çине темиçе хутчен те сăна-сăна пăхрĕ: „Çавă, çавă. Урăх никам та мар. Хăй те мана паллаймарĕ. Ватăлтăм пуљ. Сăн-пит улăшăнчĕ“, тесе шухăшларĕ. Вăл хăйĕн иртнĕ пурнăçне аса илчĕ.

* * *

... Ун чухне Вассă Петровнă çамрăк, вунсаккăрта çеç пулнă. Ашшĕ çук, вăл Германи

вăрçинчен таварăнман: те вилĕ, те чĕрĕ, сас-хура илтĕнмест. Çыру тавраше те килмест. Вĕсем хĕрĕхрен иртнĕ амăшĕпе çеç пурăнаççĕ.

... Граждăн вăрçи вăхăчĕ. Çĕрле. Аслати авăтать. Чашлаттарса çăмăр çăвать. Çанталăка çурса йарса çиçĕм çиçет. Вассă Петровнăн амăшĕ хăраса ӳкнĕ, сиксе чĕтрет:

— Хĕрĕм, есĕ трубана хупрăн-и?—тесе ыйтать.

— Хупнă. Есĕ, анне, ан хăра-ха. Аслати авăтĕ-авăтĕ те иртсе кайĕ вăл. Ним те пулмĕ,—лăплантарать Вассă амăшне.

— Хăрамасăр. Çыннисем урса кайни çитмен, çанталăкĕ те урмăшать. Виççĕмĕш çул вĕт ĕнтĕ вăрçă хускални. Хăçан чарăнать? Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. Йалан çапăçаççĕ. Çак вăрçă пулман пулсан, аçу та килтех пурăннă пулĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ ак хĕрарăм пуçпа тарăхса пурăнатпăр. Вĕлерчĕç пуль çав. Чĕрĕ пулсан, хăй таварăнмасан та, çыру та пулсан килĕччĕ,—тесе хуйхăрать Вассă амăшĕ.

Сасартăк пӳрт алăкне тул йенчен темскер пырса тĕкĕнет.

Вассă алăк патне чупса пычĕ:

— Кам унта?—тесе ыйтрĕ.

Тултан сас-чӳ илтĕнмерĕ. Анчах каллех пылчăк çине темскер лаплатса ӳкрĕ. Хайар сасăпа ĕнĕрлени çеç илтĕнчĕ.

— Пĕр-пĕр ӳсĕр сын çапкаланса çӳрет пулĕ,— терĕ амăшĕ хăранă сасăпа. Васса, алăк çаклатнине уçса, тулала тухрĕ. Пăхать: чăнах та алăк умĕнче пĕр сын чăсăлса выртать.

— Кам есĕ?! Мĕн кирлĕ сана?—ыйтрĕ Васса.

Сын чĕнмест те, хускалмасть те.

Çăмăр çаплах шарлаттарса çăвать. Йăлтăр та йалтăр çиçĕм çиçет. Çĕре чĕтретсе аслати аватать.

Сын, кăшт выртсан, хăрах аллине хускатса:

— Ш-шыв... ĕçес...—тесе хуллен йăнăшрĕ.

— Кам пулатăн есĕ?

Сын урăх сасă памарĕ.

Васса çăмăр айĕнче йĕпенсе тăмарĕ Сынна хулĕнчен çĕклесе пӳрте сĕтĕрсе кĕчĕ. Сийĕнчи йĕпе тумтирне хывса илчĕ Курать: сыннăн сылтăм кăкăрĕ айĕнчен пăчăртатса йун йухать.

— Анне, ку сын ӳсĕр мар, суранланнăскер,—пĕлтерчĕ Васса амăшне. Çавăнтах вĕсем, сыннăн йунне тасатса, суранне тирпейлесе сыхрĕç. Унтан Васса суранлă сынна хăй вырăнĕ çине йăтса вырттарчĕ.

— Шурри-ши ку, хĕрли-ши?—тесе пăшăлтатать амăшĕ.

— Хĕрли пулĕ. Мăйĕнче хĕрес çук,—тесе пĕлтерчĕ Васса.

Вăл кас вĕсен сывăрасси пулмарĕ, çĕрĕпех

суранлă çынна пăхса ирттерчĕç. Çутăлас умĕн тин суранлă çыннăн ăнĕ çитсе кĕчĕ.

— Епĕ ăçта? Есĕ кам пулатăн?—тесе ыйтрĕ суранлă çын, пуçĕ вĕçĕнче ларакан Вассăран.

— Епĕ сана вилĕмрен хăтаракан. Есĕ ху кам пулатăн?—ыйтрĕ Вассă.

— Епĕ? Епĕ партизан. Пирĕн отрйада шуррисем аркатса тăкрĕç. Йулташсем—кама ăçтала май килнĕ—çавăнтала саланса пĕтрĕç. Мана тыткăна çавăрса илчĕç. Ах, шыв ĕçтерха, тархасшăн...

Вассă пĕр стакан шыв ăсса пачĕ. Партизан ăна нихăçан шыв курман пек ланкăртаттарса ĕçсе йачĕ те:

— Тата пар!—тесе ыйтрĕ.

— Çитĕ. Халĕ сана шыв нумай ĕçме йурамасть. Кала малала: мĕнле хăтăлтăн?—терĕ Вассă.

Партизан Вассă куçĕнчен мĕскĕнĕн пăхса илчĕ те калама пуçларĕ:

— Штаба илсе пычĕç.—Кам отрйадĕнчен?—тесе ыйтаççĕ. Чĕнместĕп.—Сан хушамату?—Шарламастăп. Виçĕ сехет хушши ыйтса тĕпчерĕç. Пĕр сăмах та чĕнмерĕм Йулашкинчен: Расстрељать сволоча!—терĕ офицер тарăхса çитнипе. Пĕтрĕм! Сывă пулăр, атте-анне, тăвансем! Сывă пул, çут тĕнче! Сывă пул, революци!—тесе шухăшларăм.

Мана икĕ салтак персе пăрахма илсе кайрĕç. Пĕри малтан, тепри хыçалтан ман çине пăшалĕпе тĕллесе пыраҫ. Ман çапах вилес килмест. Епĕ вĕт çамрăк, çирĕм çулта çеç-ха. „Пурĕпĕр апла та, капла та",—тесе шухăшларăм та, хам умра пыракан салтака пĕтĕм вăйпа чышса йăвантарса, ун урлă сиксе каçса тартăм. Урăх вара астумастăп. Мĕнле майпа епĕ кунта çитсе ӳкнĕ, пĕлместĕп,—терĕ партизан ассăн сывласа йарса.

Унтан Вассă ăна хăй вилĕмрен мĕнле хăтарни çинчен каласа пачĕ.

— Есĕ мана хĕрхенсе ху патна илсе кĕнĕ. Малала та хĕрхенетĕн пулсан, суранăм кăшт тӳрлениччен ху патăнта пытарса усра мана... Хĕрхенместĕн пулсан, халех шуррисене кайса кала та, персе пăрахчăр,—терĕ партизан Васса сăмахне итлесе пĕтерне хыççăн, ун çине мĕскĕнĕн пăхса.

— Ах, мĕн калаçатăн есĕ, йулташ!.. Вара есĕ ман патра выртни çинчен епĕ шуррисене кайса каласан, вĕсем вĕт мана хама та санпа пĕрлех персе пăрахаççĕ,—терĕ Васса партизана лăплантарса.

Партизан савăннипе шăппăн йăлкăшса илчĕ.

— Çакăнтан сывă йулсан, епĕ сана ĕмĕрне те манмăп. Çак çут тĕнчере манăн санран хаклă çын та пулмĕ,—тет партизан хавасланса.

Икĕ ерне хушши Вассă çамрăк партизана хăй патĕнче, никама пĕлтермесĕр, пытарса усрарĕ.

Çурăмран кĕрсе кăкăрĕнчен тухнă пуљă суранне тӳрлетесшĕн хулана кайса емелсем иле-иле килчĕ.

Шуррисем, йала пырса, арканса кайнă отрйадăн партизанĕсене шыраççĕ. Суранланнă партизансене хресченсем пытарса усранине пĕлеççĕ, анчах пĕрне те тупаймаççĕ.

Пĕрре çапла шуррисен отрйачĕ йалта вырт-ма чарăнчĕ.

Салтаксем килĕрен киле саланчĕç. Вассăсенкил картине те акă икĕ салтак кĕ-чĕç.

— Мишă, çав тăшмансем тухса кайиччен есĕ тĕпсакайне кĕрсе пытанса лар,—терĕ Вассă.

Партизан хыпалансах тĕпсакайне чăмрĕ.

Салтаксем урлă-пирлĕ пускаласа кĕчĕç:

— А-а-а... Хуçа арăмĕ ватă пулсан та, хĕрĕ çамрăк. Пĕр каçа çитĕ,—кĕçенсе кулса йачĕç салтаксем, Вассă çине пăхса.

— Ну, хоçайкă, мĕн ĕçмели-çимели пур? Хатĕрле хăвăрт! Пирĕн, хĕрлисем хыçĕнчен лапăстатса çӳресе, хырăм выçрĕ, — терĕ пĕр салтакĕ, урлă мăйăхне пĕтĕркелесе.

Вассă амăшĕ салтаксенчен хăраса ӳкнĕ, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сиксе чĕтрет, апат хатĕрлет.

— Самогон тупса парăр! – кăшкăрчĕ пĕр салтакĕ.

— Хĕрĕм, чуп-ха... Маруç инкӳсем патне кайса илсе кил,—терĕ амăшĕ.

Вассă та хăраса ӳкрĕ:

„Епĕ хам кайсан, вĕсем тĕпсакайне уçса пăхĕç те Мишăна тупĕç. Вара çемйипех пĕтерĕç“,—шухăшларĕ Вассă. Шухăшларĕ те тухса каймасăр тытăнса тăчĕ.

— Ну, мĕн есĕ аннӳ сăмахне итлеместĕн? Кайса илсе кил!—кăшкăрать салтак.

Ним те тума çук. Вассă, Маруç инкĕшсем патне кайса, пĕр четвĕрт самогон йăтса пычĕ.

— Малтан ху тултарса ĕç. Унтан пире пар,—терĕ пĕр салтакĕ.

— Ай-уй, епĕ халиччен ăна ĕçсе курман,—пуçне пăркалать Вассă.

— Ĕç! Тен, есĕ пире ваљљи вĕлермели йапала тултарса килнĕ. Сирĕнте шанчăк сахал,—тет салтак.

— Çук, ĕçместĕп,—терĕ Вассă, татсах каларĕ.

— Ĕç. Унсăрăн епĕ сана халех!—сиксе тăрса, чышкине çӳлеле çĕклерĕ салтак.

Вассă хăранипе ирĕксĕрех пĕр черкке самогон тултарса ĕçрĕ.

Салтаксем иккĕн пĕр четвĕрте чут ĕçсе йаратчĕç. Çирĕç. Ӳсĕрĕлчĕç.

— Ну, ватă кăркка, ĕçтертĕн, çитертĕн. Халĕ ĕнтĕ есĕ пире кирлĕ мар. Хĕрӳ йулсан çитет. Вон, тухса кай! – ура тапса кăшкăрчĕ пĕр салтакĕ, Вассă амăшĕ çине пăхса.

Амăшĕ сивĕ тытнă пек сиксе чĕтрет:

— Ачамсем, кăшт çын пекрех пулăр-ха. Çĕрлене хирĕç ăçта тухса кайам-ха епĕ?— тесе йăлăнаť.

— Ну, лăкăртатса ан тăр! Тухса кай! Унсăрăн епĕ сана халех кăларса сирпĕтетĕп,— тайкаланса пырса, Вассă амăшне кăкăрĕнчен чышса йачĕ салтак.

Амăшĕ, хăраса ӳкнĕскер:

— Ах, ан тив, ачам. Хамах тухатăп,—тесе, тумтир тăхăнмасăрах тулала тухса кайрĕ.

— Ха-ха-ха! — лăхлатса кулса йулчĕ салтак.

— Анне, ан тух!—кăшкăрчĕ Вассă.

— Ерех ĕçтертĕн. Халĕ ĕнтĕ манпа йунашар выртса пăх,—терĕ пĕр салтакĕ Вассă патнеле йăпшăнса утса пырса. Ыталаса тытма тăчĕ. Анчах Вассă ыталаттармарĕ, салтака хăй патĕнчен чышса йачĕ. Ӳсĕр салтак, кайала сулăнса кайса, темĕнрен такăнчĕ те, месерле персе анчĕ. Унтан сиксе тăчĕ те:

— А-а-а!. Есĕ мана парăнасшăн мар-и-ха?— тесе кăшкăрчĕ. Вассăна пилĕкĕнчен ыталаса тытса, кроваť çине ӳкерчĕ.

Вассă хăй те сисмерĕ, чунхавалĕпе:

— Мишă! Пулăш!.. Мăшкăллаççĕ!—тесе кăшкăрса йачĕ.

Салтак Вассăна кăшкăртасшăн мар, аллипе çăварне хуплаť. Тепĕр салтакĕ, ўсĕрпе анраса, сак çинче ĕнĕрлесе выртаť.

Çав вăхăтра урай хăми шăппăн уçăлчĕ. Тĕпсакайĕнчен партизан йăпшăнса тухрĕ. Вăл сĕтел çинче выртакан нагана йарса тытрĕ те, Вассана пусмăрлама тăнă салтака чышса йарса:—Ак сана!. терĕ. Наган сасси кĕрлесе кайрĕ.

Пăшал сассине илтсе, леш усĕр выртакан салтакĕ ура çине сиксе тăчĕ те, çумĕнчи наганне йарса тытрĕ. Ана кобурĕнчен кăларса ĕлкĕреймерĕ,—хăй те урайне йăванса ўкрĕ..

— Вассă, айта тухса тарар! Унсăрăн пире тытса илме пултараççĕ,—терĕ партизан.

Çавăнтах вĕсем пўртрен тухса чупрĕç. Пилĕк минутран, анкартисем урлă каçса, йал вĕçĕнчи вĕтлĕх вăрмана кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç.

— Мишă, епĕр тарса хăтăлтăмăр. Аннене мĕн тăвĕç-ши ĕнтĕ?—терĕ Вассă, тарăнăн сывласа.

— Мĕн тăвасси паллă: йе çакса, йе персе вĕлерĕç,—терĕ партизан.

Çапла Вассă хăй кĕтмен çĕртенех партизан отрйадне çитсе лекрĕ. Икĕ çул хушши шуррисемпе çапăçрĕ.

Вассă пайанхи пекех астăваť-ха. Пĕрре

çапла, шуррисемпе икĕ талăк çапăçнă хыççăн, отрйад вăрманта канаť. Партизансем хăшĕ канса выртаççĕ, хăшĕсем вăрман тăрăх çырла çисе çӳреççĕ.

Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ—çырла пиçнĕ вăхăт çитнĕ. Йĕри-тавра тĕрлĕ кайăксем йурлаççĕ. Хурт-хăмăрсем, шăна-пăвансем сĕрлесе вĕçеççĕ.

— Мишă, айта вăрмана çырла çиме,—терĕ Вассă.

— Айта!—килĕшрĕ Мишă.

Çавăнтах вĕсем алла-аллăн тытăнса вăрманала чупса кĕрсе кайрĕç. Ытти партизансенчен хăшĕ-пĕрисем вĕсем çине ăмсанса пăхса тăрса йулчĕç.

— Мишă, ытла шала ан кайăр!—кăшкăрчĕ отрйад начаљникĕ Коваљов.

Хăмла çырли аври çăра. Çынран та çӳлĕ. Çырлисем пуçпӳрне пек шултăра. Çăвара хыпсан, пыл пек ирĕлеççĕ.

Вассăпа Мишă калаçса çырла çисе çӳреççĕ. Хăйсем те сисмеççĕ, вăрман ăшне шалтан шала кĕреççĕ. Мĕн шалала кĕнĕçемĕн çырла тата лайăхрах пек туйăнаť.

Çӳресен-çӳресен, Вассă ывăннă пек пулчĕ:
— Мишă, айта ларса канар,—терĕ вăл йăл кулса.

Хăмла çырли аврисен сулхăнне ларчĕç. Çанталăк уйар. Хĕвел ăшшăн ачашлаť.

Вăрман тăрăх лăпкă çил вĕрет, хăмла çырли аврисене чăштăр-чăштăр каларçтарать. Тĕкĕлтурасем нăрласа вĕçеççĕ.

Вассă хăй йуратнине тахçанах Мишăна каласа парасшăн. Анчах нимпе те хăйаймасть. Мишă та çавах. Вăтаннипе, йурату сисĕмне пĕр-пĕринчен пытарса çÿреççĕ. Анчах, халĕ ĕнтĕ хăйсен шухăшĕсене текех пытарса тăраймарĕç.

Пайан Вассă хăй йуратнине сăмахпа мар, шÿтлĕ майпа пĕлтерме шут тытрĕ. Ларнă çĕртех вăл сасартăк:

— Ай! — тесе кăшкăрса, тăп-тăп çÿхе тутине аллипе хупларĕ.

— Мĕн пулчĕ?! — хăраса ÿкрĕ Мишă.

— Сăхрĕ!

— Мĕн сăхрĕ? Çĕлен сăхрĕ-им? — ури çине сиксе тăчĕ Мишă.

— Çĕлен мар, тĕкĕлтура сăхрĕ.

— Ăçтан сăхрĕ?

— Акă, тута хĕрринчен, — пÿрнипе тутине тĕксе кăтартрĕ Вассă.

-- Мĕн тăвас? Ак, туту шыçса кайĕ ĕнтĕ, — хыпăнса ÿкрĕ Мишă.

— Мишă, ман тута ан шыçтăр тесен, ме, çак тĕкĕлтура сăхнă вырăна хăвăн тутупа хăвăртрах ĕмсе ил... — тесе, тутисене чăмăртаса Мишă йенне çаврăнчĕ Вассă.

Мишă хăйĕн тин мăйăх-сухалпа витĕнекен тутине Вассă тути çумне çыпăçтарчĕ, йурат-

нипе Вассăна ыталаса илчĕ. Вассă та ăна ыталарĕ.

Пĕр вăхăта вĕсем хăйсем ăçта ларнине те манса кайрĕç. Тен, татах та ларнă пулĕччĕç, анчах çак самантрах партизансем тăракан лагĕр йенче сас-хура хусканни вĕсене чунран савăнса ларнă вырăнтан тăратрĕ.

— Сыхланăр! Шуррисем килеççĕ! — кăшкăрса, лашине сиктерсе иртсе кайрĕ Коваљов. Командир хыçĕнчен партизансем, хăшĕ йуланутпа, хăшĕ çуран, вăрмана кĕрсе кайрĕç.

— Вассă, манран ан йул! — терĕ Мишă.

Малтан Мишă, ун хыçĕнчен Вассă отрйад хыççăн тапса сикрĕç.

Çапла умлăн-хыçлăн чупса пынă çĕртех Вассă малта пыракан Мишăна кусĕнчен çухатрĕ. Вăл ăçта кĕрсе кайнине те Вассă курмарĕ.

— Мишă! Мишă! — темиçе хут та кăшкăрчĕ. Çук, сасă та памарĕ.

Çапăçу пĕтсен, чĕрĕ йулнă партизансем пĕр çĕре пуçтарăнчĕç. Мишă çук. Пуçĕпех çухалчĕ. Те вĕлерчĕç, те тыткăна лекрĕ. Никам та курман. Вилнĕ ӳчĕ те çук. Пĕлмеççĕ.

Çапла хăйĕн пирвайхи хут йуратнă сывăх çыннине Вассă кĕтмен çĕртен çухатрĕ. Çакăн хыççăнах: амăшне çакса вĕлернĕ, çуртне вут тĕртсе çунтарса йанă, текен хыпар çитрĕ.

Çак хуйхă-суйхă Вассă кăмăлне чылайах хуçрĕ. Анчах Вассă Петровнă пуçне усмарĕ: вăл тăшмана пушшех курайми пулчĕ; çакăн хыççăн пушшех те пĕтĕм вăйне тăшманпа çапăçас çĕре хучĕ.

— Вĕсем манăн чи йуратнă çыннăма пĕтерчĕç, тăван аннеме вĕлерчĕç,—тесе, шăлне шатăр çыртатчĕ Вассă Петровнă.

„Тăшман сана пĕрре çапсан, есĕ ăна виçĕ хут ытла хирĕç тавăрса пар",—тесе вĕрентетчĕ Коваљов командир.

Унтанпа чылай вăхăт, чылай çулсем иртрĕç ĕнтĕ. Шуррисене çĕнтерни тĕле Вассă Петровнăн ывăл ача çуралчĕ. Вăл халĕ вунçичче çитнĕ –комсомолĕц. Ана Вассă Петровнă хăйех пăхса ӳстерчĕ. Унăн ашшĕ кам пулнине Вассă Петровнă пĕр хăй çеç пĕлет.

* * *

...Докладчик пĕр сехет хушши колхозниксене Испанири граждăн вăрçи çинчен лайăх, ăнланмала каласа пачĕ. Йулашкинчен вăл çапла кăшкăрса пĕтерчĕ хăйĕн сăмахне:

— Епĕр револјуцилĕ Испани халăхне вăл çĕнтеричченех пулăшма хатĕр... Сывă пултăр республикăлă Испани! Тĕп пултăр фашисăм!

Докладчик шухăша кайса ларакан Вассă Петровнă çине çавăрăнса пăхрĕ:

— Ытла нумай каларăм пулас. Йăлăхтарчĕ пулђ?—терĕ вăл.

— Çук, çук! Вăрах мар. Кун пек доклада тата çавăн чухлĕ итлесен те йăлăхтармасть,—терĕ Васса Петровнă ура çине тăрса.

— Йулташсем, камăн мĕнле ыйтусем пур? Ыйтăр...

Докладчик Вассă Петровнă çине тепĕр хут пăхса илчĕ те: „Ăçта курнă-ши епĕ ку хĕрарăма?"—тесе шухăшларĕ.

— Ăнланмала... Ыйтусем çук,—илтĕнчĕç сасăсем.

— Йулташ, каçарăр; епĕ сирĕн хушаматăра ыйтма маннă,—терĕ Вассă Петровнă.

— Манăн хушамат—Храбров,—кĕскен пĕлтерчĕ докладчик.

Вассă Петровнăн кăвак куçĕсем выђанса илчĕç.

— Мишă! Есĕ вĕт ку!?—хăй те сисмерĕ, кăшкăрса йачĕ Вассă Петровнă.

— Вассă!?.

Вĕсем пĕрне пĕри ыталаса илчĕç. Пирвайхи йурату асĕсене килчĕ.

— Астăватăн-и, пире шуррисем хупăрласа илсен, епĕр тартăмăр. Хам та сисмен, шуррисен хушшине пынă кĕнĕ. Тыткăна илчĕç. Унтан тĕрмене хупса лартрĕç. Хĕрлĕ çар çĕнтериччене тĕрмере лартăм. Совет влаçĕ çĕнтерсен çеç ирĕке тухрăм. Сана шырарăм,

тупаймарăм. Ĕсĕ ăçтине никăм та пĕлсе каласа параймарĕ. Унтан аслă шкула вĕренме кĕтĕм. Халĕ ĕнтĕ акă ĕçлетĕп,—хăй çинчен кĕскен каласа пачĕ Михаил Храбров.

Колхозниксем килĕсене саланчĕç.

Орденлă çынсем клубран йунашар утса тухрĕç. Вĕсене хирĕç çамрăк комсомолĕц утса пычĕ.

— Мишă, ку акă пирĕн ывăл—Мишă! Епĕ, сана асăнса, ăна сан йатна патăм,—тесе пĕлтерчĕ Вассă Петровнă.

— Аван-и, комсомолĕц?—Храбров хăй ывăлĕн аллине тытса чăмăртарĕ.

Каллех пирвайхи йурату асĕсене килчĕ.

— Мишă, ку санăн тăван ачу!—тесе пĕлтерчĕ Вассă Петровнă хăйĕн ывăлне.

# КОЛЧАКĂН ЙУЛАШКИ КУНĔСЕМ

## I

Раштав уйăхĕ. Тайга, шур пĕркенчĕкпе витĕннĕ пек, шап-шурă йурпа хупланнă. Çанталăк тӳсмеле мар уйар та сивĕ; пӳртрен тухсанах, пит-куçа тăм илме тытăнать. Хĕвел тухать те, йăвăççен тăррисене лекес пек, айалтан шуса иртет. Çĕрле пулсан, пăшал пенĕ пек шарт та шарт тайгари йăвăç вуллисем çурăлаççĕ. Выçă улакаткасем çĕрме пуçланă йăвăççем çинче, хуралçăсем пек таклаттарса, хурт-кăпшанкă шыраççĕ.

Тайгари йалсем шăп, нимле сас-чӳ те илтĕнмест: йытăсем те вĕрмеççĕ, çерçисем те чĕвĕлтетсе сиккелесе çӳремеççĕ; автансем те, сивĕпе, кашта çинчен анмасăрах, пĕрерикшер хут вăрăмăн авăтса илеççĕ те каллех лăпланса лараççĕ. Çыннисем те темĕн кĕтеççĕ, пĕтĕмпех ĕçлеме пăрахнă. Йалан хăшĕ хăйă çурса, хăшĕ катка-пичĕке туса, хăшĕ вутă касса Шеглов пасарне çӳрекенччĕ; халĕ пĕри те курăнмаççĕ, пурте пӳрчĕсенчен тухма хăраса лараççĕ. Сивĕ çав, сивĕрен хăраç-

çĕ пуљ. Шухăшласа пăхăр-ха, камăн ирĕклĕрен пит-куçа тăм илтерес килтĕр çак сивĕре? Тен, çавăнпа тухса çӳремеççĕ-и çынсем?

Çук! Сивĕпе пит-куçа тăм илесрен хăрамаççĕ. Шуррисем иртсе кайасса, хĕрлисем çитессе кĕтеççĕ. Ку хыпар ĕнтĕ чылайранпа халăх хушшинче çӳрет: „Хĕрлисем Урал урлă каçнă, Тоболљскран иртнĕ. Омска илнĕ, Ново-Николайĕвска çитнĕ. Шеглова çитеççĕ". Куллен-кун çывăхран çывăх хула йачĕсене асăнаççĕ. Шуррисем иртсе кайса Хĕрлĕ çар çитессе—мăнкуна кĕтнĕ пек кĕтеççĕ...

## II

Станцă йенчен, хӳресĕр лаша кӳлнĕ çара çунапа шап-шурă йурпа витĕннĕ Никкăн партизан, лашине мĕн пултарнă таран хăвăрт чуптарса, йала пырса кĕчĕ:

— Ей, мĕн çывăрса ларатăр?—пыр тĕпне хыртарса кăшкăрчĕ вăл. Сасси пӳрт чӳречисенчен кĕре-кĕре тухса, тайга тăрăх ăр-р-р! йанăраса тĕрлĕ йеннеле саланчĕ.

Никкăн сассине илтсен, арçынсем те, хĕрарăмсем те пурте урама сике-сике тухрĕç.

— Мĕн пулнă?

— Ăçта?

— Кам?

— Мĕскер?—пĕрне пĕри пӳлсе ыйтаççĕ.

— Мӗн пултӑр. Ним те пулман. Шуррисем тараҫҫӗ. Шегловран тухса тарнӑ. Омск, Ново-Николайӗвск, Барнаул хулисем—пурте хӗрлисен аллинче. Колчак Иркутскине тарнӑ. Шуррисен чакакан ҫар чаҫӗсем пайан-и, ыран-и—сирӗн йал урлӑ иртме тивӗҫлӗ. Чукун ҫул тӑрӑх та, ахаль ҫулсемпе те шуррисен ҫарӗ персе амантнӑ кашкӑр пек тарать. Хыҫалтан Хӗрлӗ ҫар хытӑ хӗстерет,—ҫавӑрӑнса пӑхма та памасть. Умӗсенчен епӗр, партизансем, пӳлсе илме хатӗрленетпӗр. Анчах есӗр, хресченсем, пире пулӑшма хатӗр пулӑр.

— Епӗр халех хатӗр. Мӗн хушатӑр, ҫавна тӑватпӑр,—тесе, виҫ-тӑват сасӑ харӑс кӑшкӑрчӗҫ.

— Лашӑрсене шуррисене ан парӑр, тайгана кайса кӑкарӑр. Тырӑсене йур айне пытарӑр. Камӑн килте ытлашши утӑ-улӑм пур, ҫунтара-ҫунтара йарӑр. Хӑвӑр тайгана тарӑр. Килӗрсенче карчӑк-кӗрчӗксемпе ача-пӑчасем ҫеҫ йулччӑр,—терӗ Никкӑн. Унтан вӑл лашине карт! туртрӗ те тилкепи вӗҫӗпе хӑмсарчӗ; тилкепи лашине лекмерӗ, лаши ҫавӑнтах аҫа-ҫиҫӗм пек сиксе тапранса кайрӗ.

Никкӑн йал вӗҫӗнчи ҫул кукринче курӑнми пулчӗ. Хресченсем кил хушшисене кӗрсе кайса ҫухалчӗҫ.

## III

Хресченсем кунĕ-çĕрĕпех ĕçлерĕç: йалта вылђăх-чĕрлĕх чунĕ йулмарĕ, пурне те тайга ăшне пытарчĕç. Кĕлетсенчи тырă-пулă йăлтах йур айĕнче. Йалта ватă карчăк-кĕрчĕксемпе ача-пăчасем çеç йулчĕç. Вĕсем кăмакасем, сентресем çийĕсенче хăравçă мулкачсем пек:

— Акă вĕсем çитеççĕ, халех йала кĕреççĕ!—тесе чĕтресе çеç лараççĕ.

Ача-пăчасем çуйăхаççĕ:

— Асанне! Анне ăçта кайрĕ?.. Атте ăçта? Камсем килеççĕ? Ма хăратăр?—Сăмсисене шăла-шăла, асламăшĕсем çумнерех лăпчăнаççĕ пĕчĕк ачасем.

Хĕрĕх градуслă Çĕпĕр сивви хĕскĕчĕ пек хĕстерет.

Хушăран-хушă пăшалпа пенĕ пек шартлатаť уйсемпе вăрмансенче темĕн сасси: уйра, сивве чăтаймасăр, çĕр çурăлаť пулмала, вăрманта йăвăç вуллисем çурăлаççĕ.

* * *

Шурăмпуç килес умĕн йала татти-сыпписĕр обоз кĕрсе тулчĕ. Обозпа пĕрле шутсăр салтаксем. Вăрах çывăрманнипе нумайĕшĕн куçĕсем улма пек шыçăна-шыçăна кайнă; пичĕ-сăмсисене шап-шурă тăм илсе пĕтернĕ;

ӳчĕсем сĕвĕнсе, йунласа тăраççĕ. Хăш-пĕрисен алли-урисем тукмак пек шыçăна-шыçăна кайнă; усĕр çынсем пек каллĕ-маллĕ тайкаланса çеç тăнкки-танкки пускаласа утаççĕ. Çийĕсене пăхма та хăрушă: етемлĕхрен тухнă.

Авантарах çуртсене офицерсем хăйсен майрисемпе кĕрсе вырнаçрĕç. Халуйĕсем апатçимĕç пĕçереççĕ. Мĕн кăна çимеççĕ вăл офицерсемпе майрасем, мĕн кăна ĕçмеççĕ? Вĕсен сĕтеллисем çинче—аш та, пыл та, çу та, тата хаклăран та хаклă йышши ерехсем. Çăварĕсенче пӳрне хулăмĕш пируссем. Майрисем, офицерсен чĕркуççийĕсем çине ларса, чуччу йаранна пек сикеççĕ. Çинçе сассисемпе кĕсресем пек кĕçенеççĕ.

Начартарах пӳртсене, мунчасене, сарайсене, авăн лаççисене салтаксем кĕрсе тулчĕç. Унта шăнăçайманнисем карташсенче, урам варрисенче вут куписем чĕрте-чĕрте йачĕç те, ăшăнасшăн, мĕнле те пулин вĕри апат пĕçерсе çийесшĕн чупкалаççĕ. Шăтăр-шатăр! Кĕмсĕр те кĕмсĕр! Хӳмесене, карта-хурасене çĕмĕре-çĕмĕре, кĕрлесе çунакан вут куписем çине пăрахаççĕ. Вут чĕртнĕ вырăнти йур çĕре çитичченех ирĕлсе, сăра хуранĕ пек çавракашăтăк пулса анса кайнă; салтаксем çав шăтăксем тавра карталанса тăнă та ăшăнаççĕ. Ăшăнса тăнă çĕртех хăшĕн шинелне вут хыпса илет те, вăл кĕрлесе çуна пуçлать:

— Çунаť!..
— Пушар!..
— Йурпа сапăр!
— Йур ăшне чикĕр!
— Ха ха-ха! — ахăлтатса кулаççĕ, çуйăхаççĕ салтаксем.

Хура тĕтĕм пĕлĕтеле çĕлен пек авкаланса хăпарса, тайга çине лупас пек витĕнет. Сивĕ. Лăпкă. Çил çук. Сурчăк çĕре ўкичченех пăрланса лараť.

Пĕтĕм картишсем, урамсем, тăкăрлăксем тулли; вĕсенче, йармăркăри пек, тăварман лашасем тăраççĕ. Вĕсем сивве шăннипе малти урисемпе йура кукалесе, шăрăхра шăнапăвансене хăвалană пек хўрисемпе пăтраштарса тăраççĕ. Хăшпĕр лаши тилхепепе çыхланса ўкнĕ те вилес пĕк хăрăлтатса выртаť, хăшĕ çуна ўречисем çумне каркалană пăйавсене тата-тата чăмласа тăраççĕ.

Урамсенче, тăкăрлăксенче, карташсенче салтаксем çуйăхни, ахăлтатса кулни, пĕрне пĕри ылханни, лашасем кĕçенни йантăраса тăраť.

Пўртсенче ача-пăчасем — хăшĕ кăмака çинче, хăшĕ сентре çинче сухăраççĕ:

... Ме-ме!.. тў-тў!.. чи-чи!.. пай пай!.. уа-уа!..

Карчăк-кĕрчĕксем йĕрекен ачисене лăплантарасшăн:

— Ан йĕр, ачам, ан йĕр! Ав ылттăн хул-

пуççилĕ тетисем çиленеççĕ. Йĕрекен ачасене вĕсем пуçтарса кайаççĕ,—тесе хăратаççĕ.

Ачасем кăшт лăпланаççĕ те ĕнерĕнмен купăссем пек каллех тĕрлĕ сасăпа йĕрмĕшме пуçлаççĕ.

Офицерсем ача-пăчасем йĕнине итлесшĕн мар, тарăхаççĕ:

— Вата кăркка, чар ачуна!—тесе хыттăн кăшкăраççĕ:—Ывăлу, кинӳ ăçта?

Вăл çĕр карчăксемшĕн çулталăк тăрăшшĕ пекех пулчĕ. Офицерсемпе салтаксем тухса кайса пĕтсен, çавăнтах йăванса кайса вилнĕ пек сывăрĕччĕç, анчах... пĕрисем тухса кайаççĕ, вĕсен вырăнне теприсем пырса кĕреççĕ. Вĕсем каллех ача-пăчасене, карчăк-кĕрчĕксене вăрçаççĕ:

— Сволăчсем! Ватти-вĕттипех сире пĕр май шăлса тăкмала...—тесе хирĕлеççĕ вĕсем.

Ача-пăчасем çапах чарăнмаççĕ, хуллен те пулин нăш-нăш-нăш! йĕреççĕ. Куççулĕсем пăт-пăт тумлаççĕ. Карчăксем, хăранипе, шăлсăр йанаххисене тăр-тăр чĕтретсе, ачисене пĕрре офицерсемпе хăратса, тепре ахаљ ачашласа лăплантарасшăн тăрăшаççĕ...

Карташсенче те, урамсенче те, тăкăрлăксенче те, çулсем тăрăх та чарăнма пĕлмен кăшкăрашу.

Офицерсен куçĕсем, те вăрах сывăрманнипе, те ахаљ, урнă йыта куçĕсем пек хĕрелсе

ашланса кайнӑ; вӗсем, аллисене револьверсем тытса, унтала та кунтала чупкалаҫҫӗ:

— Сволӑчсем! Пӑшаларсем ӑҫта? Мӗн туса тӑратӑр? Утӑр малала!

Чӑнах та салтаксен аллисенче пӑшалсем ҫук. Офицерсене хирӗҫ пӗр чӗнмесӗр, ҫунакан вут куписем тавра ӑшӑнса тӑраҫҫӗ. Офицер иртсе кайсанах, тытӑнаҫҫӗ пӗр-пӗринчен кулма:

— Сволӑч!.. Пӑшалу ӑҫта?.. Ха-ха-ха!..

Ҫанталӑк сивӗтнӗҫемӗн сивӗтет. Тайгари йӑвӑҫ вуллисем хытӑран хытӑ шартлатса ҫуралаҫҫӗ.

Урамсем тӑрӑх, хӗвелтухӑҫнеле вӗҫӗ-хӗррисӗр обоз иртет. Обозпа пӗрле, шӑннӑ чӑхсем пек хутланса кӗнӗ салтаксем, пуҫӗсене чиксе, лӑпсӑр-лӑпсӑр лавсем хыҫӗсенчен йе йунашар чупаҫҫӗ.

Ҫав шӑнса ӗнтӗркенӗ салтаксемпе пӗрлех лайӑх тумтирлӗ буржуйсем те чакаҫҫӗ. Мамӑк тӳшек айӗсенчен кӑтралантарнӑ пуҫӗсене кӑларса, шурӑ питлӗ, хӗрлӗ туталӑ, хура куҫхаршилӗ майрасем хаклӑ йышши конфетсем ӗмсе выртса пыраҫҫӗ. Офицерсем, вӑл майрасене курсан, пуҫ тайса чеҫт параҫҫӗ. Майрасем офицерсене илӗртсе:

— Вырӑс арми офицерӗсем сывӑ пулччӑр!.. Ур-ра! — тутисемпе лӗх-лӗх-лӗх кулса, куҫӗсене выльантарса илеҫҫӗ.

Салтакĕсем, шăннипе, пĕкĕ пек хутланса кĕнĕ пулсан та, хăйсен йăлине пăрахман:

— Ех, çав майрасене пĕрре чуптăвасчĕ те...- вара... вара, пайан вилсен те ўкĕнĕç йулмĕччĕ...—тесе, шăлĕсене йĕрсе, куçĕсене выљантарса, такăна-такăна, ўкĕ-ўке малала утаççĕ.

Обоз йалан пĕр май туртăнаť. Пырсан-пырсан, чарăна чарăна тăраť. Обоз чарăнсан, салтаксем те чарăнаççĕ. Хусканса кайиччен, ăшăнмала, пĕр-пĕринпе чышкăлашаççĕ, çавăнтах çапăçса та илеççĕ. Унтан каллех хусканса кайаççĕ. Пăртак кайсан, каллех чарăнса тăраççĕ.

IV

Вăл кун—кунĕпе, çĕрĕ-çĕрĕпе, çутăличченех, татти-сыпписĕр обоз иртрĕ, обозпа пĕрле—салтаксем, офицерсем...

Çанталăк çавах улшăнмасť. Йалтан пĕрисем тухса кайаççĕ, вĕсен вырăнне хыçалтан теприсем çитсех тăраççĕ. Ăçта кайаççĕ? Мĕн шырама? Малта вĕсене мĕн кĕтет? Ун çинчен офицерсем те, салтаксем те—нихăшĕ те нимĕн те пĕлмеççĕ. Йалан пĕр май нумай лавсем иртнипе çĕмĕрĕлсе, ланкашкаланса пĕтнĕ çул çинче лашисем те, офицерсем те, салтаксем те тăнкки-танкки пускаласа, такăна-такăна, ўке-ўке утаççĕ. Тайган тăвăр çулĕн

вӗҫӗ-хӗрри курӑнмасҭ. Малта та, хыҫалта та, икӗ йеннипе те хура вӑрман кашласа лараҭ.

Малта, ҫӑра кедр тураттисем хушшипе, инҫетре-инҫетре кӑвак пӗлӗте хырса тӑракан ҫӳлӗ ту тӑррисем курӑнса ларaҫҫӗ. Вӑл тусем тӑрӑх халиччен упасем, тилӗсем, пӑлансем, хиркачакисем тата ҫивӗчӗ шӑллӑ рыҫсем[1] ҫеҫ хуҫа пулса, тӳрӗрен тӳрӗ йарӑнса, йуртса ҫӳренӗ. Ваттисем калана тӑрӑх, вӑл ту таврашне ӑнсӑртран ҫын ҫитсе тухнӑ пулсан та, калле ҫаврӑнайман: вӑл тискер кайӑксен ҫимӗҫӗ пулса йулнӑ. Ҫӗпӗрти чалдунсем[2] вӑл тусем ҫинчен ҫын ӗненмеле мар тӗлӗнмеле халлапсем калаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫав халлаплӑ тусем тӑрӑх, ҫын каласан ӗненмеле мар, пиншер-пиншер ҫынлӑ партизансен отрйачӗсем ҫӳреҫҫӗ, унта урлӑ та пирлӗ сукмаксем хывса пӗтернӗ. Партизансем тискер кайӑксенчен хӑрамаҫҫӗ. Кайӑксем, вӗсенчен хӑраса, таҫта тарса пытанса пӗтнӗ, пӗри те курӑнмаҫҫӗ.

Кайӑк йепле тискер пулсан та, ҫын ӑна тытаҭ-тытатех. Партизансем пушӑ-алӑсемпе мар—хӗҫпӑшаллӑ: хӑшпӗр отрйадсен пулеметсем те, ҫӑмӑл тупӑсем те пур. Анчах вӑл партизан отрйачӗсем тискер кайӑксене хӑратма мар, урӑххисене хирӗҫ, шуррисене

[1] *Рыҫ*—пысӑк кушак йевӗрлӗ тискер кайӑк.

[2] *Чалдун*—тесе Ҫӗпӗрте ӗмӗртен пурӑнакан ҫынсене калаҫҫӗ.

хирĕç хастарлăн çапăçма пуçтараннă; темиçе ĕмĕр тăрăшшĕ чуралăхра пураннă рабочисемпе хресченсене ирĕклĕх пана, çĕр çинче коммунисăмлă общчĕствă тума тăрăшакан большевиксен партин Хĕрлĕ çарне пулăшаççĕ вĕсем.

* * *

Обоз, вĕçĕ-хĕррисĕр тайга çулĕпе, çав таçта инçетре кăвакарса тăракан тусем йеннеле шăвăнат. Ирĕксĕр хăваланипе пыракан салтаксем, ăшăнасшăн пулса, тăлăх чĕпĕсем пек, мĕскĕнĕн лăпăс-лăпăс чупаççĕ. Хăш-хăш лашин пуçĕнчи йĕвенĕ хыврнса аннă та çапкаланса пырат, хăшĕсен тилкепи çуна тупанĕ айне хĕсĕннĕ те, вĕсем, пуçĕсене пĕшкĕртсе, курпунĕсене кăларса утаççĕ; хăшĕн урхалăхĕ, хăшĕн турта пăйавĕсем татăлса пĕтнĕ.

Мамăк тӳшек айĕсенче выртса пыракан хĕрлĕ тутала майрасем çеç, офицерсене хăйсем çине пăхтарасшăн пулса, хе-хе-хе! хи-хи-хи!—кулса, выртса пыраççĕ. Хăйсем тăтăшах:

— Иркутск инçе-ши?..

— Йапунсем сире пулăшма час çитеççĕши?—тесе ыйтса пыраççĕ.

Офицерсем кĕскен çеç тавăраççĕ:

— Инçе-ха... пĕр-икĕ пин çухрăм...

— Йапунсене кĕтетпĕр...—теççĕ вĕсем.

Обоз пуçĕ пĕр тарăн вар хĕррине пырса çитрĕ. Çӳлтен пăхсан—варăн тĕпĕ кăшт çеç палăрать, çав тери тарăн. Анмали йенчи те, хăпармали йенчи те сентре çинчен анас çĕрти пек чăнкă. Лавсем пĕрин хыççăн тепри анса кайрĕç. Вар тĕпне анса çитнĕ çĕре çуна çине—çуна, лаша çине—лаша, офицер çине—салтак, салтак çине—офицер, майра çине—майра, офицер çине—офицер утлана-утлана, купаланса тăчĕç. Унта кăшкăрашу, пĕрне-пĕри ылханни, вăрçă-çапăçу пуçланса кайрĕ.

Çул тăвăр, айăккинеле пăрăнма йур тарăн, кайала çавăрăнма та çук, чăнкă. Çӳлтен йалан лавсем айалала анаççĕ. Вар тĕпĕнче пăтă пек пăтранаççĕ: салтаксем, лашасем, офицерсем, хĕрарăмсем...

Пăрлă тинĕс йенчен çил тухрĕ. Тайга вăрманĕ, вăйлă çилпе кăнтăр йенне тайăлса, тахçанах витĕннĕ шурă пĕркенчĕкне хавассăн хывса тăкрĕ. Йăвăç тăррисем пĕр-пĕринпе чĕрик-чарик! калаçаççĕ.

Вартан лавсем хăпарни курăнмасть. Пурте варала анаççĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр обоз ланкашкалă çулпа пĕрех май çав тарăн вар йеннеле туртăнать. Лашисем пуçĕсене чиксе, хăлхисене лăшт йарса, йăвăр лавĕсене аран-аран туртса, тапса пусса утаççĕ. Утайми пулнисен шăпи çул айăккинче: вĕсене, пăрса, виçĕ аршăн тарăнĕш йур ăшне путарса хăва-

раççĕ. Çул тăрăх ăçта пăхнă унта-ывăннă лашасем. Вĕсем тарăн кĕрĕт ăшĕнче путса выртаççĕ; унтах—çĕмĕрĕк çунасем, ванчăк хăмăтсем, хуçăк пĕкĕсем...

Хĕвел анасси инçе мар. Çул хĕрринчи лапсăрка кедр айĕнче пĕр салтак, француз шинелĕпе урине америк пушмакĕ тăхăннă-скер, аллисене кăкăрĕ çине хĕреслетсе хунă та пĕлĕтеле пăхса выртать; унăн куçĕсем шăнса пăрланнă кĕленче тĕслĕ шап-шурă, питçăмартийĕсем хăрăмпа хуратнă пек хуп-хура; типсе çуркаланнă пашалу пек хулăм тутисем темĕн каласшăн мăкăлт-мăкăлт тăваççĕ, анчах чĕлхи çĕтнĕ—çаврăнса калаймасть; сасси те пĕтнĕ—тухмасть, сывлăшĕ те хупланнă. Ун йĕри-тавра вăтăр-хĕрĕх салтак пуçтарăнса тăнă та çилĕллĕн ӳпкелешсе пăхса тăраççĕ.

— Ку тайгаран тухасси пулмасть... Пурсăмăр та çакăнта шăнса ларса, выçă вилсе пĕтетпĕр,—тесе йăвăррăн сывларĕ пĕр хура сухаллă ватăрах салтак; унтан вăл тайга çинеле пăхса, шинелĕ аркине таврăнса, тăм илме пуçланă питçăмартине йăвала пуçларĕ.

— Тайгаран хăтăласси ним те мар. Вăрçа пĕтерес пулать. Унсăрăн—апла та вилĕм, капла та,—шакăлтатса калаçа пуçларĕç салтаксем.

Унччен те пулмарĕ;

— Марш, малала! Мĕн купаланса тăратăр?.. Курман-им халиччен вилнĕ ҫынна?.. Сволăчсем! — тесе пыр тĕпне хыртарса кăшкăрчĕ пĕр прапăршчик.

Салтаксем вăрҫакан прапăршчик йенне ҫаврăнса та пăхмарĕҫ. Пуҫĕсене чиксе, кедр айĕнче хускалмасăр выртакан салтак ҫине тинкерсе пăхса тăчĕҫ.

— Есĕ ху сволăч! — терĕ ҫавăнтах хура сухал, самахĕсене шăлĕсем витĕр хĕстерсе кăларса.

Прапăршчик хура сухал сăмахĕсене ăнланмарĕ. Пуҫне чиксе малала утрĕ...

Салтаксем, пĕр ҫĕреле пуҫтарăна-пуҫтарăна, вут куписем чĕрте-чĕрте йачĕҫ. Урамра та, ҫул тăрăх та, тарăн вара ҫитичченех пушар пек вут куписем кĕрлесе ҫунаҫҫĕ. Салтаксем, котолоксемпе йур ирĕлтерсе, ҫимели пĕҫерессшĕн чупкалаҫҫĕ.

Каҫ пулчĕ. Хĕвел анса тĕттĕмленчĕ. Тинĕс пек кăвак тăрă пĕлĕт ҫине вĕҫҫĕр-хĕрсĕр ҫăлтăрсем тухса тулчĕҫ. Вĕсен хушшине ҫĕнĕ ҫын пек сарă уйăх тухса тăрса, тĕнчене ҫутата пуҫларĕ. Пăрлă тинĕс йенчен вĕрекен ҫил те шăпах лăпланчĕ. Купăс пек тĕрлĕ сасăсемпе шăхăракан ҫуна тупанĕ сассисем те лăпланчĕҫ. Тайга та кашламасть. Йăвăҫ тураттисем те силленмеҫҫĕ. Анчах салтаксем кăшкăрашма чарăнмаҫҫĕ, ĕлĕкхи

пекех вут куписем йӗри-тавра карталанса, кӑшкӑрса тӑраҫҫӗ:

— Пиҫет-и?..

— Пар-ха мана та...

— Ай, пӗҫерет!..

— Ме.

— Ҫи.

— Ха-ха-ха!..

— Тыт!

Ҫав хушӑрах хӑшӗ-пӗри тата вут хӗрринчех хӑрлаттарса ҫывӑрни те илтӗнет. Лашисем выҫӑхнипе, тата ӑшӑнасшӑн пулнипе, пуҫӗсемпе ҫуна ӳречисене, турта вӗҫӗсене кӑтӑр-кӑтӑр хыраҫҫӗ.

Тарӑн вар йенчен пӗр офицер хашкаса чупса килет, хӑй сывлӑшне ҫавӑраймасӑр кӑшкӑрать:

— Господа офицерсем! Лекрӗмӗр! Малти ҫула паризансем пӳлсе илнӗ. Малала ҫул ҫук...

Ҫав вӑхӑтрах ҫулӑн сылтӑм йенчен пӗр хулӑн сасӑ йантӑраса кайрӗ.

— Бат-али-о-о-он... пли!

Сасартӑк таҫтан, айакран, пулемет ҫатӑртата пуҫларӗ:

— Тра-та-та!.. тра-та-та!..

Ёне пукрисем пек тӗрлӗ сасӑсемпе йӑнӑшса-шӑхӑрса, салтаксен пуҫӗсем урлӑ ирте-ирте кайса, пуљӑсем йӑвӑҫ вуллисене ҫӑт та ҫӑт! пырса ҫапӑнаҫҫӗ.

Вут куписем тавра карталанса, ăшăнса тăракан салтаксем хăшĕ çавăнтах чăркуçлана-чăркуçлана анчĕç, хăшĕсем, ăсансем пек, кăпăш йур ăшне чăма-чăма кĕрсе ӳкрĕç. Пĕр вăхăта çанталăк шăп пулчĕ. Чарăнма пĕлмен салтаксен сассисене тайга çăтса йачĕ.

Çăра йăвăç вуллисем хушшисенчен партизансем сике-сике тухрĕç.

— Парăнăр!

— Офицерсене тытăр!..—кăшкăраççĕ партизансем.

* * *

Çанталăк çавах тӳсмеле мар сивĕ. Çăлтăрсем, тинĕс хумĕ çинчи пек чӳхенсе, çĕре персе анас пек вылђанса тăраççĕ. Уйăх, тӳпере шăнк хытса ларса, хăйĕн сивĕ çутипе тайга çине çутатать. Тайга пĕр вăхăта пысăк шухăша кайса итлесе ларчĕ. Нумай та мар вăхăт иртсен, малта та, хыçалта та, урамсенче те, тăкăрлăксенче те, пӳртсенче те:

— А-а-а! Шуйтансем!..

— Мăн хырăмсем!

— Сирĕн пирки...

— Тарать!..

— Тыт!

— Е-е-е...лекрĕн-и!

— Буржуй!..

— Йун ĕçекен!

— Ак сана!

— Вил!—тесе шăл витĕр кăшкăрашни, пĕтĕм йала, тайгана хупласа хучĕ. Пăшал сасси çук... Анчах уйăх çутипе кедр тураттисем хушшисенчен хĕçпе касни, сăнăпа чикни курăнса тăрать. Ку ĕçе партизансем мар, салтаксем хăйсемех, никам хушмасăрах, ĕçлеççĕ.

Партизансем татти-сыпписĕр тайгаран çул çинеле тухаççĕ...

Вĕсемшĕн хĕрĕх градуслă Çĕпĕр сивви ним те мар. Аллисенче алсисем те çук. Хĕрлĕ хăйу çыхнă çĕлĕкĕсем ĕнсисем çине кайса ларнă; питçăмартисем тăрăх пăрçа пĕрчи пек тар йухать.

Уйăх çурçĕр иртиччен çутатса тăчĕ; унтан ĕшеннĕ пек пулчĕ те, майĕпен шуса, тайга хыçне анса пытанчĕ. Çăлтăрсем çутăличченех выљаса тăчĕç. Тайга, пысăк шухăша кайса, ниçта пĕр йăвăç тураттине силлентермесĕр, хăй ăшĕнче мĕн пулнине итлесе ларчĕ...

## VI

Çĕрле, уйăх çути пулсан та, ку вăрçă пит тискер пекех марччĕ. Халĕ, тул çутăлса, курăна пуçласан, çын каласа ĕненмеле мар: урамра, тăкăрлăксенче, пӳрт умĕсенче, çул тăрăх таран вара çитиччченех – пур çĕрте те

çын виллисем йăванса выртаççĕ. Асăнма та хăрушă: хăшĕн хевти пур—пуçĕ çук, хăшĕн пуçĕ пур—хевти çук; хăшĕн хырăмне штыкпа чиксе çурнă, хăшĕн аллине, хăшĕн урине хĕçпе касса татнă; хăшĕсем вилеймен те-ха, чĕтресе выртаççĕ, лараççĕ, хăшĕсем ура çинче тăраççĕ. Пурте вĕсем хĕвел анас умĕн çеç начаљник пулнăскерсем: офицерсем, фелдфебĕлсем, унтĕр-офицерсем; хутран-ситрен йефрейтăрсем те курăнкалаççĕ. Вĕсен хушшинчех тата лайăх тумтирлĕ, пысăк хырăмлă, кĕпшек сăнлă буржуйсем те пур. Ĕнер çеç: „Вырăс арми офицерĕсем сывă пулччăр! Урра!“—кăшкăрса, лĕх-лĕх! хи-хи-хи! кулса, мамăк тӳшек айĕнче выртса пынă шурă питлĕ, хĕрлĕ тулалă чечен майрасем çӳçĕсене лапăстаттарса, тирпейсĕр саркалanса, хăшĕ ӳпне, хăшĕ месерле выртаççĕ; ĕнерхи шурă пичĕсем хăрăм пек хура, хĕрлĕ тутисем тăхлан пек кăвак. Камсем çав тери мăшкăллана-ши вăл офицерсемпе майрасенчен? Никам та мар, хăйсен салтакĕсемех. Ĕнер çеç вăл салтаксем: çав майрасене пĕрре чуптусан, вилме те хатĕр, тетчĕç, пайан акă вĕсем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Маннă. Кирлĕ мар вĕсем.

Тарăн вар йенчен кайала, ланкашкаланса, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ çулпа, айĕн-çийĕн йăванса выртакан лавсем урлă такăна-такăна, ӳке-

ӳке, хуркайаксем пек умлăн-хыçлăн, мăйĕсене часса, курпунĕсене каларса, утаççĕ салтаксем.

Урамсем, тăкăрлăксем, çулсем тăрăх, пуçĕсене çĕреле чиксе, çын чышсан йăванса каймала пек выçă лашасем, хăшĕ хăмăтпа, хăшĕ икĕ туртапа, хăшĕ кӳлнипех, çийесшĕн антăхса, кĕтӳри пек унтала-кунтала уткаласа çӳреççĕ. Анчах та çимели çук.

Ăçта пăхнă унта пăшал, пулемет, тупă урaписем, патрон йешчĕкĕсем, апат-çимĕç пĕçерекен кухњăсем йăванса выртаççĕ. Никама та нимĕн те кирлĕ мар. Шеллемеççĕ те. Çул çинче кансĕрлесе выртаканнине иле-иле, айăккала, йур çинеле пăрахаççĕ.

## VII

Çутăлчĕ. Çанталăк ăшăтрĕ. Уйар кăвак тӳпе сарăлса выртакан вилесем çине пăхса тăма вăтанчĕ пулас, часах лăпкăн йур çуса вĕсене шурă пирпе витнĕ пек витсе хучĕ те, каллех уйартрĕ.

Йур çуса иртнĕ хыççăн çанталăк пушшех ăшăтрĕ. Çил те çук — лăпкă, йĕплĕ кедр тураттисем те хумханмаççĕ. Ĕнер çеç тайгара хайар та тискер сасăсем йантрашатчĕç. Вырăсла, тутарла, чăвашла, мăкшăла сасăсем илтĕнетчĕç:

— Долой войну!

— Сукăш!
— Домой!
— Ӳте!
— Килеле-е-е-е!..
Кĕрлет тайга. Савăнаҫ тĕнче.

* * *

Пӳртсенче—партизансем: хăшĕ сак ҫине, хăшĕ кăмака ҫине, хăшĕ урайнех чăсăла-чăсăла ӳкнĕ те канса выртаҫҫĕ. Ҫывăраҫҫĕ, тетĕр пуљ? Ҫук, ҫывăрмаҫҫĕ. Йăвăр ĕҫ туса ывăннă хыҫҫăн канса ҫеҫ выртаҫҫĕ. Авăн ҫапса, ака туса, тырă вырса, шахтăра ĕҫлесе ывăннă, тетĕр пуљ? Ҫук, вĕсем тĕнче ĕҫне ĕҫлесе ывăннă. Анчах йепле ывăннă пулсан та, пĕри те ывăннă тĕслĕ мар, куҫĕсем сивĕ каҫхи ҫăлтăрсем пек йăлт-йăлт выљанса ҫеҫ тăраҫҫĕ. Пайанхи кун вĕсем рабочисемпе хресченсен ĕмĕрхи тăшманĕсене ҫĕнтернĕ, ҫавăнпа кăшт та пулин канма вăхăт ҫитнĕ. Канаҫҫĕ. Хĕрлĕ ҫар ҫитессе кĕтеҫҫĕ. Малала ĕҫсем татах пур-ха, вăл ĕҫсене вара Хĕрлĕ ҫарти йулташĕсемпе пĕрле пĕтерĕпĕр, тесе шанаҫҫĕ.

Ĕнер ҫеҫ йалта, карчăк-кĕрчĕксенчен, ачапăчасенчен пуҫне урăх никам та курăнмасҫ̌чĕ. Пайан кашни килрех арăмсем те, хĕрсем те туллийех, пурте уйав вăхăтĕнчи пек тумланнă. Партизансене канма кансĕрлес

мăр тесе, çěнě çынсем пек, йăпăр-йăпăр, чěрне вěççěн утса çÿреççě. Кăмакисем, вучаххисем кěрлесе çунаççě; вěсенче тěрлěрен апат-çимěçсем пиçеççě. Ачи-пăчисем те пайан ěнерхи пек сăмсисене çăварěсем тăрăх йухтарса макăрмаççě, вěсем шăпах. Çийес килсен çеç:

— Анне, мемме...—ыйтса илеççě те, шăпах, мăшăлтатса çеç чăмласа ларaççě. Хăшěпěрисем, хăйулăраххисем, партизансемпе выљаççě.

Хěрарăмсем, апат-çимěçсем пиçсен, канса выртакан партизансене:

— Йулташсем, тăрса апатланăр. Хырăмăрсем выçнă пуљ. Çинě хыççăн тата канăр,— тесе майěпен, йăвашшăн ачашласа чěнеççě.

Партизансем, ăшă пÿртсенче тутлă ăйхă пуснă куçěсене йăваласа тăрса, ларса апатланаççě; хăшěсем каллех канма выртаççě, хăшěсем харпăр килěсенчи хěрарăмěсемпе ачи-пăчисем çинчен йе килти хуçалăхěсем çинчен калаçаççě.

Пайан пуриншěн те савăнăç çитнě; çанталăк ăшăтнипе пулас, автансем те кунěпех чарăна пěлмесěр авăтаççě, чăххисем те вěсем тавра вěçěмсěр кускалаççě. Урамсенче, картишсенче, пěрне пěри тахçан курман хыççăн тěл пулнăран савăннă пек, çерçисем чěвěлтетсе, сиккелесе çÿреççě.

Ахаљ мар пайан Çĕпĕр хĕвелĕ пĕтĕм тĕнчене çап-çуттăн çутатса тăраť. Хăйĕн çута пайăркине чӳречесем витĕр сапаласа кӳртсе: канăр, йулташсем, канăр,—канма вăхăт çитнĕ, ан хăрăр!—тесе каланă пек туйăнаť.

Виçĕ çул хушши канлĕ çывăрман партизансен, тутлă ăйхă куçĕсем тулли килнипе, куçхупаххисем хупăнаççĕ.

Тайга шăппăн итлесе лараť.

---

# ДИРЕКТĂР

## I

Çĕр кăмрăкĕ кăларакан шахтă директăрĕ— Куçма Петрович Карпейĕв хăйĕн кабинетĕнче, хĕрлĕ пуставпа витнĕ, урисене çавăрса тунă йуман сĕтел хушшинче ларать. Сĕтел çинче шурă хут листисем сарăлса выртаççĕ. Куçма Петрович сĕтел çинелле ўпĕнсе ларнă та, ниçтала пăхкаламасăр, васкаса çырать.

Кабинетĕнче никам та çук. Шăп. Хăйне хирĕç çтена çумĕнче çакăнса тăракан сехет çеç ывăнма пĕлмесĕр: чик-чик-чик! пĕр вĕçĕмсĕр шаккать, стрелкисем вăхăт вуникĕ сехет çитнине пĕлтереççĕ.

Чўрече витĕр пиллĕкмĕш номĕрлĕ шахтă стволĕ курăнать. Унăн умĕнче шахторсем кĕпĕрленеççĕ: пĕрисем шахтăран тухаççĕ, теприсем шахтăна анаççĕ. Çменă улшăнать. Аллисенчи ламписем йăлтăртатса çунаççĕ. Шахтăран тухакансем труба тасатакансем пек хуп-хура, шăлĕсем çеç йăлтăр шурă курăнаççĕ. Хăйсем ĕç пĕтерсе тухнипе савă-

нăçлăн кулкаласа калаçаççĕ. Стахановĕцсем пулас. Ăмăртура мала тухнă:

— Епĕр нормăна виçĕ хут ытла тултартăмăр. Сире те çавна сĕнетпĕр...

Шахтăна анаканнисем те парăнасшăн мар:

— Есĕр виçĕ хут тултарсан, епĕр тăватă хут тултарăпăр,—тесе хирĕç тавăраççĕ.

Откатчиксем те хăйсен забойщикĕсенчен тăрса йуласшăн мар, йулашки кăмрăкпа тултарнă вагонеткисене тĕртсе кайса, отвал çине йăвантара-йăвантара йараççĕ.

Çтена çумĕнчи сехет вуниккĕ çапрĕ. Директăр çырма чарăнса, пуçне çĕклесе каллĕ-маллĕ чупкалакан шахтŏрсем çине чӳрече витĕр пăхрĕ. Унтан ручкине хурса, сĕтел çине аллисемпе чавсаланса ларчĕ. Çавăнтах унăн куçĕсем умне иртнĕ пурнăçăн мĕлкисем тухса тăчĕç Акă вĕсем. Çирĕм çул ĕлĕк Куçма Карпейĕв та çав пиллĕкмĕш номĕрлĕ шахтăра забойщик пулса ĕçленĕччĕ. Вăл вăхăтра Куçма политикă çинчен пĕлме мар, шухăшлама та пултарайман. Унăн пĕтĕм хĕçпăшалĕ: пĕр тимĕр кĕреçе, пĕр кайла, тата шахтŏр лампи пулнă. Çавсем унăн хырăмне тăрантнă. Кайлипе кăмрăк чавнă, кĕреçипе хырнă, лампипе забойа çутатнă.

Куçма хăй çине ĕçре те, праçникре те шыв витмен брезент пиншак, пуçне сарлака çунатлă пир шĕлепке, урине тăвăр кунчалă

обуткисем тăхăнса çӳренĕ. Вуникĕ çула çитсен, вăл ашшĕпе пĕрле шахтăна канган пулса ĕçе кĕнĕ.

Куçма çамрăклах йурлама, ташлама, кирлĕ мар сăмахсемпе кăшкăрса вăрçма йуратнă. Ун чухне вăл хăй те пĕлмен; çынсем мĕн хăтланнă—Куçма та, упăтеле, çавна тунă. Ĕçрен тавăрăнсан, ыраш çăкăрĕпе, сахăрсăр чей ĕçнĕ. Хăш чухне çăкăрĕ те çителĕклĕ пулман. Вăл вăхăтра пĕр Куçма çеç мар, нумайĕшĕ шахтăра çапла выçăлă-тутăлă çапкаланса пурăннă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ,—çиме çитмен.

Куçма, укçи пур вăхăтра,—каçсерен, хăш чухне кăнтăрла та—ерех-сăра сутакан çуртсене кайнă: унта ерех ĕçнĕ, картла выљанă; ĕçсе ӳсĕрĕлсен, кампа лекнĕ унпа çапăçнă. Ӳсĕрскерне час-часах каталашкăна хупа-хупа лартнă, унта сахалах мар унăн çамрăк йунне хăнкăласем ĕçнĕ. Пĕрре çеç мар ăна полицейскисем ăнтан йариччен хĕненĕ. Каталашкăра выртса урăлсан, мухмăрла пуçĕпе, чирлĕ çын пек каллĕ-маллĕ тайкаланса, килне тавăрăннă; хура куçĕсем хĕп-хĕрлĕ йуна пĕвеннĕ; хĕненипе пичĕ-куçĕсем кăвакарса пĕтнĕ; ӳт-тирĕ вĕлтĕренпе вĕтеленĕ пек чикĕшсе ыратнă. Ку сахал-ха; килне тавăрăнсан, ăна ашшĕ йытта вăрçнă пек вăрçнă: вăл час-часах хăй аллине мĕн лекнĕ çавăнпа

тытса çапнă, урайĕнче сĕтĕркелесе çӳресе хĕненĕ. Хăш чухне амăшĕ, ывăлĕ хутне кĕрсе, стариккине чарнă:

— Çитĕ ĕнтĕ, хĕнесех вĕлерес тетĕн-им тата? Йытă çури мар вĕт вăл. Ырă-и, усал-и— хамăрăн ача. Ху çамрăк чухнехине мантăн-им? Ху та вĕт, ытларах пулмасан, ывăлунтан кайах марччĕ,—тенĕ амăшĕ.

— А-а-а... Есĕ ывăлу хутне кĕме-и-ха?!. Ак сана!—Петĕр, ывăлне хĕнеме пăрахса, арăмне хĕнеме пикеннĕ. Çапла вара ывăлĕ пĕр çĕрте, арăмĕ тепĕр çĕрте, ăнтан кайса, йун йухтарса выртнă.

Петĕр забойра ĕçлесе ывăннă пек хашкаса сывланă. Çамки çинчи тарне кĕпи çаннипе шăлса типĕтнĕ:

— Ых, тĕнче!..—тесе йăвăррăн сывланă.

Çапла вара ашшĕ ăнтан йариччен хĕненĕ хыççăн, Кусма пĕр вăхăта лăпланса пурăннă: хăш чух ерне ытла ниçта тухмасăр килĕнче ларнă. Вăхăт иртнĕ май хăйне хĕненине маннă. Хĕнесе ыраттарнă ӳчĕ тӳрленнĕ. Унтан Кусма каллех хăйĕн ĕлĕкхи пурнăçне пуçласа йанă: карт, ерех каллех унăн аллинче пулнă.

Вунултă çула çитсен, Кусма хăйсене хăйсем укçала сутакан хĕрарăмсемпе паллашнă.

Кусма çирĕм çула çитсен, ашшĕпе амăшĕ ăна авлантарас тесе шутланă. Вăл хăй те

хирӗç пулман. Анчах шахтăра ăна „йурăхлă“ хӗр тупайман. Куçма хăй качча „илес“ текен хӗрсем ăна пыман, „пырас“ текеннисене вăл хăй илмен.

Çапла вара Куçма авланмасăрах пурăннă. Ӳссе çитӗнсен, вăл ашшӗ-амăшне пӗтӗмпех пăхăнми пулнă. Хăй мӗн тăвас тенӗ—çавна тунă. Чаракан пулман. Полицейскисем çеç ăна хăратнă. Хăш чухне вăл вӗсене те пăхăнсах тăман, тӳрӗ лексен—çăвар урлă шартлаттарнă. Куншăн вара ăна полицейскисем каталашкăра упалентерсе çӳретсех хӗненӗ .. Мӗн чухлӗ патак çимен пулӗ вăл вӗсенчен?

Çапла пурăннă хушăрах Куçма ашшӗ Петӗр, забойра кăмрăк айне пулса, хăрах урине шалтăрах хуçнă. Урасăр йулсан, „ӗçе йурăхсăр“ тесе, ăна ӗçрен кăларса йанă. Нумайах та вăхăт иртмен, чахоткăпа чирлӗ амăшӗ вилсе ыртнă. Ашшӗ, шахтăра хырăм тăрантарайман пирки, йала тухса, ыйткаласа çӳренӗ. Куçма пӗр-пӗчченçи тăрса йулнă. Ашшӗпе амăшӗнчен уйăрăлсан, вăл пушшех начар пурнăçа тухса кайнă. Анчах ӗçесрен, картла выљасран çапах йулман. Çийес йенчен выçăлă-тутăлă пурăннă. Кантуртан аванс укçа иле-иле, парăма кӗрсе кайнă. Ун çинче çӗр тенке йахăн парăм шутланнă. Çавăн пирки ăна йулашкинчен аванс та пами пулнă:

— Малтан парӑмусемшӗн ӗҫлесе тат,— тенӗ кантуртан.

Вӑл урӑх шахтӑна куҫса кайма шухӑш тытнӑ. Анчах ӑна, парӑмне ӗҫлесе татмасӑр, кантуртан паспӑртне паман. Паспӑртсӑр урӑх шахтӑсенче ниҫта та ӗҫе илмен.

Мӗн тӑвас? Ӑҫта кайас? Камран пулӑшу ыйтас? Куҫма хутне кӗрекен никам та пулман. Ӗҫленӗ. Ӑҫта ҫитнӗ, унта выҫӑлӑ-тутӑлӑ ҫапкаланса ҫӳренӗ. Кантурти парӑмне ӗҫлесе татас тесен, сахалтан та икӗ уйӑх ӗҫлес пулаҫ. Аптӑраса ҫитнӗ. Пӗр вӑхӑтра вӑл йе шыва сикес, йе ҫакӑнса вилес тесе те шухӑш тытнӑ. Ҫакӑнас тесе, уборнӑйа кӗрсе пӑхнӑ. Чылай вӑхӑт унта шухӑша кайса ларнӑ. Ҫук, йепле йӑвӑр пулсан та, ҫут тӗнчех ырӑ пулнӑ. Малта пурнӑҫ пуласси курӑннӑ пек туйӑннӑ. „Ухмах, мӗн шухӑшлатӑн есӗ ҫамрӑк пуҫупа! Вилсен мӗн усси?!"—тесе каланӑ пек илтӗннӗ. Унтан вӑл: „Ку тӗнчере ӗҫлесе хырӑм тӑрантарайас ҫук, вӑрра тытӑнас. Пуйан ҫынсене вӗлерсе, ҫаратса ҫӳрес. Апла луччӗ—йе труках пуйса кайӑп, йе тӗрмене тытса хупӗҫ",—тесе шухӑшланӑ. Чӑн, Куҫма ку ӗҫе тума та пултарнӑ. Вӑрлама, ҫаратас ӗҫе йерсе кайасси вӑл—ҫӑмӑл ӗҫ. Тата Куҫма йӗри-тавра тӗрлӗ вӑрӑсемпе ҫын вӗлерекенсем те туллийех пулнӑ. Пурте вӗсем ӗҫҫынни ӗнси ҫинче тӑранса пурӑннӑ.

Ĕççыннисене тĕрлĕ йенчен, тĕрлĕ меслетсемпе çаратнă. Тĕнчи çавăн пек пулнă: пĕрисем ĕçленĕ, çавах та хăйсем выçăлă-тутăлă, çĕтĕк-çатăк çӳренĕ; теприсем ĕçлемен, çавах та тутă пурăннă: мĕн ĕçес, мĕн çиес тенĕ— çавна ĕçнĕ-çинĕ, мĕн тăхăнас тенĕ—тăхăннă. Вĕсемшĕн пурнăç пыл та çу пулнă.

Анчах Куçма хăйĕн вăрă пулас шухăшне пурнăçа кӳртеймен. 1914-мĕш çулта, Куçма „телейне“ пула, империалиссем, „турă хушнă тăрăх“, тĕнче вăрçине хускатса йанă. Мĕншĕн? Кама кирлĕ пулнă вăл вăрçă? Ăна Куçма пеккисем пĕлме пултарайман.

Куçма, йепле те пулин кантуртан паспăртне аллине илсе, ăçта та пулин тухса тарма шухăшласа çӳренĕ. Пĕрре вăл кантура пырса кĕнĕ. Ăна шахтă управљайушчийĕ Мурзин хăй кабинетне чĕнсе кӳртнĕ те:

— Ну, Куçма Карпейĕв, ху ирĕкӳпе салтака кайассу килет-и санăн?—тесе ыйтнă.

Куçма шухăшласа тăман:

— Кайас... Паспăрта алла паратăр-и?

— Паратăп,—тенĕ Мурзин.

Куçма хăй ирĕкĕпе салтака кайма килĕшнĕ, мĕншĕн тесен шахтă пурнăçĕ ăна çав тери йăлăхтарса çитернĕ.

Мурзин Куçмана паспăртне панă:

— Ху çинче шутланакан сакăрвун ултă тенкĕ парăма, салтакран чĕрĕ тавăрăнсан,

ĕçлесе татăн. Вĕлерсен—турă каçарĕ,—тенĕ мăшкăлласа. Унтан Мурзин: „çул çине—кучченеç“, тесе, Куçмана пилĕк тенкĕ ылттăн укçа панă.

— Кунпа трактире кĕрсе пĕрре ĕç,—тенĕ вăл кулса. Унтан Куçма шахтă управљайушчине „Вăрçăран чĕрĕ тавăрăнсан, парăма ĕçлесе татăп“, тесе подпискă панă. Анчах Куçма ун чухне хут çине алă пусма пĕлмен, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра шахтăра ĕçлекенсен ачисене ваљљи шкул пулман, вĕсене çырăва вĕрентмен. Çавăнпа та Куçмашăн унпа пĕрле хăй ирĕкĕпе салтака кайакан йулташĕ Чуркин алă пуснă. Чуркинăн ашшĕ кăшт çырăва пĕлнĕ. Вăл хăйĕн ывăлне вĕрентнĕ.

Куçма, паспăртне аллине илсен, тем пек савăннă. „Халĕ ĕнтĕ салтака каймасăр, урăх шахтăна кайса кĕрсе ĕçлеме те пултаратăп“,—тесе шухăшланă. Анчах, унăн пурĕпĕрех салтака кайма çулĕ çитнĕ. Апла та, капла та каймалах пулнă. Кантуртан тухсан, вăл унăн кунăн пăхкаласа тăнă. Кĕсйинче управљайушчи „кучченеç“ тесе панă пилĕк тенкĕлĕх ылттăн выртнă. Вăл укçа ăна чĕрĕ чунлă пекех айăккинчен тĕкнĕ: „Айта, пурĕпĕр... Йулашкинчен пĕрре ĕçсе йул! Салтака кайсан—те тавăрăнайатăн, те çук?“—тесе каланă пек туйăннă. Унтан Куçма тахçантанпа çўреме вĕреннĕ ерех-сăра

сутакан çурт йеннеле тӳрех утнӑ. Вӑл çурт хуçи хӗрарӑм пулнӑ. Вӑл хӗрарӑм, ерех-сӑра сутнинчен пуçне, тата „хӗрсемпе“ те суту тунӑ. Унӑн хӑйсӗр пуçне пилӗк „хӗр“ пулнӑ. Хӑш чухне „хӗрӗсем“ çитмен, вара хуçа арӑмӗ хӑй те арçынсен кӑмӑлне тултарнӑ. „Хӗрӗсене“ вӑл сехетне аллӑшар пуса сутнӑ. Хӑйшӗн çитмӗл пилӗк пус илнӗ.

Куçма çав каçхине хӑйне мӗнле кирлӗ çапла ӗççе ӳсӗрӗлнӗ. Унтан трактир хуçи арӑмне çӗр выртасшӑн пӗр тенкӗ укçа тӳленӗ те, пружинӑллӑ кроватӗ çине йӑванса кайса, çывӑрнӑ. Ирхине, ӑйхи тӑрансан— вӑраннӑ, хыпаласа пӑхнӑ, çумӗнче хуçа арӑмӗ пулман. Мухмӑрлӑ пуçӗ çурӑлса тухас пек ыратнӑ. Кӗсйине хыпаласа пӑхнӑ—анчах унта мухмӑр тӳрлетме пӗр пус та пулман. Тутисене çыртса ыраттарса пӗтернӗшӗн, Куçма хуçа арӑмӗ çине çав тери çиленсе çитнӗ. Ӑна çӗрти-çӳлтине хӑвармасӑр вӑрçса пӗтернӗ. Унтан шыв витмен брезент пиншакне тӑхӑнса, хуçа арӑмӗн пичӗ çине лачлаттарса сурнӑ:

—Проститутка!—тесе кӑшкӑрнӑ.

— Фу, фулиган!—тесе, сурчӑклӑ питне алтутрипе шӑлса типӗтнӗ хуçа арӑмӗ.

Çапла вара Куçма „Хӑй çуралса ӳснӗ çӗр-шыва тӗрлӗ тӑшмансенчен сыхлама“ салтака тухса кайнӑ.

## II

Салтакра Куçма пĕр Каратай хушаматлă салтакпа туслашнă. Каратай çырăва лайăх пĕлнĕ. Вăл Куçмана икĕ уйăх хушшинчех çырăва вĕрентсе çитернĕ. Çакăн хыççăн Куçмана, хăй ирĕкĕпе салтака килнĕ доброволец тесе, учебнăй командăна вĕренме кӳртнĕ. Унта вăл, хăй тăрăшнипе, тата авантарах çырăва вĕреннĕ, арифметикăпа паллашнă. Кĕнеке-хаçатсем вула пуçланă. Унăн куçĕсене хупласа тăракан хура чатăр сĕвĕнсе ӳкнĕ пекех туйăннă. Вăл тĕнче çине урăхла пăха пуçланă.

Учебнăй командăран вĕренсе тухсан, Куçмана маршĕвăй ротăна йанă. Унта ăна отделени командирĕ туса хунă. Унтан фронта ăсатнă.

Фронта çитсен, ăна пушшех те тăн кĕнĕ. Тинех вăл вăрçă мĕнле иккенне чухласа илнĕ. Ик-виç уйăх хушши мунча кĕмен. Кĕпи-йĕмминче пыйтă-шăрка кĕтӳпе пулнă. Вĕсем çĕрĕн-кунĕн канлĕх паман, йунне ĕçнĕ. Çыру тавраше ниçтан та илмен. Хăй те çырман. Камран çыру илтĕр? Кам патне çыртăр? Тăванĕсем пулман. Йăвăç уралă ашшĕ йулнă та, анчах Куçма вăл ăçта пурăннине пĕлмен.

Вăрçă—чăн-чăн вилĕм вăрçи пулнă. Кунĕн-çĕрĕн тупă, пулемет, пăшал сасси кĕрлесе

тăнă. Пĕлĕтре аэроплансем хăлат пек йавăнса вĕçсе çӳренĕ. Унтан çĕлен пек шăхăрса бомбăсем аннă. Салтаксем çине лексен, вĕсем сĕлĕ пĕрчисем пек таткаланса сирпĕннĕ. Çак хăрушлăха кура, Куçма фронтран пăрахса тарма шухăш тытнă. Анчах тарса ĕлкĕреймен, ăна снарйад катăкĕ лексе суранлатнă, вара вăл пĕр вăхăта ăнтан кайнă. Вăрçă уйĕнчен кам илсе тухнă—Куçма ăна астумасť.

Пĕр ирхине тăнлавне çемçен хĕрарăм алли çитсе лексен тин Куçман тăнĕ çитсе кĕнĕ. Вăл куçне уçса пăхнă: унăн умĕнче акăш пек шап-шурă тумтирлĕ, кăкăрĕ çине хĕрлĕ хĕрес çыпăçтарнă вăтам пӳлĕ, илемлĕ хĕрарăм тăнă. Хĕрарăмпа йунашар тепĕр арçын пулнă. Вĕсене курсан, Куçма: арçыннине—шахтă управљайушчи Мурзин, хĕрарăмне—хăй шахтăран тухса салтака кайнă чух йулашки пилĕк тенкĕ ылттăнне çаратса йулнă трактир хуçи арăмĕ тесе шутланă. Çавăнпа вăл вĕсене, иккĕшне икĕ йеннеле чышса йарса, кăшкăрнă:

— Сирĕлĕр ман умран! Есĕр ман йулашки чуна илме килтĕр-им?!. Йун ĕçекенсем!—тенĕ. Унтан вăл хĕрарăмăн аллинчен йарса тытнă та:

— Епĕ ăçта?—тесе ыйтнă.

— Есĕ суранлă. Халĕ фронт патĕнчи сурансем çыхакан пунктра,—тесе ăнлантарнă ăна хĕрарăм.

Куçма чухласа илнĕ, лăпланса выртнă. Вăл хĕрарăм—сурансем çыхакан пунктри çестра пулнă, арçынни—фелдшĕр.

Унтан Куçма çестрапа фелдшĕртан каçару ыйтнă.

— Тархасшăн каçарăр! Епĕ пĕлсе мар, ăн çухалнипе сирĕн çине хайаррăн кăшкăрнă,— тесе йăлăннă.

Фелдшĕр чĕнмен. Çестра ун çине кăвак куçĕсемпе пăхса илнĕ те, йăл кулса:

— Сирĕн хушаматăр, йатăр, аçу йачĕ мĕнле?—тесе ыйтнă.

— Карпейĕв, Куçма Петрович.

— Миçе çулта?

— Çирĕм виççĕре.

— Хăш чаçтрен?

— 39-мĕш Çибирски полкран.

Çестра кашни ыйту памассерен Куçма çине пăха-пăха илнĕ. Куçма пĕр вăхăта суранĕ ыратнине те манса выртнă, мĕншĕн тесен ун çине нимĕнле хĕрарăм та халиччен ăшă кăмăлпа пăхман. Çавăнпа çак хĕрарăм ăна хăйне çуратса ӳстернĕ амăшĕнчен те хаклăрах туйăннă. Вăл унăн йунлă суранне çуса тасатса, тирпейлесе çыхнă.

— Часах ĕнтĕ епĕр сире хулари лазарета илсе кайатпăр,—тенĕ çестра, ĕçне пĕтерсен.

Çак сăмаха илтсен, Куçма савăннипе хăй те сисмен, кăшкăрса йанă:

— Чӑнах калатӑн-и, çестра!

— Чӑн пулмасӑр, мӗншӗн суйас ман сире...

„Тинех вилӗм умӗнчен хӑтӑлатӑп“,—тесе савӑннӑ Куçма.

Тепӗр ернерен Куçма пысӑк хулари лазаретра выртнӑ. Фронтра унӑн суранне тирпейлесе çыхнӑ çестра та çак лазаретах ӗçлеме куçнӑ.

— Мӗн вӑрçӑ пуçланнӑранпах фронтра ӗçлесе йӑлӑхтарчӗ. Хулара пурӑнса пӑхас,— тенӗ çестра. Çӗнӗрен пынӑ çестрана лазаретри суранлӑ салтаксем часах пит те кӑмӑлласа йуратнӑ.

Лазаретра суранлӑ салтаксем çав тери нумайӑн пулнӑ. Вӗсем, суранӗсем ыратнипе, шӑлӗсене çыртса йӑнӑшнӑ:

— Ой!

— Ох!

— Вилетӗп...

Хӑшӗсем ахлатса выртнӑ çӗртенех куçӗсене хупса вилсе кайнӑ. Вӗсене ӳчӗсем сивӗнсе çитичченех, санитарсем ноçилкӑ çине вырттарса, тулала йӑтса тухса кайнӑ. Çавӑнпа пирвайхи кунсенче лазарет пурнӑçӗ Куçмашӑн çав тери хӑрушӑ пек туйӑннӑ. Акӑ, Куçма койкипе йунашар пӗр ватӑрах, сухаллӑ салтак выртнӑ. Вӑл йӑнӑшман, хускалман та, хупӑнса çитмен куçхупаххисем те сиккелемен, кӑвакарнӑ тутисем пӗр çӗре чӑмӑр-

таннӑ, сӑмси аванса аннӑ. Куҫма ун ҫине пӑхнӑ та ҫав тери хӑранӑ. Унтан вӑл: куҫӑм ан куртӑр, хӑлхам ан илттӗр тесе, одейалӗпе пуҫӗ ҫинченех пӗркенсе выртнӑ. Шухӑша путнӑ.

...Акӑ, вӑл хаљ чӗрӗ, суранӗ ҫеҫ йӗппе чикнӗ пек чикӗшсе ыратать: чӗри сунтал ҫине мӑлатукпа ҫапнӑ пек тӳплетсе тапать. Куҫӗсем кураҫҫӗ. Хӑлхисем илтеҫҫӗ. Ак, сасартӑк унӑн чӗри тапма чарӑнӗ. Ҫӗмӗрт пек хура куҫӗсене хулӑм куҫхупанкийӗсем хупласа хурӗҫ. Тутисем пӗр ҫӗре ҫыпӑҫса ларӗҫ. Кӗл пек кӑвакарнӑ сӑнӗ ҫинче хура пуҫлӑ симӗс шӑнасем йулхавлӑн пусса утса ҫӳрӗҫ, вӗсене хӑратса йама аллисем те хускалмӗҫ. Хӑлхисем лапах хупланса ларӗҫ,—илтмӗҫ. Унтан... унтан ҫав кунӗн-ҫӗрӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен, ҫынна шеллеме маннӑ санитарсем унӑн пӑр пек сивӗннӗ ӳтне ноҫилкӑ ҫине тӑрӑх чӑсса выртарӗҫ те, йӑтса тухса, таҫта илсе кайса пӑрахӗҫ. Никам та ӑна шеллемӗ. Уншӑн куҫҫуљ тӑкакан пулмӗ. Сивӗ хӗл кунӗсем иртсе кайӗҫ. Илемлӗ ҫуркунне ҫитӗ. Вӑл утса ҫӳренӗ вырӑнсенче тӗрлӗ-тӗрлӗ курӑксем, чечексем шӑтса тухӗҫ. Вӑрманта куккуксем авӑтӗҫ. Саркайӑксем йурлӗҫ. Вӑл вӗсене кураймӗ, сассисене илтеймӗ. Нӳрӗ тӑпра айӗнче пӗр пӗччеnҫи ҫӗрсе выртӗ. Ҫутҫанталӑкра ун ҫинчен никам та асӑнса калаҫмӗ. Пӗр урасӑр ашшӗ анчах,

вилмен пулсан:—„Пӗр ывăлăм пурччӗ те салтакран таврăнмарӗ“,—тесе, аллине лăшт сулӗ. Санитарсем унăн кучан пек хытнă ӳтне йăтса тухса кайсан, койки пушă йулӗ. Ун ҫине тепӗр салтака выртларӗҫ. Выртсан-выртсан, унăн та ӳчӗ сивӗнӗ, куҫӗсем хупăнӗҫ, хăлхисем илтми пулӗҫ. Вара ăна та ҫав санитарсемех пӗр шеллемесӗр йăтса тухса пăрахӗҫ. Койкă ҫине урăх салтак выртӗ. Вăл та вилӗ. Унтан урăххи... Кашни кун пӗр салтак чунӗ пӗтӗ. Ҫулталăкра виҫҫӗр утмăл пилӗк кун. Лазаретра пин койкă. Ҫулталăкра миҫе пин салтак пӗтет? Пурте ҫамрăк, вăйпитти, ҫирӗмрен пуҫласа хӗрӗхе ҫитнисем. Тӗнчере миҫе лазарет? Кашни кун миҫе пин ҫын вилет? Ку вăрҫă тата икӗ-виҫӗ ҫула чăсăлсан, арҫынсем пурте вилсе пӗтӗҫ. Кам ҫӗркăмрăкӗ кăларӗ? Кам тырă акӗ? Мӗн чухлӗ ача-пăча тăлăха тăрса йулӗ?.. Апла-тăк мӗншӗн кирлӗ-ха ку вăрҫă?.. Ҫак шухăшсем ун пуҫне ирӗксӗрех пырса кӗнӗ. Вăл ӗлӗк нихҫан та капла шухăшламан. Куҫма пӗр айăкки ҫинчен тепӗр айăкки ҫине ҫаврăнса выртнă. Одейалӗ айӗнчен пуҫне кăларса пăхнă. Ҫав вăхăтра Куҫмапа йунашар койкă ҫинче выртакан сухаллă ҫынна санитарсем ноҫилкă ҫине выртларса йăтса тухса кайнă.

Каҫ пулнă. Лампăсем ҫутăлнă. Ҫестра ун койки патне майӗпен утса пынă:

— Çывăратăр-им? — тесе, хуллен чĕннĕ çестра.

— Çук, çывăрмастăп,—тенĕ Куçма.

— Çывăрмастăн пулсан, мĕншĕн одейалупа пуçу çинченех витĕнсе выртатăн?

— Хăратăп, çестра.

— Мĕнрен хăратăн?

— Пит нумай вилеççĕ.

— Нумай вилеççĕ? Фронтра кунтинчен те нумай вилеççĕ, çапах унта хăрамастăнччĕ пулĕ?

— Вилеççĕ те, унта кунти пек мар.

— Мĕнле? Мĕн, урăхла вилĕмпе вилеççĕ-им?

— Унта, трук, кĕтмен çĕртен...

— Мĕнле кĕтмен çĕртен?

— Ну, акă мана суранларĕç. Тĕлĕкри пек çеç астăватăп. Ӳте патакпа çапнă пек ыраттарса кайрĕ. Кăшкăрса йатăм. Çĕре лаплатса ӳкрĕм. Малала мĕн пулнă, астумастăп.

— Ку пит аван. Куратăн, есĕ чĕрĕ йулнă. Ак, вăрçă чарăнĕ. Унтан киле таврăнăн. Авланăн. Хаљхи хăрушă вăхăт майĕпен манăçа тăрса йулĕ. Анчах фронтра, лазаретра вилнĕ йулташсем нихçан та... Сивĕ хĕл кунĕсем иртсе кайĕç. Ăшă та илемлĕ çуркунне çитĕ. Вĕсем çав ырлăха курайĕç. Миçе пин çын пĕтет? Мĕн чухлĕ ача-пача тăлăха тăрса йулаť? Камшăн? Мĕншĕн йун йухаť?—тесе каланă çестра.

Куçма çестран сăмахĕсене çăтса йарас пек итлесе выртнă:

— Çестра, есĕр: вăрçă чарăнĕ, тетĕр. Хăçан чăрăнĕ-ши вăл?—тесе пӳлсе ыйтнă Куçма.

— Вăрах йулмарĕ. Час чарăнĕ,—тенĕ çестра хуллен.

Куçма савăннипе, суранĕ ыратат̆ пулсан та, сиксе тăрса ларнă.

— Асту, суранна ыраттаран. Лăпланса вырт-ха. Хаљ çитĕ. Кайран калаçăпăр тата,— тенĕ çестра. Унтан урăх пӳлĕмеле тухса кайнă.

— Ах, йепле ăшă кăмăллă, çемçе чĕлхелĕ хĕрарăм пулат̆ мĕн тĕнчере. Салтаксемпе çав тери калаçма йуратат̆. Пĕтĕм лазаретра та пĕр çав анчах салтаксене йуратаканни. Ыттисем салтаксемпе калаçса ларма мар, çĕленсем пек чашласа çеç иртсе кайаççĕ. Пăхсах курăнат̆,—пурте буржуй таврашĕсем. У-у-у!.. йытă амисем. Ирĕк пулсан, епĕ вĕсене хам аллăмпа лучăркаса чунĕсене кăларăттăм. Анчах хăçан çитĕ вăл вăхăт!—тесе хăй тĕллĕн калаçса выртнă кĕтесри койкă çинчи татăк уралă салтак.

Куçма татăк ура мĕн калаçнине ăнланса илеймен. Çавăнпа ун çине хулпуççи урлă çавăрăнса пăхнă та:

— Мĕн çукшăн калаçса чĕлхӳне çӳхетсе выртатăн,—тесе вăрçса тăкнă.

— Çукшăн мар, чăннипе калатăп епĕ,— тавăрнă татăк ура.

— Вăрçă чарăнасси çинчен калаçмарĕ-и вара вăл санпа?—тесе ыйтнă Куçмаран унпа йунашар выртакан хĕрлĕ çӳçлĕ салтак.

— Вăрах йулмарĕ. Час чарăнĕ, тет,—тенĕ Куçма кĕскен.

— Часрах чарăнсан пит аван пулĕччĕ те, тахçан чарăнаĭ?—тенĕ хĕрлĕ çӳç, ассăн сывласа.

— Вăрçă каплипех чарăнас çук. Малтан мĕнле те пулсан улшăну пулмала,—тенĕ татăк ура.

Кашни салтак пуçĕнчех вăрçă чарăнасса кĕтекен шухăш пулнă. Каç та, кăнтăрла та çавăн çинчен калаçнă. Хăшĕ-пĕрисем тĕлĕкĕсенче те:

— Вăрçă хăçан чарăнаĭ-ши?—тесе кăшкăра-кăшкăра йанă.

Куçма патне хай çестра тепĕр кунне каллех пынă. Вăл унпа чылай вăхăт калаçса ларнă. Йулашкинчен:

— Есĕ мĕнле нацирен? Вырăс мар пулас,—тесе ыйтнă.

— Епĕ чăваш,—тесе пĕлтернĕ Куçма.

— Пĕлетĕп. Ĕлĕк Иван Грознăй патша, Хусан патшалăхне хăй аллине çавăрса илнĕ хыççăн, унти халăхсене вăйпах тĕне кĕртме тăнă. Хăшĕсем, тĕне кĕресшĕн мар пулса,

вăрмансене тарса пытанса пурăннă... Çтенкă Разинпа, Пугачовпа пĕрле вырăс патшисене хирĕç тăрса çапăçнă,— тенĕ çестра.

Унтан Куçма хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа панă.

— Патшан саккунĕ çапла. Вăл çынна ырра мар, усала çеç вĕрентет,— тенĕ çестра йулашкинчен.

Çав вăхăтрах лазарета тухтăр пырса кĕнĕ. Вара вĕсем палатăран палатăна чирлисене пăхса çӳреме кайнă.

Çестра лайăх пăхнипе Куçман йăвăр суранĕ уйăх хушшинчех тӳрленсе çите пуçланă. Çестра кашни кун ун патне пырса калаçса ларнă. Ку пушшех унăн суранне йусанма пулăшнă. Куçма пирвайхи кунтанах çестрана çав тери йуратнă. Ăна çестра хăй те сиснĕ. Çестра пĕр Куçмашăн çеç мар ырă пулнă. Ăна ытти суранлă салтаксем те йуратнă. Анчах вăл пуринчен ытла Куçма çине асăрхаса пăхнă. Куçма ăна лайăх курнă. Анчах хăйĕн шухăшне пĕлтерме нимле сăмах та тупса калайман. Çестрапа Куçма лайăх килĕштернĕрен, палатăра хăшĕ-пĕрисем вĕсем çине кӳлешсе чалăшшăн пăхнă. Пĕр-пĕринпе, çын илтмеле мар, пăшăл-пăшăл калаçнă.

Куçма хăй çестрана йуратни çинчен малала пытарса тăма пултарайман. Пĕрре вăл, хăй те сисмен, çестрана аллинчен йарса

тытнă та ăна хăйĕн вĕри кăкăрĕ çумне сыпăçтарнă.

— Ах, йар-ха алла. Суранна ыраттарăн,— тенĕ çестра пăшăлтатса. Унтан хăй те сав-нине пĕлтересшĕн, малала ӳпĕнсе, чăмăр кăкăрĕсемпе Куçма пичĕ çине тайаннă.

Куçма çестра аллине йаман, ăна пушшех хăй çумнеле сыпăçтарнă.

— Çестра, çестра... йу-йурататăп епĕ сана... Ан вăрç мана, айвана...

— Йурĕ. Иуратасси çинчен халь мар, кай-ран. Епĕ халь сана пĕлтерсе хăварма çеç килтĕм. Пайан хулара демонстраци пулаť. Епĕ çавăнта кайма тухнă,—тенĕ çестра Куç-мана, хăлхинчен пăшăлтатса.

Куçма пĕр вăхăта ним ăнланмасăр выртнă. Унтан, çестра аллине вĕçерсе, пуçне çĕкле-се пăхнă та:

— Мĕнле демонстраци?!—тесе ыйтнă.

— Вăрçăпа патшана хирĕç.

— Вăрçа хирĕç? Камсем пулаççĕ унта?— тĕлĕнсе кайнă Куçма.

— Унта хулари рабочисемпе салтаксем пулаççĕ...

— Апла епĕ те санпа пĕрле пырам!—сиксе тăрса ларнă Куçма.

— Çук, çук! Сана урама тухса çӳреме йурамасť-ха. Сурану тӳрленсе çитмен. Пит курассу килсен, чӳрече витĕр пăх. Анчах

сыхлан, суранна ан ыраттар. Халлĕхе сывă пул!—Куçма çине хăвăрт ӳпĕннĕ те, одейалне тӳрлетсе витен пек тунă май, ăна сылтăм питçăмартийĕнчен çăмăллăн чуптуса илнĕ. Унтан тепĕр хут çаврăнса пăхса:

— Сывă пул, йулташăм!—тесе алăкран тухса кайнă.

Куçма савăннипе ним тума пĕлмесĕр пăхса йулнă: „Мĕне пĕлтерет-ха ку? Тен вăл пĕтĕмпех пăрахса кайрĕ-и?"—тесе шухăшланă хăй ăшĕнче. Чылай вăхăт тĕлĕнсе ларсан:

— Мĕншĕн-ха вăл сывпуллашсах тухса кайрĕ?—тесе ыйтнă хĕрлĕ çӳçрен. Лешĕ хирĕç чĕнмен.

III

Çур хĕл иртсе, çанталăк çуркунне йенне сулăннă. Лазарет чӳречисен умĕнчи топăљсем çинче çерçисем чĕвĕлтетнĕ, вĕсем тин тухакан хĕвел ăшшинче ăшăнса ларнă. Сасартăк çерçисем тĕрлĕ йенне пăрр! вĕçсе саланнă. Çав вăхăтрах урамра халăх кĕрлени илтĕннĕ. Лазаретри салтаксем сике-сике тăрса чӳречесенчен пăхнă:

— Мĕн унта?

— Мĕне пĕлтерет ку?!

— Маршĕвăй полксене фронта ăсатаççĕ-им?—пĕр-пĕринчен ыйтнă салтаксем. Анчах,

ыйтăва хирĕç нихăшĕ те нимĕн каласа пама пултарайман.

Куçма та, койки çинчен тăрса, чӳречерен пырса пăхнă. Урамра, чышса тултарнă пек, халăх вĕркенĕ. Халăх пуçĕ çинче вут çулăмĕ пек хĕрлĕ йалавсем варкăшса çуннă.

— Долой йунлă патша!

— Вăрçă кирлĕ мар!

— Урра! Револуци сывă пултăр!—тесе кăшкăрнисем сывлăша чĕтретнĕ.

— Йулташсем! Мĕн пăхса тăратпăр? Револуци пуçланнă вĕт! Епĕр те хускалар!—койки çинчен татăк уралă салтак сиксе аннă. Вăл, костылĕсене хулхушшине хĕстерсе:

— Тĕп пултăр патша! Револуци сывă пултăр! Урра!—тесе кăшкăрса йанă.

— Урра!!!—илтĕннĕ ăна хирĕç.

— Йулташсем, манăн арăмран посылкăпа килнĕ хĕрлĕ хутаç пур. Епĕр те çавăнтан йалав тăвар,—тесе чупкалана хĕрлĕ çӳçлĕ салтак.

Татăк ура, хĕрлĕ йалава тытса, койки çине улăхса тăнă та:

— Йулташсем!.. Ан шавлăр-ха: епĕ сире револуци çинчен каласа парам,—тесе сăмах пуçланă.

Пурте шăп пулнă. Татăк ура çине пăхнă. Пурин те револуци çинчен пĕлес килнĕ.

— Йулташсем!.. Йулташсем!.. Есĕр те,

епӗр те йулташсем! Ак мана куратӑр-и?..— малала калайман, чыхӑнса кайнӑ. Хулайӗнчи костылӗпе урай хӑмине шак-шак шакканӑ. Анчах калама сӑмах тупайман.

— Ну, кала хӑвӑртрах! Мӗн тытӑнса тӑратӑн тата!—васкатнӑ ыттисем.

— Ак куратӑр-и мана!—сӑмах тупайман йенне хӑйне хӑй кӑкӑрӗнчен ҫапса кӑтартнӑ татӑк ура.

— Куратпӑр. Анчах есӗ, вӗт, революци мар. Пире революци ҫинчен кала!—тенӗ сасӑсем.

— Чӑн, епӗ революци мар. Епӗ рйадовой салтак ҫеҫ. Анчах епӗ вӗт салтака икӗ урапа килтӗм. Халӗ ак, пӑхӑр, хӑрах ура вӗҫне тӑратса хӑварчӗҫ. Кам айӑплӑ куншӑн? Патша! Вӑрҫӑ! Ҫавсем пулмасан, ман урасем иккӗш те тӗрӗс-тӗкӗл пулнӑ пулӗччӗҫ. Ҫавӑнпа пирӗн патшапа вӑрҫа хирӗҫ революци тумалах. Унсӑрӑн вӑрҫӑ чарӑнас ҫук...—Тата тем каласшӑн пулнӑ татӑк ура, анчах ӑна калама паман,—пӳлсе, кӑшкӑрса йанӑ салтаксем:

— Сывӑ пултӑр революци!..

— Долой вӑрҫӑ!

— Долой патша!

Куҫма, тӗлӗннипе, пӗрре урамри, тепре лазаретри демонстраци тӑвакансем ҫине пӑхса тӑнӑ. Халӑх урамра та, лазаретра та кӗрленӗ.

— Чăн, вăрçă кирлĕ мар пире, вăл пĕтĕмпех йăлăхтарса çитерчĕ. Анчах патшасăр мĕнле пурăнмала? Кĕтÿ кĕтÿçĕсĕр пулма пултарни пур-и?—çăварне карса, йанахне чĕтретсе кăшкăрнă пĕр мăк сухаллă салтак.

— Турă хушнă тăрăх хускалнă вăрçа хирĕç мĕнле пымала? Пăрахăр, тăвансем. Турă илтсен, тем кăтартĕ хамăра. Ашшĕн, ывăлĕн, çветтуй сывлăшĕн йачĕпе, амин!—тесе сăхсăхнă мăйĕ çинчи хĕресне йаланах уçă çухавинче курăнмала çакса çÿрекен, манах йевĕрлĕ, вăрăм та типшĕм салтак

— Вăрçă турă хушнă тăрăх хускалмасť. Ăна патшасемпе унăн йыттисем кăлараççĕ, мĕншĕн тесен вăрçă вăхăтĕнче пуйансем тата ытларах пуйаççĕ. Епĕр, рабочисемпе хресченсем, вĕсемшĕн йун тăкатпăр, вилетпĕр,—тесе, пĕтĕм чунĕнчен тарăхса кăшкăрнă татăк ура.

Çав вăхăтра лазарета кашкăртан хăранă пек куçĕсем алчăранă тухтăр пырса кĕнĕ. Вăл курать: лазаретра та урамри пекех демонстраци кĕрлет. Ăнтан кайнине хăй те сисмест:

— Саланăр! Мĕн пуçтарăнса тăратăр!—сурчăкне сирпĕтсе кăшкăрса йанă тухтăр.

— Е-е-е, есĕ патшана вырăнĕнче хăварасшăн-и? Вăрçа малала чăсасшăн-и? Вилĕм помошникĕ! Тухса кай!—темиçе сасă харăс

кăшкăрнă. Тухтăра çавăрса тытма тăнă. Лешĕ аран тухса тарма ĕлкĕрнĕ.

— Тытăр! Тытăр!—тесе кăшкăрнă сасăсем.

Тухтăр хыçалала çавăрăнса пăхмасăр тарнă.

Хăшпĕр салтаксем аллисемпе йунанă, хăшĕсем ахăлтатса кулнă.

Ир пуçласа каçченех демонстраци пынă. Хĕвел ансан тин урамри халăх саланнă. Лазаретри салтаксем те, лăпланса, хăйсен койкисем çине выртнă. Вăл кун суранлă салтаксем патне тухтăрсем те, çестрасем те пыман.

Куçма хăй йуратнă çестра тавăрăнасса тахçанччен кĕтнĕ, çук, кĕтсе илеймен: „Асăнмалăх çеç туса хăварчĕ. Урăх ĕнтĕ епĕ ăна курайас çук", тесе шухăшланă. Урампа иртсе кайнине курмăп-ши тесе, чӳрече витĕр пыра-пыра пăхнă. Çук, урамра та курăнман.

Çанталăка каçхи тĕтре хупласа илнĕ. Лазаретри салтаксем çывăрма выртнă. Çĕрле каллех йаланхи пекех йăнăшнă сасăсем пуçланса кайнă.

Патшана престол çинчен сирпĕтни ерне иртнĕ, уйăх та çитнĕ. Анчах вăрçă чарăнман, чарăнма мар, кашни кун полки-полкипе салтаксене фронта ăсатнă. Фронтран çаплах суранланнă салтаксене турттарса килсе лазаретсене тултарнă. Лазаретра та пурнăç улшăнман. Хай патша майлă тухтăр халĕ пуш-

шех усалланса ҫитнӗ. Суранлӑ салтаксене ҫӑвар уҫма та паман:

— Ак, куртӑр-и, сирӗн револҗуцийӗр ӑҫта!— тесе, пӳрнисемпе кукиш туса кӑтартнӑ.

Нумайах та вӑхӑт иртмен, пӗрре ҫапла офицерсем пырса, татӑк уралӑ салтака „болҗшевик“ тесе тытса кайнӑ.

Лазаретра тата тепӗр виҫӗ уйӑх выртсан, Куҫма йӑлтах сывалса ҫитнӗ. Вара ӑна лазаретран кӑларса йанӑ. Тухнӑ чухне тухтӑр ҫапла каланӑ:

— Есӗ ху ирӗкӳпе ҫырӑнса вӑрҫа кайнӑ ҫын. Ҫавӑнпа сана пӗр уйӑхлӑха отпуска йаратӑп. Киле тавӑрӑнса кан та, унтан каллех хӑвӑн чаҫӑна тавӑрӑнма васка,—тенӗ.

Куҫма отпуск хутне илсе шинел кӗсйине чикнӗ те хулана тухнӑ. Пӗр вӑхӑта чарӑнса, шухӑшша кайса тӑнӑ: „Ӑҫта кайас? Ҫӗпӗре, шахтӑна тавӑрӑнсан, унта канас вырӑнне каллех парӑмшӑн ӗҫлес пулать. Ҫук, кайас-ха Хӗрлӗ гварди штабне“, тесе шухӑшланӑ та хула урамӗ тӑрӑх утнӑ. Ӑна хирӗҫ салтаксем, ахаљ рабочисем ирте-ирте кайнӑ. Сасартӑк:

— Карпейӗв!—тенӗ сасӑ илтӗннӗ хыҫалтан. Куҫма ҫавӑрӑнса пӑхнӑ. Ун патне кавалерис шинелӗ тӑхӑннӑ салтак утса пынӑ. Вӗсем пӗр-пӗрин ҫине тинкерсе пӑхнӑ.

— Кам пултӑн-ха есӗ? Епӗ паллаймарӑм сана?—тесе ыйтнӑ Куҫма.

— Паллаймастăн пуљ çав. Виçĕ çул вĕт пĕр-пĕрне курман. Сахал вăхăт мар. Епĕ те сана сăнăнтан мар, уттунтан çеç палларăм. Астăватăн-и, шахтăра, хамăр ирĕкпе салтака çырăнсан, епĕ санăн парăмушăн алă пусрăм,— тесе астутарнă кавалерис.

— Е-ей, Чуркин йулташ! Есĕ вĕт ку?! Аван-и!—савăнăçлăн кăшкăрса, аллисенчен йарса тытнă Куçма.

— Ну, каласа пар. Ăçта, мĕнле пурăнатăн?—тесе ыйтнă Чуркин.

— Мана фронтра суранлатрĕç. Халĕ лазаретран йусанса тухрăм. Пĕр уйăха отпуск пачĕç. Шухăшларăм-шухăшларăм та, шахтăна таврăнниччен, Хĕрлĕ гвардийе çырăнас терĕм. Халĕ акă, Хĕрлĕ гварди штабне кайма тухрăм,—тесе пĕлтернĕ.

— Апла пулсан, айта хампа,—тенĕ Чуркин.

— Ăçта?

— Хĕрлĕ гварди штабне.

Икĕ шахтŏр, йунашар калаçса пырса, Хĕрлĕ гварди штабĕ йеннеле утнă.

Чылай кайсан, вĕсем пĕр тăвăр тăкăрлăка кĕрсе кайнă. Унтан пысăк мар чул çурта пырса кĕнĕ.

— Ак çакăнта ĕнтĕ бољшевиксен револђуцилĕ штабĕ,—тесе пĕлтернĕ Чуркин.

Вăл çуртăн килкартинче салтаксем, матроссем, хĕрарăмсем, рабочисем туллийех

пулнă. Вĕсен пурин те аллисенче хĕçпăшал пулнă.

Чуркин Куçмана пĕр хĕрарăм патне илсе пынă та:

— Потапăвă йулташ, манăн çак Карпейĕв йулташа Хĕрлĕ гвардине çырăр-ха,—тенĕ.

Хĕрарăм Куçма çине тинкерсе пăхнă та:

— А-а... Карпейĕв йулташ! Есĕр те пире пулăшма килтĕр-и?—тесе ура çине сиксе тăнă.

Куçма кĕтмен çĕртенех хăй йуратнă хĕрарăма хирĕç пулнипе ним тума аптăраса тăнă.

— Потапăвă йулташ, есĕр Карпейĕв йулташа паллатăр-им вара?—тесе ыйтнă Чуркин.

— Паллатăп. Епĕ ăна, суранлăскере, фронтран илсе тухнă. Лазаретра февраљ револђуцийĕччен пăхнă,—тесе пĕлтернĕ хĕрарăм.

Куçма тинех паллانă. Вăл хĕрарăм—лазаретри çестра пулнăскер иккен.

— Карпейĕв манăн йулташ. Рабочи—шахтор. Епĕр унпа мĕн пĕчĕкрен пĕрле выљаса ӳснĕ,—тесе пĕлтернĕ Чуркин.

— Ну, йулташсем, пирĕн рет ӳсет. Тепĕр кĕрешӳ çынни Карпейĕв йулташ хутшăнчĕ,—тенĕ хĕрарăм тулли кăмăлĕнчен.

Çапла вара Куçма Карпейĕв револђуци вучахĕ ăшне кĕрсе кайнă. Малтан вăл хĕрлĕгвардейĕц пулса вăхăтлăх правитĕлствăна хирĕç кĕрешнĕ. Унтан коммуниссен парти

членне ҫыраннӑ. Унтан вара ҫирӗм ҫул ҫитнӗ ӗнтӗ. Ача чухне вӗренейменнине революци хыҫҫӑн тин пысӑк шкултан тухичченех вӗреннӗ. Вуннӑмӗш ҫул Куҫма Петрович ҫак шахтӑра директӑр пулса ӗҫлет. Пайан вӑл ҫав вунӑ ҫулхи ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен рабочисен умӗнче каласа пама хатӗрленет—доклад ҫырать. Ҫтена ҫумӗнчи сехет ыванма пӗлмесӗр чик-чик-чик! шаккать. Стрелкисем систермесӗр малала шӑваҫҫӗ...

---

Чувашская
№ 11797
Центр. Библиотека

K

Хакĕ 2 т. 50 п.
Цена 2 р. 50 к.

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# СКВОЗЬ ПЛАМЯ

*РАССКАЗЫ*

Чувашгосиздат • 1938